Михаил ЖЕЛТОВ

# ПУРĂНĂÇ ФИЛОСОФИЙĔ

ШУПАШКАР 2008

ББК
Ж

Рецензенты

**Желтов, Михаил Павлович**.

Философия жизни: Учебное пособие. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. – 102 с.

В книге представлено сложившееся мировоззрение чувашского народа на жизнь и смерть человека. Предлагаемое учебное пособие будет способствовать осмыслению своего места в мире, пройденного пути и будущего чувашского народа.

# УМСĂМАХ

Тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле, анчах та пурăнăçран хакли нимĕн те çуккă, теççĕ халăхра. Çавăнпа та çыннăн, чăн малтан, ытти япаласем çинчен шутласа кайиччен, пурăнăç çинчен пуç çавăрмалла пек туйăнать. Çак шухăшăн тĕрĕслĕхне шăпа хăй кăтартса парать. Илер-ха пурăнăç кăтартăвĕсене. Унăн хакĕ ытла та чакса кайрĕ. Çут çанталăкри ӳсен-тăрансемпе чĕрĕ чунсем пирки кăна мар сăмах пырать, вĕсене пĕр шелсĕр пĕтереççĕ. Çын пурăнăçĕ те ним вырăнне те тăмасть. Халăхсем епле «сывланисем» пирки калаçма та кирлĕ мар. Вĕсене «вилнĕ» пек туса кăтартаççĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пурăнăç хакĕ чакрĕ. Çакăн пек тапхăрта, паллах, кирек мĕнле япаларан та ытларах çынна чи кирли çинчен калаçмалла, пурăнăç тупсăмне тупса палăртмалла, ăна упрамалла, маларах ун пирки мĕн каланине аса илмелле.

А. Бергсон хăйĕн философийĕнче тĕп вырăна «пурăнăç туртăмне» («жизненый порыв») хунă. Тĕнчене-мĕн интуици шайĕнче кăна ăнланса илме пулать. Пурăнăç туртăмĕ эволюцие хăвăртлатать. Ку вăл çын пултарулăхĕнче пуринчен ытла палăрать. «Интуици, - тет вăл, - сӳннĕпе пĕрех çурта пек вăхăтран вăхăта самантлăха та пулин ялтăрса илет. Вăл пурăнăç интересĕ пур чухне кăна чăлтăртатать»[1].

Шопенгауэр А. тĕнчере мĕн пуррине «пурăнăç ирĕкĕпе» («воля к жизни») ăнлантарса парать. Выльăх-чĕрлĕхĕн те çавă пурăнăç ирĕкĕ пур. Ăс-тăн вара ирĕк хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Вăл каланă тăрăх, тĕнче вăл çын ирĕкĕ тата каласа кăтартни (манифестаци). Пурăнăç ирĕкĕнчен тухас тесессĕн, «хăвăн интерессене, кăмăла тата тĕллевсене манас, хăвна пăрахса тĕнчене сăнакан таса субъект пулса тăрас пулать»[2], тет философ. Анчах ахаль пурăнăçра ун пек тума май килмест. Çын пĕрмаях хăйĕн

---

[1] Бергсон А. Творческая эволюция. - М.: СПб, 1914. - С. 239.
[2] Шопенгауэр А. Мир как воля и представление // Шопенгауэр А. Собр. Соч.: В 6 т. М., 1999. Т. 1. - С.165.

çинчен шухăшлать, унăн хăйĕн шухăш-туйăмĕ. Вĕсем ăна нихăçан та тивĕçтермеççĕ.

Ницше Ф. Тĕнче никĕсне «влаç ирĕкне» («воля к власти») хурать. Ун шухăшĕпе тĕнчене çынран ытла çынсем (сверхчеловеки) кăна тытса тăма пултараççĕ. Вĕсен хăйсен уйрăм мораль - аристократ моралĕ. Çыннăн хăйне философ, художник тата таса çын пек курмалла. Çавăн чухне кăна прогресс пулать. Пурăнăç вăл влаçшăн çапăçни. Тĕрĕслĕх вара танмарлăхпа, вăйпа тата влаçпа çыхăннă. Çынран та ытла çынсем пурăнăçа малалла аталантараççĕ пулать. Тĕнче тĕнĕсем, тет вăл, асаплă та кӳреннĕ çынсем валли. Çынна ахальтен çын пулнăшăн кăна юратма юрамасть. «Ăнланатăр-и эсир, - тет вăл, - сирĕн хĕрхенĕвĕр вăл «çынри выльăха» кăна пырса тивет, çавна хурмаламалла, ватмалла, туптамалла, шăрантармалла, шăратмалла, тасатмалла, - мĕн пурăнăçа кирлĕ таран асапланать тата асапланмалла ун, çавна кăна тивет»[1]. Ун шучĕпе усаллăх çăлкуçĕ кĕвĕçӳлĕхре. Халĕ мĕн никам та хăй вĕрентнĕ пек пурăнасшăн мар.

Вильгельм Дильтей каланă тăрăх, тĕнчепе эпир туйăм урлă çыхăнатпăр. Туйăмлани никĕсре выртать. Вăл пирĕн ĕненӳрен, сисĕмрен, çине тăнинчен, ухмахланнинчен килет. Эпир, тет вăл, литературăра, искусствăра, истори ĕçĕнче шалти психика вăйĕсем схемăланса объектланнине куратпăр. «Психика пурăнăçĕн хăйĕн тытăмĕ пур, çавна эпир туятпăр. Çавна туйнă пирки, çын пурăнăçĕн асапне те, чунне çунтарнине те, шăпине те куратпăр - çавăнпа ăнланатпăр та çын пурăнăçне, унăн тарăнăшĕпе тĕпсĕрлĕхне»[2]. Освальд Шпенглер та çавнах калать. Ун шучĕпе, тĕнчене туйăмлани, сăнăни, танлаштарни тата фантази ăнланма пулăшаççĕ. Вăл историпе çут çанталăк наукисене уйăрать. «Историпе çут çанталăк пурăнăçпа вилĕм, пĕр вĕçĕмсĕр тăсăлакан вăхăтпа нихăçан улшăнми анлăх (пространство) пек хире-хирĕç тăраççĕ»[3], тет вăл. Чăнлăха калама сăмах кирлĕ, туйăм вара шăп-

---

[1] Ницше Ф. По ту сторону добра и зла // Ф. Ницше. Сочинения: В 2 т. М., 1990. Т. 2. - С. 346.
[2] Дильтей В. Описательная психология. М., 1924. - С. 74.
[3] Шпенглер О. Указ. соч. Т. 1. - С. 321.

лăхра та пулма пултарать. Кирек мĕнле культура та цивилизацие куçса вилет. Культура пурăнăçĕ пĕр пин çула тăсăлать. Культурăн чунĕ пур, вăл хăйне пĕр организм пек тыткалать, çын хутшăнăвне, çын вырăнне палăратать.

Пурнăç çинчен малалла шутласа каяс пулсан, паллах, Ж.П. Сартр çинчен те каласа хăвармалла. Вăл пурăнăç тупсăмне çын пурăннинче курать. Пурăнни вăл чĕрĕ пулни тет. К. Ясперс вара чăн пурăнăçа пурăнăçпа вилĕм хушшинче (пограничная ситуация) курать. Енчен те çын çав вăхăтра чĕрĕ юлчĕ-тĕк, вăл хăй камне ăнланса илет те, урăх çын пулса тăрать. М. Хайдеггер вилĕм çинчен кăна мар, пурăнăç çинчен те калать, мĕншĕн тесен саншăн урăх никам та пурăнаяс çук, пурăнăç кăна çынлă пурăнма май парать.

Пурăнăç çинчен нумай-нумай тĕпчевçĕ шухăшланă. Вĕсен идейисене эпир хамăр тĕпчев тăршшĕпе аса илсе пырăпăр. Халĕ вара вулакан умне кăларса тăратнă тĕпчевĕн тĕп шухăшне палăртсан та юрать пек. Эпир тĕнче никĕсенче кĕвĕллĕ тата пĕр пĕринпе çураçтаруллă тытăмсене куратпăр. Çавсем йĕркелеççĕ те пурăнăçа. Ку идея гипотеза шайĕнче пултăр.

Пурăнăç çинчен ăнлав шайĕнче пĕр пĕтĕмĕшле кăна мар шухăшламалла, кашни япалана уйрăммăн илсе çавăркаласа пăхмалла. Калăпăр, ӳсен-тăран, чĕрĕ чун, çын, халăх, тĕнче уйрăмлăхĕсене шута илмелле. Кашнин хăйĕн уйрăм пурăнăçĕ, кашнин хаклă. Çакăн чухне кăна пурăнăçăн унăн хăйĕн философийĕ пур тесе калама пултарăпăр. Кашни япалан хăйĕн пурăнăçĕ. Кашни çын пурăнăçа хăй майлă хаклать. Чăнлăхĕ вара ăçта тесен, вăл хăйĕнчех, пурăнăçрах теме пулать. Вăл пĕрре кăна. Апла, чăнлăхĕ те пĕрре çех, кашниншĕн. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен, кашнин пурăнăç тĕсĕ мĕнле хутлăхра ӳссе аталанса пынинчен килет. Йывăçăн хăйĕн хутлăхĕ, пулăн хăйĕн - çын вара темле хутлăхра та пурăнма пултарать. Пурăнăç пурин те пĕр тени тĕрĕсех мар. Ун тулашĕ кăна пĕр килет, шалашĕ вара расна. Кашни хăй пурăнăçне расна татса парать. Вилĕмĕ те расна. Пурăнăçпа вилĕме уйăрма çук. Пĕри тепĕрне çыпăçтарса пырать. Çапах та, вилĕм çинчен калаçма пуçличчен пурăнăç тупсăмĕ пир-

ки калаҫса талмалла пулать. Мӗн вăл пурăнăҫ, пурăнăҫ пултăр тесен мӗнле пурăнмалла, пурăнăҫ ан татăлтăр тесен тата мӗн тумалла. Кашнин хăйӗн пурăнăҫӗ терӗмӗр. Хăйӗн хутлăхӗ. Паллă, хутлăхне пӗтерсен, ним ҫинчен калаҫмали те ҫук. Пулă шывсăр, ҫын сывлăшсăр, ӳсен-тăран ҫӗрсӗр пурăнаяс ҫук. Кирек кама та хутлăх кирлӗ. Пурăнăҫ вăл, апла, хутлăхпа пӗр вӗҫӗмсӗр ҫыхăнса тăракан пӗр япала. Япала вырăнӗнче, каларăмăр, кирек мӗнле чӗрӗ чун та пулма пултарать. Вилӗ пек курăнакан япаласем пирки хальлӗхе калаҫмастпăр. Ку вăл хăй пӗр уйрăм тема. Ҫакна ҫеҫ каласа хăварар: вӗсен хăйсен уйрăм «пурăнăҫӗ». Пире вара, чăн малтан, чӗрӗ чун пурăнăҫӗ интереслентерет. Тата ҫакна та асра тытмалла: кашни тепринсӗр пурăнаймасть. Калăпăр, ҫынпа ҫут ҫанталăк уйăрăлми ҫыхăннă.

Ҫаксене пӗтӗмпех шута илсе, эпир пурăнăҫа уйрăммăн хаклăпăр. Тӗслӗхсенче наука, халăх, искусство, литература ăслăлăхӗсемпе усă курăпăр. Сăмахран, биологи уйрăмах нумай пӗлӳ пухнă. Физика вара пурăнăҫ ҫинчен хальлӗхе нимех те калаймасть. Унăн тупсăмӗ таҫта тӗнче вăрттăнлăхӗсенче палăрмасть те. Ҫапах та, тӗпчев тума ҫăмăл мар пулсан та, вулакан ырă кăмăлне шута илсе, хăюллăнах пурăнăҫ философийӗнчи чăвашла пӗрремӗш утăмне туса пăхас терӗмӗр. Кирек мӗнле пулсан та, йăнăшсем тупăнсан та вулакан пире каҫаратех пулӗ тетпӗр. Ҫакна шанса тăрса тӗпчев ҫулне тухатпăр та. Ырă ҫул сунар, апла, пӗрне пӗри, вулаканăмăр!

# 1. ПУРĂНĂÇПА ВИЛĚМ ХУШШИНЧЕ

## 1.1. ПУРĂНĂÇ ТУПСĂМĚ

Пурăнăç вăрттăн пулăм, çавăнпа та унăн тупсăмне тупса палăртма никамах та пултараймасть пек туйăнать. Пурăнакан, паллах, чĕрĕ чун-и вăл е çын, хăйĕн пурнăçне чухлатех. Анчах та, калăпăр, çынран: «Мĕн вăл пурăнăç.», - тесе ыйтсан, вăл нимех те калаймĕ. Мĕншĕн тесен, вăл нумай сийлĕ, тарăн та кăткăс пулăм. Кирек мĕнле япалан та хăйĕн пурăнăçĕ. Çапах та чăн никĕсне, вăл кашнинех пĕр пулĕ тетпĕр, палăртма пулать. Вăл пурăнни. Пурăнмасăр пурăнăç çук. Пурăнакан пурăнăçра çын тем те тăвать. Унăн çĕр тĕрлĕ ĕç, пин тĕрлĕ туйăм. Пурăнни вăл, апла, процесс, улшăну. Мĕн улшăнать-ши вара пирĕн пурăнăçра. Нумай чухне эпир хамăра хамăр упраса хăварас тесе, улшăнма тăхтаса тăратпăр, хăратпăр та, тен. Китай çынни вара, «упранас тесен улшăн», тет. Упранупа улшăну хушшинче темĕнле ăнланманлăх пур. Мĕн чухлĕ упранас тетĕн, çавăн чухлĕ пĕтетĕн. Мĕн чухлĕ улшăнас тетĕн, çавăн чухлĕ упранатăн. Хăш шухăша тĕпе хумаллине пĕлместпĕр. Тен, иккĕшĕ те тĕрĕс. Ун пек пулсассăн, пĕр вăхăтрах иккĕшĕпе те усă курмалла. Анчах ун пек тума май килмест. Апла, тен, ку расна шухăшсем расна объектсемпе çыхăннă. Улшăнас тени, тен, объект хурмипе (тулашĕпе), упранас тени - шалтипе çыхăннă. Шухăша кун пекрех юплентерсен ăнланмалларах килсе тухать. Чăн та, çын умĕнче эпир тем тĕрлĕ те пулма пултаратпăр. Çав вăхăтрах шалта пĕр улшăнусăр тăрса юлатпăр. Тулашри тĕнчере тĕрлĕ рольсем вылятпăр, шалти вара пĕр хытса ларсан тек улшăнасшăн мар. Пачах улшăнмасть тесе калама çук, çыннăн тĕнче курăмĕ, шалти, тепĕр чух сасартăках тепĕр май çаврăнса ӳкме те пултарать. Çапла пултăр тесен, паллах, темле пăтăрмахпа тĕл пулмалла, пурăнăçпа вилĕм хушшинче тăмалла. Ун пекки, паллă, сайра пулать.

Çапла шутласа кайсассăн, пĕр япалана ăнланса илме пулать. Çыннăн пĕр пайĕ (хурми) улшăнуллă, тепĕр пайĕ (шалти)

упранullă. Пĕри кашни самантра улшăнса пĕтсе, çухалса пырать, тепри пĕр çухатусăр, вилĕмсĕр пек тăрать. Апла, пурăнăç пĕр вăхăтрах упрану та, улшăну та. Çак шухăша мĕнпе тĕрĕслесе пăхма пулать-ши. Кашни çыннăн, паллă, хăйĕн куçĕ, хăйĕн тĕнче хутшăнăвĕ, хăйĕн курăнăвĕ. Тĕнче ылмашăнса выляса тăрать пулин те вăл хăй куçне ылмаштармасть. Çын, калăпăр, ыррине кăна курать. Темле суйса, улталаса, усал сунса ĕç туса парсан та вăл ыррипе çеç тавăрать. Ун пек çын пирки: ку ырă куçлă тетпĕр. Теприне, калăпăр, темле ырă ĕç туса та çырлахтараймастăн - пĕрех усал сунать. Çак тĕслĕхсем çыннăн шалти пайĕ çирĕп тăнине ăнлантарса параççĕ. «Çирĕп çын» ку, теет халăх кун пек çын пирки. Тулашри пай вара тĕрлĕрен пулма пултарать. Вăл хутлăх улшăнăвĕнчен килет. Тĕнчене хирĕç каяймастăн вĕт-ха. Ирĕксĕрех майлă кайма тивет. Хирĕç каякансем те пур пулĕ. Анчах та хирĕç тăрас-тăвас пулсан санăн турă пек хăватлă пулмалла. Çын, паллах, ун чухлĕ вăйлă мар. Хирĕç кайнин усси те сахалтарах. Ку вăл çынна та, тĕнчене çиллентерни кăна пулĕччĕ. Ăслă çын тĕнче саккунĕсене, юхăмне шута илсе пурăнать. Çав вăхăтрах, каларăмăр, хăйне пĕрре те улăштармасть. Çапла пулни вăл хăй пĕр вăрттăнлăх. Анчах ку вăрттăнлăх чылай уçăмлă. Вăл икĕ пайран тăрать, çавăнпа та ăнланмалларах пек туйăнать. Çапах та кунта тепĕр ыйту сиксе тухать. Мĕн-ма çут çанталăк çынна икĕ пайлă туса янă. Чĕрĕ чунсен те çапла-ши вăл. Çук, пулĕ. Мĕншĕн тесен, чĕрĕ чунсем çут çанталăкпа пĕр уйăрăлми пурăнаççĕ. Çын вара уйăрăлнă теме те юрать. Вăл хăйне çак тĕнчерен уйăрать, урăхларах тата çӳлерех вырăна лартать. Çавăнпа та пулĕ, чăннипе, нихăçан та вилмест. Унăн вилĕмсĕр пайĕ пур. Çав пай мĕнрен тытăнса тăрать тесе ыйтсан, тен, вăл çыннăн тĕнче курăмĕ, тенипе çырлахса ларма май килмест пуль. Тĕнчере, тĕрĕссипе, пĕртен пĕр вилĕмсĕр япала пур. Вăл, тĕлĕнмелле те, çын чĕлхи. «Çак тĕнчере мĕн юлать, мĕн калаçнă чĕлхе çав юлать», - тесе юрлать чăваш. Чĕлхе тытăмĕпе пĕлтерĕшĕ пирки ытла пит шала кĕрсе кайса калаçмăпăр. Ку вăл хăй пĕр уйрăм ыйту. Анчах та, вилĕмсĕрлĕх пайне тупса палăртмаллах пулать.

Çын калаçнине тăнласа пăхсассăн, вăл кирек мĕн калаçтăр, çапах мĕн те пулин акса хăвaратех сирĕн чунăрта. Вăхăт иртсен те хăлхара янăраççĕ унăн сăмахĕсем. Енчен те сире хаклă çын каланă пулсан, калăпăр, тăван - вăл вара ĕмĕрлĕхе упранса юлать. Пĕр-тепĕр çын калани пин-пин çуллăха. Ваттисен сăмахĕсем чăннипех те вилĕмсĕр. Çав сăмахсен, кирек мĕн калăр та, ген шайĕнчи тытăмĕ те пур. Чăваш ачи чăваш сăмахлă ăш-чикĕпе çуралать. Нейрофизиологсем каланă тăрăх, чĕлхе тытăмĕ (синтаксисĕ) миме хурминче (кукăр-макăрĕнче) палăрать. Апла, ача мĕншĕн чĕлхене питĕ хăвăрт алла илет тенинче тĕлĕнмелли çук. Вăл, тăван чĕлхе, унра çураличченех пур. Ăçта упранни пирки калама хĕн, çапах та чĕлхе ăруран ăрăва, ген шайĕнче тейĕпĕр, куçса пырать. Çавăнпа та пĕр чĕлхепе çуралнă ачана урăх чĕлхене тăван чĕлхепе калаçса кайиччен вĕрентни, çав генсене, ун ăш-чикне ватни пулать. Калăпăр, чăх пулса çуралнă чĕрĕ чуна сысна пек нăриклетме вĕрентни ку. Çавăнпа мар-и çын мĕн пĕчĕкренех сасартăк улшăнса усалланса каять. Ара, ăна ватаççĕ те-ха. Паллă, вăл хирĕç тăрать. Çавна, хирĕç тăнине, эпир пĕр ăнланмасăр: ку ача усал, тетпĕр. Тĕнче пăсăлни çак пулăмпа çыхăнман-ши. Çын пайĕнчи чи вилĕмсĕр япалана, чĕлхене, ватма юрамасть. Халĕ вара ватаççĕ кăна мар, пăрахаççĕ те. Пăрахăçа кăлараççĕ те вилĕмсĕрлĕхе пĕтереççĕ. Халь тин ĕнтĕ çыннăн вилĕмсĕр пайĕ çук. Апла, вăл çын та мар! Пĕр чĕлхепе çуралса тепĕр чĕлхене куçса кайни ăна тĕпренех, ген шайĕнчех пĕтерет. Унăн пурăнăç программи татăлать. Вăл халĕ çавă вилĕмсĕр япалана, чĕлхене, малалла ăруран ăрăва параймасть. Пĕр талнă япала тек сыпăнмасть.

Çыннăн вилĕмсĕр пайĕ, паллă, çын калаçнинче те упранса юлать. Çавă каланă теççĕ. Гениллĕ çын сăмахĕ (афоризм) пин-пин çул упранать. Ял çинче те темĕнччен çав-çав çапла калатчĕ тесе ас туса тăраççĕ. Ваттисен сăмахĕсем пирки каларăмăр. Апла, çын вилĕмсĕрлĕхĕ хăйĕнче шалта кăна мар, халăхра та. Мĕн калаçнă чĕлхе, çавăнта юлать. Чĕлхе, ку паллă ĕнтĕ, чун палăрăмĕ. Чун хăйне ытларах чухне чĕлхе урлă кăна кăтартма пултарать. Çавăнпа та кунта хăвăн чунна аталантарас, кăтартас тесен тăван

чӗлхепе калаҫни ҫинчен кӑна мар шухӑшламалла - кунта чун пирки те сӑмах хушмалла. Мӗн-ма тесен, ҫынра тата тепӗр вилӗмсӗр пай пур. Вӑл - чун.

Чун мӗн вӑл тесе ыйтсан, хальлӗхе никамах та нимех те калаймасть. Халӑх шайӗнче ку ӑнлану чӗрӗлӗхпе ҫыхӑннӑ. Чӗрӗ чун кӑна мӗн чунлӑ. Чун вилӗмсӗр. Калӑпӑр, чӑваш чунӗ вилсен те пӗтмест, ҫак тӗнчерех ҫӳрет, тӑванӗсене пурӑнма пулӑшать. Ҫавӑнпа та чӑваш тӗнӗ, пӗр пӗтӗмӗшле илсен, ваттисене пуҫ ҫапнипе ҫыхӑннӑ. Кун пек чухне вилнисем те вилмен пек, вӗсен чунӗсем сирӗн чунӑрпа пӗрле пек. Апла, халӑх йышӗ те чӗррисенчен кӑна мар, вилнисенчен тата пулас ачасенчен тытӑнса тӑрать. Ку, паллах, вӑй хушать. Эсӗ ӗнтӗ текех пӗччен мар, санпа юнашар мӑн асларусемпе асаннӳсем, пулас ачусем - пӗтӗм халӑх. Акӑ, епле тӗлӗнмелле чӑваш пурӑнӑҫӗ.

Каланисем чун мӗнне кӑшт ӑнкарма пулӑшаҫҫӗ пулсан та, унӑн тӗп тупсӑмне уҫса параймаҫҫӗ-ха. Чун тени вилӗмсӗр теҫҫӗ. Тӗнчере вилӗмсӗр япала ҫук. Апла, унӑн, вилӗмсӗрлӗхӗн, хӑйӗн чикки пулмалла. Ӑҫта, хӑҫан вӑл вилӗмсӗр пулма пултарать. Тата мӗн-ха вӑл, чун тени. Чун ҫинчен тӳрех нимех те калаймастӑн. Ӑна ӑнкарса илес тесессӗн, чӑн малтан, тен, чӗм ҫинчен калаҫмалла. Чӗмсӗрленчӗ, чӗм кӗчӗ теҫҫӗ. «Чӗм» сӑмах «сывлӑш», «пурӑнӑҫ» пӗлтерӗшлӗ. Тӗнчере пур чӗрӗ чун та сывлать, пурӑнать. Апла, «чӗм» ӑнлав «чун» тенинчен анлӑрах. Вӑл хӑй пурӑнӑҫа пӗлтерет. Пур чӗрӗ чун та чунлӑ мар. Чун тени хӑвна ху ӑнкарса илнипе кӑна ҫыхӑннӑ пулас. Ӑнкару вӑл ху ӑҫта, мӗнпе ҫыхӑнса тӑнине ӑнланса илни. Ҫавӑнпа та чунпа чӗме уйӑрмалла. Вӗсен пӗлтерӗшӗ расна. Чӗм хӑй хальлӗн ӳсекен, пурӑнакан организмпа, ӳтпе ҫыхӑннӑ. Чун пӗлтерӗшӗ вара халӑхпа ҫыхӑннӑ. Сан тавра никам та ҫук пулсассӑн, чун ҫинчен калаҫмалли пӗр сӑмах та юлмасть. Чун юнашар тӑракан тепӗр ҫын урлӑ кӑна палӑрать.

Апла, халӑх, чун, чӗм, ӳт пӗр пӗринпе уйӑрӑлми ҫыхӑннӑ. Пӗри тепӗринсӗр пурӑнас ҫук. Халӗ тин, пӗри тепӗрин ҫине таянса чунпа чӗм ҫинчен тӗплӗнрех шухӑшласа пӑхар. Чун чикки, тӳрех курӑнать, халӑхпа тата чӗмпе ҫыхӑннӑ. Ҫынна халӑх чунлатать. Халӑх ҫук-тӑк, чун та ҫук. Халӑх вилӗмсӗр-тӗк, чун та

вилĕмсĕр. Мĕн парать-ха, апла, халăх. Пирĕн шутпа, халăх хаклама вĕрентет. **Чун тени вăл - хаклав.** Хак паракан пур-тăк, çын чунлă. Тĕнчере ху ăçта тăнине ăнкарса илекен çын кăна хăй вырăнне, хăйпе ытти мĕнпур япала хушшинчи çыхăнăва хаклать. Çыхăнусем тем тĕрлĕ. Çав хаклавлă çыхăнусен пуххи пулать те ĕнтĕ чун тени. Калăпăр, эсĕ ху пурăнакан вырăна турă вырăнĕ тесе хаклатăн. Пĕтĕм çут çанталăк саншăн турă пĕлтерĕшлĕ пултăр. Ун чухне эсĕ ху тăнă вырăна кăна мар, пур ытти çыхăнăва та турăлататăн, турă сĕмне кĕртетĕн. Çакă сана чунлатать. Эсĕ хăвна, хăвăн пурнăçна урăх тата санран пысăкрах япалапа виçме пуçлатăн. Ку сана çĕклет, хăвăнран хăвна пысăкрах тăвать. Апла, чун тени, хăвăнран ху пысăкрах пулни, тата та татах çынланни. Çакăн пек хаклавсен пуххи тĕрлĕрен пулма пултарать. Çын юратса та, кураймасăр та пурăнма пултарать. Вăл хăйшĕн е тепĕриншĕн пурăнать. Пĕр сăмахпа каласан, çын хаклать. Çав хаклав пулать те ĕнтĕ чун тени. Хаклавĕ хăй тĕллĕн пулмасть. Хаклав çын хушшинче халăхпа пĕрле çуралакан пулăм. Каларăмăр, çын, халăх пулмасан хакламалли япала та юлмасть. Чун феноменĕ халăхра.

Чĕм пулăмĕ вара организмпа, ӳтпе çыхăннă. Çын сывлать пулсан пурăнать. Çын чунсăр та, выльăх пек, пурăнма пултарать. Чĕмĕ вара пур. Вăл сывлать. Организмри пур процесс та кирлĕ пек пырать. Вăл апат çиет, сывлать, ĕçет... Анчах, калăпăр, пĕр сăмах та каламасть. Вăл чĕмсĕрленнĕ. Кун пек çынна выльăхран уйăрса илме çук. Чĕм кĕрсен çын тин палăрма пуçлать. Вăл калаçать, ĕçлет те тейĕпĕр. Анчах та вăл çав вăхăтра чунлă тенипе килĕшме çук. Сăмах калани чунланма пуçланине кăна пĕлтерет.

Ӳт тени вара вăл чунпа чĕме палăртакан япала, субстрат. Ӳтсĕр, кĕлеткесĕр нимĕн те хăйне хăй палăртайман пулĕччĕ. Тепĕр чухне çавăнпа та философсем кĕлетке хăй тĕллĕн шухăшлама та, ăнланма та пултарать теççĕ. Чун тени ӳтре чĕм урлă палăрать. Ун пек чухне çын пирки ку чунлă вара, теççĕ. Чун кĕлеткере курăнмасть пулсан, ку выльăх пек вара, теççĕ. **Чун, чĕм, ӳт пĕр пĕринпе уйăрăлми çыхăннă. Вĕсенчен те çӳлерех халăх тăрать.**

**Çын халăх хушшинче кăна пулма пултарать.** Çут çанталăкра пĕччен кăна тăрса юлсан, çын Маугли пек выльăхланса каять.

Çак шухăшсем тĕрĕс пулсассăн, апла, пурăнăç тупсăмĕ, чăн малтан, халăхра упранать. Çын хăй хальлĕн ниме те пĕлтермест. Çавăнпа та малалла халăх мĕнне ăнкарса илме тăрăшăпăр.

Халăх, пирĕн шутпа, хăй пĕр организм. Вăл пĕрлĕхлĕ ĕç хурми кăна мар, вăл тавралăхпа пĕр пулмалăх вăй. Халăх вăйĕпе кăна çут çанталăк вăйне алла илме пулать. Кашни хăйхальлĕн çут çанталăк ăс-хакăлне ăспа ăнкарса илеймест. Халăх ăс-хакăлĕ кирлĕ. Халăх вăл, кибернетика терминĕпе каласассăн, шутлав машини. Кирек мĕнле ушкăн та ĕç тума вăйне кăна мар пĕрлешетерет, пĕр пĕтĕмĕшле организм пек ăслать те. Халăхăн, апла, хăйĕн шухăшлавĕ, ăнкарулăхĕ, туйăмĕ-сисĕмĕ пур. Çапла пулни вăл халăх çирĕп тытăмлине пĕлтерет. Çав тытăм пирки калаçса пăхар-ха.

Мĕнле майпа пысăк йышлă халăх пĕр организм пулса тăрать-ха. Мĕн пĕрлештерет çынсене. Ĕçпе шухăшлав кăна мар пуль. Ĕç тума пысăках мар ушкăн кирлĕ. Шухăшлавĕ те вăл ушкăн умне лартнă ыйту-хуравпа çыхăннă. **Халăха пĕр чăмăрккана çыхакан пĕр пĕтĕмĕшле çыхăну вара, пирĕн шутпа, кама е мĕне пуç çапнипе, культпа, çыхăннă. Чăн малтан тотем, каярах турă килет, халăх ăçтан пуçланса кайнине ăнлантарса парать. Халь тин çынсем пĕр тĕпрен, кăкран. Вĕсем пурте хăйсен мăн аслашшĕсемпе çыхăнса тăма пуçлаççĕ. Урăхла каласан, вĕсене çыхăнтарса тăракан пĕр центр пур. Вăл культ центрĕ.** Çăва пуçĕ-и вăл, киремет-и, чиркӳ-и, турă-и - пĕрех. Халăхшăн çакăн пек питĕ пĕлтерĕшлĕ палăрăмсем (символсем) йĕркелесе тытса тăраççĕ те халăха.

Кунсăр пуçне, кашни халăх хăйне кăна кирлĕ япаласене, пулăмсене хăйне майлă кăна хаклама вĕренсе çитет. Хакласси çут çанталăк еплерех пулнинчен, унпа пĕр пулма май килтерекен ĕç меслечĕсем мĕнлерех пулнинчен килет. Хаклав çынна мĕн кирлинчен кăна мар, çут çанталăк е япала пахалăхĕнчен те килет. Хаклавсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Сăмахран, ку япала лайăх, тепри япăх

тетпĕр. Ку пирĕн, тепри - ют, тетпĕр. Кун пек хакласа каланисем питĕ нумай. Вĕсен пĕр пĕтĕмĕшле тытăмĕ, ăна хаклавсен матрици теме пулать, кашни халăхăн хăйĕн расна. Çавă матрица йĕркелесе тытса тăрать те пĕтĕм халăха.

**Апла, пурăнăç тупсăмне палăртас тесен, пирĕн тăватă ăнлава, халăха-чуна-чĕме-ӳте, пĕр туса шутламалла. Халăх вăл хаклакан механизм терĕмĕр, чун çав хаклавсене упрать, чĕм вĕсене пурнăçа кĕртет, ӳт вара çаксене пурне те тытса тăрать. Ӳткĕлеткесĕр ним те çук. Мĕн пур чун хаклавĕ, çын ĕçĕ ӳтре палăрать.** Хальхи философи ахальтен мар, ӳт хăй тĕллĕн те шутлама пултарать теççĕ. Ӳт вăл пурăнăç хурми. Ăш-чикĕ, апла, хаклавсен матрици, чун тĕнчи. Вĕсене чĕм, ӳтри пĕр пĕтĕмĕшле процесс, метаболизм çыхăнтарса тăрать.

## 1.2. ВИЛĔМ ПĔЛТЕРĔШĔ

Пурăнăç вилĕмсĕр çук. Çавăнпа та вилĕм пĕлтерĕшне ăнланса илмелле. Калăпăр, çын вилĕмĕсĕр пулса тăрсассăн, пурăнăçпа мĕн килсе тухнă пулĕччĕ-ши. Пирĕн шутпа, пурăнăç хăй пĕлтерĕшне çухатнă пулĕччĕ. Апла, вилĕм пурăнăç пĕлтерĕшне кăтартса палăртса тăрать. Вилĕмсĕр пурăнăç çук. Пурăнăçпа вилĕм пĕр-пĕринпе уйăрăлми çыхăннă. Мĕн-ха вăл вилĕм. Кăна никам та пĕлмест. Пурăнăçа кăшт тĕшмĕртетпĕр пулсан, пурăнса куратпăр-ха та, вилсе курнă çын каялла таврăнни пулман. Клиника вилĕмне шута илмесен те юрать. Пурăнăçпа вилĕм хушшинче пулнă чухне çын психики улшăнать. Çавăнпа та вăл темле туннелсем, çутă пăнчăсем çинчен каласа кăтартнисем ниме те пĕлтермеççĕ. Вĕсем физиологи улшăннипе çыхăннă.

Пурăнăç вилĕмпе пĕр уйăрălми çыхăннă пулсассăн, апла, вилĕме пурăнăç кăна ăнлантарса пама пултарать. Вилĕм вăл урăхла пурăнăç. Пурăнăç мĕнне халь тин кăшт тĕшмĕртетпĕр. Вăл, аса илетпĕр, халăхпа, чунпа, чĕмпе, ӳтпе çыхăннă. Пурăнăç çакă тăватă пая пĕр уйăрăлми тытăмра тытса тăрать. Вилĕм вара пайлать. Кашни пай хăйне майлă улшăнать. Вилĕм мĕнне пĕлес те-

сен, ҫав кашни пай пурнӑҫне уйрӑммӑн пӑхса тухас пулать. Вӗсем пайланнӑ вӗт.

Чӑн малтан халӑхран пуҫлӑпӑр. Ҫын вилсен те халӑх вилӗмӗсӗр. Пысӑк организмӑн пӗр пайӗ вилни ниме те пӗлтермест. Ун вырӑнне тепри тӑрать, ун ӗҫне туса пыма пуҫлать. Ку тӗрӗс. Ҫапах та ҫын тени элемент тени мар. Ҫын хӑй пӗр тӗнче, ҫавӑнпа та, паллах, ҫын вилсен халӑх та улшӑнать. Пӗр-тепӗр ҫын кайсан, халӑх чылай вӑйсӑрланать, тепӗр чух саланса та кайма пултарать. Кӑна та шута илмелле. Пӗрех, пиншер ҫулсем иртнӗ, калӑпӑр, чӑваш е ытти халӑхсем ҫаплипех пур, ҫухалман. Апла, халӑх чылай ҫирӗп организм. Вӑл чӑнласах вилӗмсӗр. Вилсен те вӑл пӗр йӗрсӗр ҫухалмасть. Ун юлашкисем тепӗр халӑха витӗм кӳреҫҫӗ. Ун культурине алла илнӗ ҫӗнӗ халӑх вара калама май ҫук вӑйлӑ аталанса каять. Тӗслӗхрен, шумерсен культурипе ҫырулӑхне алла илнӗ еврейсем хӑйсен вӑйне халӗ те кӑтартса тӑраҫҫӗ. Рим вӑйӗ те этрусксенчен тухнӑ. Кун пек тӗслӗхсем нумай. Адамран пуҫланнӑ халӑх, апла, пӗр-пӗрне куҫса, пӗтӗҫленсе аталанса пырать, этемлӗх пулса тӑрать.

Вилӗм пӗлтерӗшӗ, апла, халӑх шайӗнче палӑрать. Мӗнле логика хуҫаланать-ха кунта. Ҫын вилет. Ун хыҫҫӑн мӗн юлать. «Ыр ҫын вилет - ят юлать», тет халӑх. Мӗн чухлӗ ҫын вилет, ҫавӑн чухлӗ ырӑ ят пухӑнать. Ҫакӑ пулӑм палӑрмаллах пулса ҫитсен тин цивилизаци пуҫланса каять. Халӑх хӑйӗн ырӑ ывӑлхӗрне уять те чи ҫӳлӗ шая лартса пуҫ ҫапма тытӑнать. Ҫапла пуҫланать палӑрӑмлатасси (симолизаци). Историксем каланӑ тӑрӑх, цивилизацин чи пысӑк палӑрӑмӗ вӑл, ҫын вилсен ӑна чысласа пытарни пулса тӑрать. Ҫын вилтӑпри ҫине тем тӗрлӗ палӑксем лартаҫҫӗ (улӑп тӑприсем, пирамидӑсем, хӗрессем тата ытти те). Ҫын ӗҫӗ-хӗлӗ те ҫухалмасть. Вӑл шутласа кӑларнӑ, тунӑ ӗҫсем халӑхра юлаҫҫӗ, архетипсем шайӗнче упранаҫҫӗ. Калӑпӑр, тахҫан темле хӗрарӑм пир тӗртме вӗрентсе хӑварни халӗ те пӗр вӗҫӗмсӗр пурӑнӑҫа кӗрсе пырать, е унта сӑра пӗҫерме, пӳрт тума вӗрентнӗ... Ку пурӑнӑҫра нимӗн те ҫухалмасть. Ӑс-хакӑл пуянлӑхӗ пухӑнсах пырать. Сӑлтавӗ вилӗмре. Вилӗм питӗ пӗлтерӗшлӗ пулӑм. Вӑл пулман пулсан, этемлӗх кун пек пуяймастчӗ. Унӑн ӑсталӑхӗ

инстинкт шайӗнчен иртеймен пулӗччӗ. Тахҫанхи архи-ӗҫсем пӗр ҫухалмасӑр пухӑнса пыраҫҫӗ. Халӗ тин вӗсене чӑн малтан кам тунисем те паллӑ мар. Хальхи вӑхӑтрисем кӑна ятне-шывне упраҫҫӗ.

Ҫапла майпа вилӗм вилӗмсӗрлӗхе куҫать. Пӗр пӗтӗмӗшлӗ ӑна палӑрӑмлатни теме пулать. Ку ӗҫ халӑх шайӗнче пулса пырать. Кунсӑр пуҫне чун шайӗнче пулса иртекен ӗҫсем те пур. Ҫын вилсен чунӗ юлать, теҫҫӗ. Чун мӗнне эпир халӗ чухлатпӑр. Ӑна хаклавсен пӗр ҫаври терӗмӗр. Кашни ҫыннӑн вӑл хӑй майлӑ, пӗр хурмаллӑ. Ӑна нимпе те пӑтраштараймастӑн. Тепӗр ҫыннӑн вӑл тепӗрле. Теприн тата урӑхла. Анчах та ҫав тӗрлӗ ҫынсен хаклав хурмисен пӗрпеклӗхӗ те пур. Ӑна халӑх ӑс-тӑнӗ (менталитет) тесе хаклаҫҫӗ. Ҫынсен хутшӑнӑвӗ ҫав пӗр никӗслӗхрен килет те. Унсӑрӑн никам та пӗрне-пӗри ӑнланаймӗ. Ҫын вилӗмӗ ҫав хаклава хаклатать, хаклавсен ҫаврине ҫирӗплетет. Калӑпӑр, ҫын питӗ хӑюллӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, таса... Ҫакӑ паха енӗсем унӑн вилсен те ҫухалмаҫҫӗ, малалла пурӑнакансене вӑй-хал парса тӑраҫҫӗ. Ку вӑл ҫын сӑнарӗ урлӑ пулса пырать. Унӑн ҫутӑ сӑнарӗ (образец) малашлӑх ҫулне ҫутатса тӑрать. Эпир ҫав ҫын пек пулма, ун «юррине» юрлама тӑрӑшатпӑр. Чӑн ҫынсем, апла, нихӑҫан та вилмеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗсем, кӑмӑлӗсем, халӑх шайӗнчи хаклавӗсем пире пурӑнма пулӑшса пыраҫҫӗ. Ҫакӑ вилӗм хӑйӗн пӑнчине лартнипе кӑна пулса пырать. Вилнӗ ҫын ҫинчен япӑх каламаҫҫӗ. Вилсенех вӑл турра тухса каять. Палӑрӑмлатни, терӗмӗр. Кун пирки хирӗҫлесе калама ҫук. Тӗслӗхрен, ҫын вилӗмӗсӗр тейӗпӗр. Апла пулсан вӑл хӑйӗн пӗлтерӗшне ҫухатать. Ун йӗрки-палли ҫук. Ним те картмасть вӑл, вилӗм ҫинчен шутламан пирки (вӑл ун ҫинчен пӗлмест) пурӑнӑҫа та хакламасть. Пурӑнӑҫпа вилӗм уйӑрӑлми ҫыхӑннӑ терӗмӗр.

Тӑватӑ пайлӑ схемӑн виҫҫӗмӗш сыпӑкне, чӗм, пӗлтерӗшне илсен те вилӗм пурӑнӑҫа куҫса пыни курӑнать. Ҫын чӗмӗ чӗлхе урлӑ палӑрать. Чӗм кӗнӗ, чӗмсӗр, теҫҫӗ. Мӗншӗн ҫапла калаҫҫӗ-ха. Мӗншӗн тесен ҫын пӗр пӗтӗмӗшле илсен информаци пухакан субстрат. Вӑл пурне те палӑрӑмлатать (симолизацилет). Пурӑнӑҫ вӑл пӗлни. Пурӑнӑҫа ӑна ҫак тӗнчене пӗлме туса янӑ. Пӗлнипе пурӑ-

нăç уйăрăлми çыхăннă. Пурăнăç вăл хăйех чĕм урлă пĕлет. Урăхларах чĕлхе хăйех пĕлет. Эпир чĕлхепе, чĕлхере пурăнăтпăр. Чĕлхерен тухатпăр. Пире чĕлхе çурататать. Чĕлхесĕрленсен чĕмсĕр выльăх шайĕнче кăна тăрса юлатпăр. Апла, çын вилсен унăн чĕлхи юлать. «Эпир кайсан мĕн юлать, мĕн калаçнă чĕлхе çав юлать», теççĕ чăвашсем. Чĕме эпир маларах процесс, метаболизм, терĕмĕр. Апла, калăпăр, юнçаврăнăшĕ, сывлани, иммунлă система ĕçлени - вĕсем пурте информациллĕ пулăмсем. Вĕсем те шутлаççĕ пулать. Ахальтен мар вĕт-ха çын пĕтĕм ӳт-кĕлеткипе шутлать теççĕ. Чăн та, шутлав çыннăн кашни хусканăвĕнче палăрать. Унăн пуçĕ кăна мар, пӳрнисем те шухăшлаççĕ. Çын хусканăвĕсенче ку питĕ уçăмлă курăнать. Тата, «организм хăй пĕлет», теççĕ. Чирлестăвас пулсан çын хăйне шанать, ӳт-кĕлеткине хăйне хăй юсама май туса парать. Паллă, ку шутлавлă пулăм. Организм мĕн тусан мĕн пулнине, е кирлине хăйех шутласа тупать. Çын вилсен, паллах, чĕмсĕрленет, шутлавлă процесс ванса каять. Анчах та пĕтĕмпех пĕтмест, чĕлхе шайне куçать. Чĕлхе çынна вилĕмсĕрлетет, чăн пурăнăç парать, çынран çын тăвать. Чĕлхене çухатсан вара çын выльăха тухать. Маларах каларăмăр, тăван чĕлхене çухатнă çын та çынах мар. Мĕншĕн тесен «текст» пăсăлать. Çын вăл космос пекех пĕр текст. Ăна пĕр чĕлхепе, тăван чĕлхепе çырнă. Вăл инстинкт шайĕнче упранать пулать. Шапла шутлаççĕ хальхи чĕлхеçĕсем.

Вилĕме ӳт шайĕнче пăхсассăн та пурăнăç курма пулать. «Тăпраран тухнă, тăпранах кĕретпĕр», теççĕ халăхра. Тăпрара нимĕн те юлмасть пек туйăнать пире. Анчах та, асăрхăр, эпир тăпра «çисе» ӳсетпĕр. Тăпри вăл тĕрлĕ çимĕç хурмаллă. Тăпра пирĕн иккĕмĕш ӳт. Пурăнăçпа вилĕм хушшинче пулса иртекен ку пулăм тата кăткăсрах. Ахальтен мар мифри паттăр Антей çĕр çумне çавăрса çапсанах çĕр-амăшĕн вăйне илет те каллех Геракла хирĕç тăма вăй тупать. Халĕ тин, ĕнтĕ, ку, пурăнăçпа вилĕмĕн органика шайĕнчи çыхăнăвне пĕлтерет. Эпир тăпра «çисе» ӳт хушатпăр, вилсен çав тăпранах куçатпăр. Органика шайĕнче эпир пĕр, нимле уйăрăмлăх та çук. Апла, вилĕм те çук. Пурăнăç кăна. Органика шайĕнче. Ку ытла ансат теме пулать. Ансатах та мар.

Калăпăр, ăçтан çав ностальги текен чир пуçланать. Вăл пире тăван çĕршывран уйăрăлса кайсан ярса илет. Пĕтĕм ӳт-пĕве чĕтретет. Ку чирĕн сăлтавĕ тăпрара. Эпир хамăр ӳт-пĕвĕн пĕр пайĕнчен, тăпраран уйăрăлнă. Ӳт çавна тӳрех сисет, хăйĕн органикăллă пĕрлĕхне çухатнăскер, мĕн çухатнине чир урлă пĕлтерет. Эпир тăван çĕршывшăн тунсăхлама тытăнатпăр. Енчен те аякри ют çĕртен тăван вырăна таврăнатпăр пулсан ностальги иртсе каять. Мĕн-ма тесен эпир каллех çав хамăр мĕн ачаран «çисе» ӳснĕ «тăпранах», çав тăпра çинче ӳснĕ çимĕçсене ĕнтĕ, çиме пуçлатпăр. Сăмахран, диетологсем çĕр çухрăмран ытла çĕрте ӳснĕ çимĕçсене çиме хушмаççĕ. Вĕсем организма наркăмăшлаççĕ пулать. Кăна ăнланма пулать. Ют çĕр çимĕçне çини чирлеттерет. Ностальги пуçланать. Акă мĕнлерех çыхăнусем палăраççĕ çынпа тăпра хушшинче. Ӳт-тăпра шайĕнче те, апла, вилĕм çук. Пулсан та вăл пурăнăçа куçса каять. Ку пулăм тата кăткăсрах пулас. Хăш-пĕр тĕнсенче вилнĕ çынсене çĕр ăшне кăна мар варса хураççĕ. ӳтне çунтарса çилпе вĕçтерсе яраççĕ, çĕр çине сапалаççĕ. Халь тин ĕнтĕ ун ӳчĕ таçта та пур. Апла, кашни çын ăшне тăпра пулса кĕрет. Хăш-пĕр халăхсем тата «пирĕн çынна йышăннă çĕр пирĕн пулса тăрать», теççĕ. Кунта та тем пур. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан тăпра пурне те çуратать, пурне те йышăнать. Кирек мĕнле пурăнăçăн та хăйĕн «тăпри» пур.

Вилĕм пĕлтерĕшĕ пирки нумай калама пулать. Хăш-пĕр халăхсем унран культ туса хунă. Вилĕм вара вĕсене «çăтсах» янă. Сăмахран майя, египет, тибет çыннисем. Вĕсем вилĕм тĕнчине питĕ тĕплĕн çырса хăварнă. Хăйсене çав тĕнчене кайма çăмăлтарах пултăр тенĕ ĕнтĕ. Индуссем сансара çавра пурри çинчен калаççĕ. Çын-мĕн пурăнăçĕпе пĕр япаларан тепĕр япалана куçса пырать. Лайăх пурăнсан лайăх япалана, япăх пурăнсан тискер чĕрчун, е ӳсен-тăран та пулса тăма пултарать. Паллах, ку версисем вилĕм пурăнăçпа мĕнле çыхăнса тăнине пĕрре те чăнласа кăтартса памаççĕ. Вĕсем психологи мелĕсем. Вилĕме çемçетсе кăтартнисем. Çын чăнласах та вилмест пулсан вилме те çăмăлрах вĕт-ха вăл. Чăвашсен те вилнĕ ватăсене пуç çапни пур. Сăваплă ватăсем те вилĕмсĕр пек килсе тухаççĕ. Вĕсен чунĕсем çывăх тă-

ванĕсене пăхса пулăшса тăраççĕ. Кун пек ăнлану та, паллă, пурăнма тата вилме пулăшать. Эпир вилместпĕр, тет, çын. Вилĕм çук, тетпĕр. Эпир вилсен те Улăп тăпри пулса юлатпăр, тет Эндип Ваççи поэт. Çакăн пек сăлтавласа ăнлантарни, вилĕме çакăн пек çемçетни, пирĕн шутпа, тĕрĕсрех, объективлăрах. Вăл пурăнăç пĕлтерĕшне ӳстерет, ăна хаклама вĕрентет. пурăнăçран хакли нимĕн те çук. Анчах та ăна вилĕмпе танлаштарса кăна хаклама пулать. Пурăнăç хакĕ вилĕмре. «Çак тĕнчене вилме çуралнă, çуралсанах вилме вĕрен», тенĕччĕ автор. Ку чăнлăха ăнкарса илме хĕн. Çын кашни самантра вилсе чĕрĕлсе тăрать, унăн пĕр тĕллев - чыслă вилĕм. Енчен те çак чăна ăнланса илсе пурăнсан, çын калама çук пысăк ĕçсем туса хăварма пултарать. Çавă пулать те унăн чăн пурăнăçĕпе вилĕмĕ.

## 1ĕ3ĕ ШĂПА

Çын хăйĕн пурăнăçне тĕрлĕрен хаклать. Пĕри пурăнăç ăнчĕ, тет. Тепĕрине вара вăл çырлахтармасть. Çак хаклавсем пурте шăпа тенĕ ăнлавпа çыхăннă. Мĕн вăл шăпа. Хальлĕхе ун пирки нимех те калама çук. Пĕрисем мĕн пуласси пулать ĕнтĕ вăл, эпир пурте турă аллинче, теççĕ. Тепĕрисем, каларăмăр, ку шухăшпа килĕшмеççĕ. Вĕсем хăйсен пурăнăçне хăйсем тытса тăвасшăн. Чăн та, эпир мĕн тăвасси турă е çут çанталăк саккунĕсенчен кăна килмест пуль, Вĕсене шута илĕпĕр-ха эпир. Чи кирли вара кунта кăмăл-туйăм. Чĕре мĕн ыйтнине туса пырсан мар-и вара пурăнăç телейлĕрех килсе тухнă пек туйăнать. Хăвăрах шутласа пăхăр-ха, эсир çут çанталăк саккунĕсене кăна пăхăнсан, чĕрĕ чун пурăнăçне кăна пурăнса тухатăр вĕт. Калăпăр, апат çиетĕр, çывăратăр, пурăнмалăх ĕçлетĕр... Ку выльăх шайĕнчи пурăнăç вĕт. Шăпа-и ку. Енчен те эсир хăвăрăн кăмăлăра палăртрăр-тăк, çут çанталăк саккунĕсене шута илсе, вĕсене хăвăра кирлĕ пек йĕркелерĕр-тĕк... Кун пек чухне, паллă, тĕнче кăна мар, эсир хăвăр та улшăнатăр. Ку сирĕн шăпа.

Анчах та эсир мĕн тăвас тенине, темле çине тăрсан та, хирĕç тăракан, пăсакан тупăнатех. Ку вăл ăнсăртлăх. «Ăнсăрт, кăмака çинчен кĕмсĕрт». Вăл эсир мĕн тăвас тенине кирек мĕнле шута илсен те пĕрех тупăнать. Мĕншĕн тесен ăнсăртлăх кирлĕлехпе, саккунпа тӳрремĕнех çыхăнман. Вăл хăй тĕллĕн пулăм. Вăл, Г. Плеханов каланă тăрăх, икĕ пулăм тĕл пулни. Калăпăр, çул тăваткалĕнче икĕ машина çапăнчĕç. Кашни хăй тĕллĕн çул-йĕр саккунĕсенех пăхăнса пынăскерсемех тĕрлĕ сăлтавсене пула пĕр-пĕрин çине пырса кĕреççĕ. Ку ăнсăрт пулăм. Кунта пĕр-пĕрне шута илменни, саккуна пăхăнманни пур, паллах. Анчах ĕç кунта çеç мар. Пирĕн шутпа, ăнсăртлăх тымарĕ çут çанталăкра хăйĕнче. Вăл хăй пĕр саккун. Ăнсăртлăх саккунĕ. Çут çанталăк икĕ пулăмлă: пĕри кирлипе, тепри ăнсăртпа çыхăннă.

Ăнсăртлăх пĕлӳ çитменнипе те çыхăнман. Хăй вăхăтĕнче ăнсăрт пулăм сиксе тухнине пĕлӳ çитменнипе çыхăнтарнă. «Пĕлнĕ пулсан улăм сарса хунă пулăттăм», теççĕ. Анчах та тем чухлĕ пĕлсен те ăнсăрт пĕрех пур. Вăл, каларăмăр, çут çанталăк ăнтăлăвĕпе çыхăннă. Енчен те ăнсăртлăх çухалсан аталану та пулмасть. Синергетика науки эволюцие тӳрремĕнех ăнсăртлăхпа ăнлантарать. Виçерен тухнă кирек мĕнле система та бифуркаци тĕлĕнче хăй çулне ăнсăртран суйласа илет. Тĕрлĕ ăнсăрт пулăма пула вăл унталла та кунталла та кайма пултарать. Ку çут çанталăк саккунĕ. Апла, ăнсăртлăх тĕнче никĕсĕнче упранать, унăн аталанăвне йĕркелет. Çавăнпа та тĕнчепе ытла пит выляма юрамасть. «Вăйăран вăкăр тухать».

Çак шухăшсем шăпа мĕнне тӳрех ăнлантарса параççĕ. Шăпа вăл ăнсăрт тĕлпулу. Ку пĕрре. Шăпа вăл саккун, çут çанталăка мĕн кирли. Ку тепре. Апла, шăпана икĕ енлĕ саккун йĕркелесе тăрать. Пĕри ăнсăртлăх сакккунĕ, тепри вара кирлĕлĕх саккунĕ. Мĕнле çыхăнса майлашăнса пыраççĕ-ха вĕсем. Философи кун пирки çапла калать. Кирли, тет, ăнсăрт урлă палăрать. Пирĕн шăпа, çиелтен пăхсан, йăлт кĕтмен çĕртен сиксе тухнă пулăмсемпе çыхăннă. Çавăнпа та хăшĕ-пĕри пурăнăçа пĕлме çук, теççĕ. Çав вăхăтрах ăнсăрт пулăмсем урлă кирлĕлĕх, эволюци саккунĕ палăрать. Мĕн пытармалли пур, эпир пурпĕрех вилетпĕр,

анчах мĕнле пурăнса вилетпĕр, ку вара пиртен килет. Вилĕм кирлĕлĕхĕпе пĕрле пурăнăç вылявĕ те пур. Вĕсем уйăрăлми çыхăннă.

Халĕ вара шăпа пирки ыйтсан эпир мĕн каланă пулăттăмăр. Шăпа вăл çут çанталăк тата общество саккунĕсемпе пĕр килекен ăнсăртан тĕлпулу. Акă мĕн вăл. Калăпăр, пурте асăрханă, çын шăпи нумай чухне кампа тĕл пулнинчен килет. «Япăх çынпа тĕл пулсан япăхланан, лайăххипе тĕл пулсан лайăхланан». Çавăнпа та чăваш уйăрăлас умĕн: «лайăххипе», тет. Апла, пурăнăç çулĕ, линийĕ икĕ пайран тăрать. Пĕри кирли, тепри ăнсăртли. Кирли пурăнăçа тӳп-тӳрĕ тытса пыма хистет, тепĕри пĕрмай кукăртать. Мĕн калăн, сухапуçне темле тӳрĕ тытса пырас тесен те йăран кукăр-макăр килсе тухать. Тĕнче çулĕ те, шăпа, çавăн евĕр.

Кунсăр пуçне шăпа телейлипе телейсĕр пулнине те шута илмелле. Шăпа телейлĕ пулсан çын хăй пурăнăçĕпе кăмăллă. Кукăр-макăрри ку чух ниме те пĕлтермест. Телей тени пĕр пĕтĕмĕшле илсен ĕç тунипе çыхăннă. Енчен те çын палăртнă ĕçе вăхăтра та хăйне кирлĕ пек тума пултарчĕ-тĕк, кĕтсех тăр, телей тени те кĕттермест. Телей вăл тĕллевпе ĕç кăтартăвĕ хушшинче упранать. Палăртнă таран ĕçлесе çитереймерĕн-тĕк, эсĕ хăвна телейсĕр пек туятăн. Ĕçе вĕçлес тесе пĕтĕм вăя пухатăн. Тĕллев мĕн чухлĕ пысăкрах, çавăн чухлĕ пысăкрах вăй кирлĕ. Енчен те мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе эсĕ тĕллеве пурнăçларăн-тăк, апла, эсĕ пысăк телейлĕ. Вăл пĕр кĕтмен çĕртен самантлăха хăйех килсе çапать. Самантлăха кăна. Ун хыççăнах пурăнăçăн урăх тĕллевĕсем сиксе тухаççĕ. Халь тин каллех çав тĕллевсене ĕçлесе çитмелле пулать. Пăшăрхану, тепĕр чух хурлану та, пуçланать. Çавăнпа та туйăм-сисĕмсене шута илсен шăпа вăл савăнăçпа хурлăх хушшинче. Çапла калать те халăх. «Пирĕн пурăнăç хурлăхпала савăнăç хушшинче», тет.

Шăпан тепĕр енĕ çын мĕн туса хăварнипе çыхăннă. Чăн та, енчен те эсир пысăк ĕçсем туса хăварма вăй тата мел тупрăр-тăк, паллă, сирĕн шăпа ăнăçлă килсе тухнă. Тăванăрсем кăна мар, халăх та сире манмĕ. Пысăк ĕç тăвасси йăлтах тĕнчене мĕн кирлипе тĕвĕленет. Тĕнчен хăйĕн юхăмĕ пур. Сирĕн ĕç çав юхăм-

па пĕр килсен, пурăнăç еккипе кайсан, эсир пысăк вăй хумасăрах пысăк ĕç тума пултаратăр. Ку чухне, паллă, çут çанталăк тата общество саккунĕсене питĕ пĕлмелле. Унсăрăн юхăм юхтарсах кайма пултарать. Юхăма хирĕç тăни вара шăпана хуçсах пăрахма пултарать. Паллах, пурăнăç юхăмне хирĕç каякансем те пур. Анчах ун пек тума калама çук хăватлă вăй кирлĕ. Е чеелĕх. Вара тин тĕнчепе хуçаланма пултарăн. Хăй саккунĕпе пурăнакан çын сахал. Каларăмăр, ун пек тăвас тесен пĕлӳ, вăй тата чеелĕх кирлĕ. Вĕсем пур чухне те çуккă. Çавăнпа та çын еккипе кайма тивет. Çынран юлас марччĕ тетпĕр. Кун пек чухне вара эпир хамăр пурнăçа мар, çын пурăнăçне пурăнса ирттеретпĕр. Шăпа та вара çын шăпи кăна пуль, хăвăрăн мар.

Пĕр пĕтĕмлетсе шăпа пирки çакна калама пулать. Шăпа вăл йăлтах хамăртан, пирĕн пĕлӳпе вăйран, кăмăлпа ăсран тата çынсемпе тĕл пулнисенчен килет. Кирлĕ тата ăнсăрт пулăмсем пĕр-пĕринпе уйăрăлми çыхăнса пирĕн шăпана йĕркелесе çул парса пыраççĕ. Урăхла каласан, яланах хăвăн вăйна ытти вăйсемпе танлаштарса туйса ĕçлес пулать. Шăпан, апла, хăйĕн виçи пур. Çав виçе виçет те пурăнăçăн кукăр-марлăхĕпе тӳрĕлĕхне. Пурăнăç тӳрĕрех килсе тухрĕ-тĕк, апла, сирĕн вăйпа пĕлӳ çителĕклĕ, кукăртарах-тăк, вара эсир çын хыççăн кайнă. Хăшĕ лайăхраххине калама та çук. Шăпа пĕтĕмĕшле пур, анчах вăл мĕнле килсе тухасси сиртен килет. Çавăн пек диалектика.

Тепĕр шухăша та каласа хăвармалла. Тепĕр чухне ырă шухăшпах чи çывăх çынсемех сирĕн шăпана йĕркелеме пăхаççĕ. Вĕсем-мĕн сирĕн пурăнăçшăн яваплă, эсир-мĕн тĕрĕс мар пурăнатăр. Çапла вара тĕрлĕрен ăс пама, тӳрлетме тытăнаççĕ. Кунтан хăрушши ним те çук. Пуринчен ытла кун пекки сирĕнпе çамрăк чухне пулса иртет. Ача шухăш-кăмăлне, пултарулăхне, вăйне те шута илмеççĕ. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен пулса çитмен шăпине ачи пурăнăçĕпе тӳрлетесшĕн пулинех. Ку çеç те мар. Сирĕн ирĕклĕхе чикĕлеççĕ. Ăна е куна тума юрамасть тесе тăнран кăлараççĕ. Çын вара хăй халлĕн пурăнайми тăрса юлать. Сăнарласа каласан, ăна алăран çавăтса çӳреме тивет. Ун пек хевтесĕр çынсем халĕ питĕ нумай. Ку вăл, паллă, çын пурăнăçран хăранинчен килет. Мĕн

чухлĕ хăратăн, çавăн чухлĕ килсе çапать тĕнче. Урама тухмасăр тенĕ пек пӳлĕмре ӳссе çитĕннĕ ачасем час-часах хур кураççĕ. Чăн пурăнăçа пĕлмен, унран хăракан çын пысăк ĕç тытса тăваймасть. Çавăнпа та мĕн ачаран кашнинех хăй халлĕн пурăнма вĕрентес пулать. «çын хыççăн каякан вакка сикнĕ тет».

Кирек мĕн калăр та, çын шăпи халăх шăпипе çыхăннă. «Халăх мĕнле, эпир те çапла», тет çын. Халăх сăмахĕнчен иртеймĕн. Çавăнпа та кунта кăштах, малтанласа тенĕ пек, халăх шăпи пирки те сăмах пуçарар. Халăхăн хăйĕн пурăнăçĕ. Ăна никамах та тĕпчемен. Пĕрисем вăл вилĕмсĕр, тепĕрисем вара ун пурăнăçне 1500 çула çитереççĕ. Пин ытла çул пурăнсан халăх пĕрех пĕтет, теççĕ. Кунта калама хĕн. Китайсем, калăпăр, пиншер çул пурăнаççĕ. Шумерсем вара пĕтнĕ. Халăх йăлтах пĕтмест, юнĕпе вăл урăх халăха куçса каять тенипе килĕшес килмест. Çук япала çуках ĕнтĕ вăл. Чăвашсем те пĕтеççĕ-мĕн. Вĕсем-мĕн питĕ ватă. Хăйсен пурăнăçне пиншер çулсем пурăнса ирттернĕ. Çавăнпа та вĕсен шăпи паллă. Çаплах-и вара ку пурăнăç.

Пирĕн шутпа, пурăнăçпа вилĕмĕн хăйĕн формулисем, сăмахĕсем пур. Калăпăр, «чăваш пĕрех пĕтет», тесе каласан пĕр формула, пĕр шăпа хуçаланать. «Ял пĕтсен, чăваш пĕтет», тенине те илтме пулать. Кăна ĕнтĕ ял халăхĕ пурăнăç çăлкуçĕ пулнине шута илсе каланă. Енчен те «чăваш пĕтсен, тĕнче пĕтет» тесен, чăваш хăй пурăнăçне этемлĕхпе çыхăнтарать. Этемлĕх вара чăннипех вилĕмсĕр. Халăх шăпи, апла, темле такам çырса ăнлантарса панă срокпа мар, сăмах каланипе çыхăннă. Мĕнле сăмах калатăн, çапла шăпаллă пулатăн. Шăпа, апла, сăмахран килет. «Малтан сăмах пулнă», теççĕ. Ку чăнлăх шăпана йăлтах урăх шайра ăнлантарса парать. Сăмах шайĕ вăл чун шайĕ. Шăпа, апла, чун вилĕмсĕрлĕхĕпе те çыхăннă. Вилĕм çук тесен, вилĕм чăнах та пулмасть.

Тата тепĕр шухăшлав та шăпа мĕнне питĕ лайăх ăнлантарса парать. Ку шухăшлав улшăнусемпе çыхăннă. «Упранас тесен, улшăн», теççĕ. Çĕнелсе улшăнса пыракан халăх нихăçан та пĕтмест. Çав вăхăтрах, паллă, унăн хăйĕн тĕп тымарне татма юрамасть. Турачĕсемпе çулçисем унăн йывăçăнни пек çĕнелсе ӳссе

пыччĕр, анчах тымарĕ татах çирĕплентĕр, çавă анчах. Ун пек чухне вара халăх чăнласах вилĕмсĕр. Вăл хăй пĕр тĕнче йывăççи. Ахальтен мар пулĕ чылай халăхăн археҭипĕ вăл йывăç. Тымарĕ ĕнтĕ, каларăмăр, чунпа, е урăхла каласан, хаклавсен матриципе çыхăннă. Хаклавсен пĕр пĕтĕмĕшле çыхăнăвĕ тĕвĕленсех ларнă-тăк, çав çын е халăх вилĕмсĕр. Шăпа, апла, хаклавсемпе те никĕсленнĕ.

Çак шухăшлавсем шăпа тĕрлĕ енлĕ пулнине, камăн мĕнле шăпа тухасси тĕрлĕ сăлтавсенчен килнине кăтартса параççĕ. Шăпа пурăнăçпа вилĕм хушшинче. Унта вара тем те пур. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, шăпа вилĕмпе мар, пурăнăçпа çыхăннă. Шăпа мĕнле пурăнса ирттернинчен килет. Шăпан хăйĕн хаклавĕ пур. Вăл халăх пурăнăçĕпе çыхăннă. Халăхлă çын шăпи хаклă. Вăл вилĕмсĕр.

Ыйтусем

1. Чун мĕншĕн вилĕмсĕр.
2. Мĕн вăл чун.
3. Чун, чĕм, ӳт хушшинче мĕнле çыхăнусем пур.
4. Халăха мĕн тытса тăрать.
5. Мĕн вăл хаклавсен матрици.
6. Пурăнăç тупсăмĕ ăçта.

# 2. ÇУРАÇТАРУПА ХИРĔÇТĂРУ МЕЛĔСЕМ

## 2.1. ÇЫН ХУТШĂНĂВĔ

Çын пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр пурăнма пултараймасть. Çын, чăннипе, çын хушшинче кăна çуралать. Ăна çын хутлăхĕ, социум кирлĕ. Пĕр-пĕтĕмĕшле каласан, çын вăл био-социаллă чĕрĕ чун, генпа культурăн коэволюциллĕ пĕтĕмлетĕвĕ. Апла, çын çинчен калаçнă чухне, чăн малтан, ун хутшăнăвĕсене шута илмелле. Çынпа çын тĕл пулса калаçни чи пысăк пуянлăх. Çакна эпир темшĕн пит ăнлансах та илесшĕн мар. Пире-мĕн пĕчченлĕх илĕртет. Пĕчченлĕхре те, паллă, хутшăну (диалог) пур. Ун чухне эсĕ хăвăнпа ху калаçатăн (монолог). Çапах та çынпа тĕл пулса калаçнине нимĕн те çитмест. Малтанрах каларăмăр, шăпа вăл тĕл пулу тесе. Çынпа тĕл пулни çын çул-йĕрне кăна мар улăштарать, вăл унăн ăш-чиккине те урăхлатать. Çутă çынпа тĕл пулсан çуталатăн, мĕскĕнпе паллашсан ху та мĕскĕнленсе каятăн. **Çын хутшăнăвĕнче пĕтĕм тĕнче упранать. Унтах усалли те, ырри те. Çын мĕн тăвасси, мĕнле пуласси çав хутшăнуран тухать. Мĕнле япала-ши вара вăл çын хутшăнăвĕ. Пирĕн шутпа, вăл тĕнче никĕсĕ. Кирек мĕнле пулăм та, япала та, ял-и унта, патшалăх-и, пурте çынпа çын хушшинчен сиксе тухаççĕ. Апла, çын хутшăнăвĕ ăнтлă (онтологиллĕ) пулăм. Урăхла каласан, вăл тĕнче тымарлă, ун никĕсĕ.**

Çын хутшăнăвне тĕпчеме, чăн малтан, çынран хăйĕнчен пуçламалла пек туйăнать. Çын питĕ чĕрĕ, активлă, вăйлă. Çав туйăм-сисĕмсем ăна хăйне хăйĕнчен иртсе кайма май параççĕ. Вăл тĕнчешĕн усă, çав вăхăтрах хăйĕнчен хăй иртме пултаракан çын тĕнчене те усать. Тĕнчепе çын хушшинче темле социаллă канал йĕркеленет. Çыннăн мĕнле те пулин хăйне кăтартмалла. Унсăрăн вăл путлансах ларать. Енчен те эпир шутлани тĕрĕс пулсассăн, ăна курмалăх тепĕр çын (субъект) кирлĕ. Çавăн чухне кăна субъ-

ект-субъектлă хутшăну пуçланать. Пĕр-пĕрин патне ăнтăлнине, кă-мăл, тейĕпĕр. Хутшăну пур-тăк, çын кăна мар. япала та хутшăну ыйтса йăлăнать. Сăмахран, туса пĕтермен ĕç канăç памасть. Мĕнле те пулин йăнăш турăн-тăк, вăл пĕрех сана аса илтерсех тăрать. Фуко калать, стена çинчи чалăшса кайнă ӳкерчĕк те мана тӳрлетĕр-ха тесе йăлăнать[1], тет. Ку, паллă, япалапа çын хушшинче хутшăну пур пулсан кăна çапла килсе тухать. Апла, çын хутшă-нăвĕнчи пĕрремĕш услови вăл, хутшăнас тени, кăмăл пурри. Çав кăмăл çук пулсан вара нимĕн те тăваймăн. Çын чунне шаккаса та уçаймăн.

Хутшăнăвăн иккĕмĕш условийĕ вăл çынсен темле пĕр ин-терес, пĕр ĕç, пĕр никĕс пурринче. Калăпăр, пиччĕшĕпе шăллĕ хушшинче пĕр никĕс пур. Вăл, пирĕн шутпа, пĕр ратнелĕх, пĕр юнлăх. Вĕсем пĕр варта ӳссе çитĕннĕ. Çавă хутшăнтарать вĕсене. Хĕрарăмпа арçын хушшинче вара, пурне те паллă, юрату пур. Çавă хутшăнтарать, уйрăлми пĕрлĕх таранчченех. Ашшĕпе амăшĕ хушшинче, шухăша малалла тăсăпăр, ача тăрать. Çавă никĕслетет çемьене. Ĕçлĕ çынсем хушшинче пĕр интерес, укçа. Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе пама пулать. Пурте вĕсем çын хутшăнăвĕ мĕнле те пулин никĕс çинче тытăнса тăнине уççăн палăртаççĕ.

Çын хутшăнăвĕ кирек хăçан та темле пĕр пĕрлĕх çуратать. Юлташпа юлташ хутшăнăвĕ, калăпăр, туслăх. «Пирĕн туслăх ĕмĕре», теççĕ. Çынпа çут çанталăк пĕр-пĕринпе тĕл пулсас-сăн та тем те пĕр çуралать. Çын темле ача пек çуталса каять. Çут çанталăк çынланса каять. Унтах, паллах, хуçалăхĕ те, ялĕ-хули те, культури те. Çав хутшăну тем те пĕр çуратать, ун чухне пурте чĕрĕлет. Ара, ахальтен мар пуль хĕвелĕ те пăхать, çилĕ те вĕрет, сивĕ те чĕпĕтет... Атропоморфизм, теççĕ. Çын хăйĕнпе тĕл пулнă мĕнпур япалана чĕрĕлĕх кĕртет, çынлатать. Хутшăну вăйĕ калама çук хăватлă, вăл пĕрлĕх кăна мар, хутшăну субъекчĕсене урăхлататни те, тĕнчене улăштарни те.

Кун çинчен конкретлăрах, картса каласан та юрать. Мал-танрах каларăмăр, çын шăпи кампа тĕл пулнинчен те килет, тесе.

---

[1] Фуко М. Слова и вещи. Археология гуманитарных наук. СПб., 1994.

Кампа тĕл пулнинчен кăна мар, тĕл пулу хыççăн çын еплерех улшăннинчен те питĕ нумай килет. Кирек мĕнле хутшăну та пĕр йĕрсĕр çухалмасть. Тĕл пулу çын чĕри çине пичет çапса хăварать. Вăл халь такам сăмахĕпе, куçĕпе, чунĕпе, тен, юратăвĕпе е курайманлăхĕпе пичетленнĕ çын. Вăл улшăннă. Çут çанталăк пулăмĕсемпе те çавах. Уйра ӳснĕ ӳсен-тăрана е чечек çинчи хурт-кăпшанкăна курни те, хутшăну пулчĕ-тĕк, пĕр палăрмасăр иртмест. Калăпăр, эсир пĕрре çапсах вунă кăпшанкăна пĕтернĕ, е пĕрре пуссах çĕр кăткăна таптанă. Мĕн каланă пулăттăр эсир кун пирки. Е тата, çум курăкĕ тесе, пиçенне те, эрĕмне те, йĕпе курăкне те çăлса тăкрăр. Мĕн килсе тухать-ха вара халĕ. Нимĕн те килсе тухас çук, тейĕр. Мĕн чухлĕ пĕтернĕ, мĕн чухлĕ çумланă, нимĕн те пулман-иç. Çаплине çапла та, анчах аплах та мар. Экологи кризисĕ пирки пурте илтнĕ пулĕ. Эпир ниме те уяса тăмасăр çут тĕнчене пĕтерни ахаль юлмасть. Хăш енчен те пулин пире пырса çапать. Тĕнче реакци тĕрлĕрен. Хăш енчен, тата мĕнпе пырса çапассине те пĕлместпĕр. Апла, кирек мĕнле хутшăну та тавăрусăр пулмасть, «çăкăр-тăвар хире-хирĕç», теççĕ. Çакă формула тĕнчене кăна мар, çынна хăйне те улăштарать. Ку процесс пĕр сисĕнкĕсĕр пулса пырать. Çут çанталăк япалине уяман, çынна пăхман çын тĕссĕрленсе типсе каять, çын сăнне çухатать. Хăйне кăна мар, пĕтĕм тĕнчене юратса пăхса тăракан, кӳршĕпе тăванне хисеплекен çын вара çуталать, вăйланать, çынланать. Икĕ енлĕ хутшăну икĕ енне те улăштарать. Лайăх е япăх енне-и, ку пĕтĕмпех хутшăнакансенчен килет.

Хутшăнун тепĕр енĕ те пур. Хутшăну нихăçан сăмах шайĕнче кăна пымасть. Хутшăнма, тĕлĕнмелле те, яланах япала кирлĕ. Ял хутшăнăвне илер-ха. Ял çыннин кирек мĕн те пулин çитмест пулсассăн, ăна çав япалапа пулăшакан çын тупăнатех. Купăста пулман пулсан купăста пырса парать, выльăхне алăк уçса кĕртекен çук пулсан, алăкне уçса выльăхĕсене картишне кĕртет, тата ытти те. Маркс калашле, кирек мĕнле хутшăну та япала урлă пулса иртет[1]. Çавăнпа та çĕр çинчи кирек мĕнле çын та

---

[1] Маркс К., Энгельс Ф. Полное собрание сочинений. 2-е изд., Т. 4.

тепĕринпе япала урлă çыхăнать. Хутшăну халĕ тĕнчипех питĕ вăйлă аталаннă.

Ку çеç те мар. Çын тепĕр çынпа пĕлӳ урлă та çыхăнать. Эпир тахçан пурăннă ăслă-тăнлă çынсемпе, калăпăр, Эйнштейнпа та калаçма пултаратпăр. Унăн пĕлĕвĕ пире куçать. Робинзон та хăйĕн утравĕнче пĕччен пулман. Унăн пĕлӳ кăна мар, çынсем тунă пуртти те, пăшалĕ те, каначĕ те пулнă. Пĕччен пулман вăл, унпа пĕрле çав утрав çинче пĕтĕм тĕнче пулнă. Вăл хăйĕн пĕлĕвĕпе пĕтĕм тĕнчепе хутшăннă.

Хутшăну çинчен калаçнă чухне ку тĕнчерен кайнă çынсемпе хутшăнни пирки те каласа хăварас килет. Цивилизаци тени çынсем пĕр-пĕринчен ĕмĕрлĕхе уйрăлнă хыççăн пĕр-пĕрне чысласа пытарма вĕренсе çитсен пуçланса кайнă теççĕ. Чăн та, мĕн чухлĕ çын леш тĕнчене кайнă. Эпир вара вĕсене манмастпăр. Вĕсемпе асăну кунĕсенче хутшăнатпăр, пил ыйтатпăр. Пĕтĕм чунчĕререн ыйтсан вĕсем чăнласах пулăшаççĕ, упраççĕ, вăй параççĕ. Мĕне пула çапла пулнине эпир пĕлместпĕр те. Анчах паллă, пиртен уйăрălса кайнă çывăх çынсем, хамăр манмасан, пире яланах пулăшса пыраççĕ. Ку факт, кăна пурте пĕлеççĕ. Çавăнпа та çын асăну кунне ахаль ирттерсе ямасть. Кайнă тăванĕсемпе хутшăнать. Çак пулăмăн сăлтавĕ ăçта тесен, пулăшун сăлтавĕ вăл, тен, пирĕнтех, теме пулать. Эпир вĕт тĕнче аталанăвĕн чи çӳлĕ шайĕ, тăррийĕ. Пирте тем те пур. Инстинктра миллионшар çул пухăннă ăс-тăн та, вăй-хал та... Çавсем палăрма тытăнаççĕ те пулас, ырă сăмах каласа пулăшу ыйтсанах. Турăран ыйтни те çавах. Пирĕн ватăсем ĕнтĕ вĕсем тахçанах турă шайĕнче.

**Пĕтĕмлетсе каласан, хутшăну çынран, хутшăну никĕсĕнчен, хутшăну япалинчен, хутшăну пĕрлĕхĕнчен, хутшăну пĕлĕвĕнчен, хутшăнакан çын улшăнăвĕнчен тытăнса тăрать. Çаксем пурте пулсассăн кăна хутшăну пур. Çын хутшăнăвĕ, каларăмăр, япалапа та пулма пултарать. Ун пек хутшăну чĕрĕ мар япалана та чĕрĕлĕх кĕртет.** Ку пулăм калама çук пĕлтерĕшлĕ. Тĕнче малашлăхĕ çынлăхпа, тĕнчене çынлатнипе тӳрремĕнех çыхăннă. Урăхларах каласан, тĕнче пуласлăхĕ хутшăнура упранса выртать. Çав хутшăнуран «пурлăх майракинчен» тенĕ пек ырлăх-сывлăхĕ те, çав

вăхăтрах инкек-синкекĕ те тапса тăрать. Апла, хутшăну мĕнне кăна мар, унпа мĕнле усă курмаллине те пĕлмелле. Чăваш ку енĕпе питĕ асăрханулла. «çынран аслă ан пул», тет. Кун пек формула, паллă, ăна хутшăнура йăнăш тăвасран упраса тăрать. Тепĕр чухне хутшăну хирĕçтăрулла пулсан вăл аяккалла пăрăнать. Анчах ку урăх калаçу, ăна эпир тепĕр параграфра пуçарăпăр.

## 2.2. ТĔНЧЕ ХИРĔÇТĂРĂВĔ

Хутшăну хирĕçтăрусăр пулмасть. Хутшăнакан енсем (объектсем) хăйсем пĕр расна тĕнче. Унсăрăн нимĕнле хутшăну та пулма пултараймасть. Пĕр пек объектсен хутшăнма сăлтав çук. Сăлтавĕ, каларăмăр, пĕрлĕх. Çав пĕрлĕхре кăна хутшăну енĕсем аталанма, урăхларах енсемпе пуянланма пултараççĕ (коэволюци). Пурнăçра хĕрарăмпа арçын хирĕçтăрулла енсем. Кашнин хăйĕн тĕнчи. Çавна пула ĕнтĕ вĕсен тепĕр пĕр пĕрлĕхлĕ тĕнче туса хума сăлтав пур. Гераклит калашле, «хирĕçтăруллăрах япаласем пĕрпĕрне ытларах килĕштереççĕ»[1]. Анчах кунта пĕр япалана манса каймалла мар. Пĕрлĕх, каларăмăр, пĕр-пĕр никĕс çинче тытăнса тăрать. Çав никĕс çукрах пулсан пĕрлĕх те саланать. Çав вăхăтрах объектсем расна пулнине те манса каймалла мар. Чăннипе вĕт вĕсем ютă, кашни урăх тĕнче. Вĕсене никĕс, тĕслĕхрен, çемьере ача, çыхăнтарса тăрать. Енчен те хĕрарăмпа арçына чăнласа пĕрпеклентерсе ярас тесессĕн, часах инкек патне килсе тухма пулать. Хĕрарăм хĕрарăмах юлтăр ĕнтĕ вăл. Арçынăн та хăрарăм пек курăнма юрамасть. Ку кулăшла çеç мар, хăрушă та. Мĕншĕн тесен тĕнче хирĕçтăрăвĕ çухалать. Малтанхи услови, хирĕçтăру çухалсанах, пĕрлĕх те пĕтет. Ку вăрттăн диалектика. Хăшĕ-пĕрисем ăна ăнланмаççĕ те чăнласа пĕр-пĕрин хирĕçтăрулла тĕнчисене ватма тытăнаççĕ. **Чăн пĕрлĕх пĕр никĕслĕ тата хирĕçтăрулла объектсен кăна пулма пултарать.** Кăна манма юрамасть.

Тĕнче, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пермаях хирĕçтăрулла. Тĕнче унсăрăн пурăнма пултараймасть. Çавă хирĕçтăрулăх япаласене пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарать, улăштарать. Хирĕçтăрулла тĕнче кăна

---

[1] Материалисты Древней Греции. М., 1965. С. 42, 46.

куçăмлă. **Хирĕçтăру тĕнче куçăмĕн сăлтавĕпе вăйĕ. Çав вăхăтрах çавна пулах вăл пĕрлĕхлĕ те.** Хирĕçтăрullă тĕнче кăна пĕрлĕхлĕ пулма пултарать. Унăн пĕрлĕхĕ, калас пулать, икĕ хирĕçтăрullă япаласенче мар, виççĕллĕхре. Пĕрлĕхлĕ пулас тесен, икĕ япалана харăссăн тепĕр япалапа, никĕспе, пĕтĕçтермелле. Пĕрлĕх, апла, виçĕ пайран тăрать. Иккĕшĕ хирĕçтăрullă, виççĕмĕшĕ çыпăçтарullă. Тĕслĕхрен, клей икĕ япалана питĕ лайăх çыпăçтарать. Электричество е магнит уйĕсем электрозарядсене е тĕрлĕ полюслă магнитсене пĕрлештереççĕ. Кирек мĕнле те пулин пĕрлĕх тăвас тесен, пĕрлештерекен виççĕмĕш япала кирлĕ. Анчах та, палăртса калатпăр, тĕнчери чи çирĕп пĕрлĕхсем пĕр-пĕринпе хирĕçтăрullă япаласенчен кăна пулаççĕ. Пĕр пек япаласем пĕрех саланса каяççĕ. Клей кивелсен йывăç сĕтел-пукан саланса каять. Йывăçăн пĕр-пĕрин патне туртăнни çук. Хирĕçтăрullă япаласем вара çут çанталăк панă вăйпа пĕр-пĕрин патне туртăнаççĕ. Кăмăл пур терĕмĕр. Çавăнпа пулĕ атомсем саланмаççĕ. Вĕсем те кивелеççĕ пулĕ те, çапах та вĕсен ĕмĕрĕ хальлĕхе вĕçĕ-хĕррисĕр пек курăнать.

Тĕнче хирĕçтăрăвĕ тĕнчен хăйĕн юхăмĕ пуррипе те çыхăннă. Çавă юхăма кĕме йывăр. Çут çанталăк тата общество саккунĕсене пĕлмесен, çав юхăм амантса та хăварма пултарать. Темĕн те тăвас килет, тет хăш-пĕр çын, анчах тĕнче памасть. Мĕншĕн памасть-ха тĕнче. Мĕншĕн тесен эсĕ унăн юхăмне кĕреймен. Кĕрсен, çӳлерех каларăмăр, вăл хăйех илсе каять, пысăк ĕçсем тума майсем туса парать. Çавăнпа та, чăн малтан, ĕç тăвас тесен, çавă ĕç саккунĕсене тĕнче саккунĕсемпе пĕр килтермелле. Юр шурă пулсан, ку юр хура тесе тăмалла мар. Юра хуратас, хăвăн саккунна палăртас тесен, ăнлантăмăр, турăран та, çут çанталăкран та хăватлăрах пулмалла. Çут çанталăк тата общество юхăмне чухлакан çын чăн ăсси[1]. Китай ăслăлăхĕ (у-вэй) каланă тăрăх, ăсси пӳрнепе кăчăк туртсах тĕнчене парăнтарать. Ним тумасăрах тĕнче юхăмне улăштарма пултаракан çын, паллă, чăн-чăн ăсси. Чăваш ăслăлăхĕнче кун пек мел хальлĕхе çуккă-ха. Синергетика çинчен каланăччĕ. Виçерен тухнă термодинамика системи

[1] «Ăсси» тени «мудрец» ăнлавпа пĕр килет.

кăна бифуркаци çывăхĕнче тĕнче тытăмне (структурине) улăштарма пултарать. Ун пек тума пĕр пĕчĕк кăна хускану (флуктуаци) кирлĕ. Тĕнче вара кăчăк туртнипех, флуктуаципех сире майлă çавăрăнса ӳкет.

Хирĕçтăру пĕр-пĕрне ăнланманнипе те çыхăннă. Пĕри тепĕрне тăнламасан, вăйсем хирĕçлеме тытăнаççĕ. Мĕнле-ха унта, Крылов юптарăвĕнче, тăрни пĕр, ракĕ тепĕр еннелле туртать, лавĕ вара вырăнтан та тапранмасть. Ку пĕтĕмпех пĕр-пĕрне ăнланманнинчен килсе тухать. Тепĕр чух çума-çумăн тăрса пĕр тĕллевлĕ ĕçлени те кирлĕ. Вара ĕç ăнать.

Тепĕр чухне хирĕçтăру тĕрлĕ интерессене пула сиксе тухать. Хальхи вăхăтри рынок калама çук хирĕçтăруллă япала. Çавна пулах ĕнтĕ конкуренци пур. Кашни акторăн хăйĕн тĕллевĕ, хăйĕн интересĕ, укçи. Пурăнăç вĕресе кăна тăрать. Калăпăр, улшуç таварне хаклăрах сутасшăн, илекен вара йӳнĕрех хакпа туянасшăн. Укçипе таварĕ пĕр япала пулсан та интересĕсем расна. Ку объективлă пулăм. Кун пек чухне хирĕçтăрăва ыйту-сĕнӳ (спрос-предложени) процесĕ йĕркелесе пырать. Пасар хакĕ теççĕ те, пулчĕ те. Пĕр интерес, пĕр тĕллев тупни, паллă, тĕнче юхăмне хăвăртлатать.

Çак тĕнчерен йăлт тухса ӳксен вара, тĕнче йăлт ютланать те, тĕнче тĕппипех хирĕç тăрать. Ун пекки те пулкалать. Çын ют тĕнчере хăйне, темле тăрăшсан та, тупас çук. Сана патне те пыртармаççĕ. Хăвăн вырăнна пĕл, теççĕ. Çын вара ютланса-ютланса каять те пĕтет. Тĕнчесĕр пурăнма çук. Маугли пирки каланăччĕ. Çын тĕнчере кăна çын, тĕнчерен тухса ӳкрĕн-тĕк, вилмелли кăна юлать. Паллă, ку пулăм тĕрлĕ шайра пулса иртме пултарать. Дистанци, теççĕ. Тĕнчерен кăшт айккинерех те тăма пулать. Эсĕ ытла çывăх та, ытла патне те пыман. Хăвăнне хăв пĕлетĕн. Чăваш хăй талай тенĕ пек. Кун пек чухне пĕр енчен хăвна майлă пурăнма, тепĕр енчен вара, пĕчченлĕхе те кĕрсе ӳкме пулать. Кунта ютшăнупа çывхартуна йĕркелесе пыни кирлĕ.

Диалектика саккунĕсене пăхсан, хирĕçтăруллă япаласем пĕр-пĕрин шучĕпе, пĕри тепĕрне шута илсе, е хытă хирĕçсе кай-

сан, пĕр-пĕрне йăлт пĕтерме те пултараççĕ. Кашнине уйрăммăн пăхса тухăпăр.

Пурăнăçра, чăн та, пĕри-тепĕрне парăнмасăр пулмасть. Пурăнас тесен, вăйли умĕнче пуçа пĕкетĕн. Çут çанталăкпа обществăна çапла туса янă. Ку япăх мар. Кунта нимĕн намăсланмалли те çук. Калас пулать, парăнтараканни те парăнать. Хуçа тарçисĕр пурăнаймасть. Пурăнăç çапла вĕрентет. Парăнмасăр парăнтараймастăн тет. Çапла диалектика. Кунсăр пуçне ку процесс пĕрмай ылмашăнса пырать. Паян эсĕ çĕнтертĕн, тепĕринче сана çĕнтереççĕ. Çавăнпа та пурăнăç юхăмне ăнланакан çын пуç тайма тăхтаса тăмасть. Ăнланманни вара пуçне каçăртать те... ăна самантрах касса каяççĕ. Ун пекки пирĕн историре нумай пулнă.

Пĕри тепĕринпе килĕштерсе пурăннине те сахал мар курнă. Ку вăл кашнин интересне шута илсе пулăшса пынă чухне кăна пулать. Урăхларах каласан, эсĕ çын е халăх интересĕпе пурăнатăн. Тепĕри те сан интерессене шута илет. Кун пек чухне расна интерессем пĕрлешсе пĕр пулса каяççĕ те, нимĕнле хирĕçтăру та сиксе тухмасть. Эгоистла хутшăну альтруистла ене куçса каять. Кун пекки хальлĕхи вăхăтра сайрарах тĕл пулать. Мĕншĕн тесен рынок пурне те хирĕç тăратать. Енчен те, калăпăр, хаклавсем пĕр килсен, ун пек хирĕçÿ пулмасть. Сăмахран, çĕр-Анне умĕнче эпир пурте парăмлă, вăл пирĕншĕн анне вырăнĕнчех, чи хакли. Апла, кашни, никампа улăштармасăр, хăй амăшне пăхать. Нимле хирĕçтăру та çук. Эпир альтруистсем-тĕк, тата хаклавсем пĕр пулсан кăна килĕштерÿллĕ килсе тухма пултарать ку пурăнăç. Килĕштерÿ пирки каярах тата тĕплĕнрех калаçăпăр.

Халĕ вара хирĕçтăру мĕншĕн пĕр-пĕрне тĕплеме пултарни пирки шутласа илер-ха. Пĕр-пĕрне ăнланмасăр, пĕр интерес тупмасăр пурăнсан, хирĕçтăруллă япаласем хăйсене хăйсемех тĕп тума пултараççĕ. Çав хирĕçÿре чарăнса тăрса сывлăш çавăрса илме те пĕлмесен вара, çын çын картĕнчен тухать. Кун пек хирĕçтăрăва конфликт, теççĕ. Кун пек чухне, Гегель каланă тăрăх, «хирĕçтăру тĕнче килĕшĕвне пăсать... идеал вара арканса антагонизма куçса каять»[1]. Пурăнăçра кун пек хирĕçтăрусем çемьесене салатса яраççĕ,

---

[1] Гегель. Соч. Т. XII. М., 1938. С.209.

тăшмансене пĕрне пĕри вĕлерттереççĕ. Патшалăхсем те вăрçса каяççĕ. Ту саккунĕ, юншăн юн тесе, ăрусене пĕр арçын юлмиччен тĕплеме пултарать. Кунта чăнласах шухăшласа пăхмалли пур. Кун пек хирĕçтăрăва тулашри вăйпа кăна путлантарма пулать. Вăл та вăхăтлăха кăна пулĕ. Çапах та вилĕмлĕ хирĕçӳрен тухас тесен кашнин çак çапăçуран çӳлерех те айккинерех (над схваткой) тăрса пăхмалла. Айккинчен лайăхрах курăнать, тен, кулăшла та. Нумай чухне хирĕçӳн сăлтавĕсем ытла та пĕчĕккĕ, ниме тăман япаласем кăна. Çавна курсанах çын хăй мĕншĕн çапăçнине курать те кулса ярать. Кунсăр пуçне тата кунта хăвна хăв кăна пĕлни те пулăшма пултарать. Сана никам та кирлĕ мар. Эсĕ хăв кăна. Мĕн тума тет çапăçмалла сан, калăпăр, пĕр шит çĕршĕн хăвăн тин кăна туслă пулнă кӳршĕпе. Хăй тĕллĕн пурăнма хăнăхнă çыншăн пĕр шит çĕр ниме те пĕлтермест. Унăн хăйĕн пĕр тĕнче пур. Пĕр шит япала ăна ним тума та кирлĕ мар.

Хирĕçтăру мелĕсем çапларах. Килĕштерӳллисене каярах пăхса тухăпăр, терĕмĕр. Хальлĕхе вара пĕтĕмлетсе çапла калама пулать. Хирĕçтăрусăр тĕнче çук. Тĕнче хирĕçтăру урлă аталанать. Пурăнăçра хирĕç тăмалли тата хирĕçĕве татса памалли мелсем нумай. Кашни пурăнăç ситуацийĕнче хăйне майлă мел. Çавна ăсра тытса тăрсан, хирĕçтăрăва çынна мĕнле кирлĕ çапла татса парсан, вара тин вилĕм мар, пурăнăç хуçаланма тытăнать.

## 2.3. ПУРĂНĂÇ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТАТСА ПАРАКАН МЕЛСЕМ

Хирĕçĕве, тавлашăва татса паракан мелсене кăштах тĕшмĕртрĕмĕр те пулас. Çав вăхăтрах пурăнăç ыйтăвĕ мĕнне ăнлантарса памасăр ыйту хуравне те тупаймăпăр пек туйăнать. Мĕн вăл пурăнăç ыйтăвĕ. Пурăнăç пурăнма ыйтать пулĕ ĕнтĕ вăл. Урăхла функци çукрах. Вилсе кайсан вара, хуравне тупаймарĕ ку çын теме пулать. Хуравĕ, апла, вăл пурăнăç мелĕ. Çапах та, картсах ыйтар-ха: мĕн ыйтать вара пурăнăç. Пĕр иккĕленмесĕр кала-

ма пулать. **Пурӑнӑҫ телей, сывлӑх, юрату, ӗҫ ыйтать. Ҫаксенчен пӗрийӗ кӑна ҫук пултӑр, пурӑнӑҫ арканать. Кусем пурте пурӑнӑҫ хаклавӗсем.** Мӗншӗн-ха чи мала телей хаклава лартрӑмӑр. Ӗҫ пурне те пӗтӗҫтерет пек, вӑл ҫын тӑвакан вӑй. Ҫапах та шутласа пӑхӑр-ха, телейсӗр пурӑнӑҫ пурӑнӑҫ мар ӗнтӗ вӑл. Эпир, чӑн малтан, ӗҫлеме мар, телей курма ҫуралнӑ. Мӗнле те пулин пурӑнасчӗ-ха тени те, пирӗн шутпа, тӗрӗсех мар. Пурӑнӑҫ вӑл тӗрлӗрен килсе тухать. Телейлӗх кӑна турӑ патне ҫывхартать. Чӑн хурав. вара, турӑлӑх. Кӑна тӳрех каларӑмӑр. Гипотеза вырӑнне пултӑр ку хурав, апла. Пурӑнӑҫ ыйтӑвӗсене турӑланса пырса кӑна татса пама пулать теесшӗн эпир. Ҫын татах та чунланса пыни, тейӗпӗр. Тӗрӗсех-ши ку.

Малтанрах телей пирки калаҫни пурччӗ. Телей вӑл тӗллев патне ҫитни, тенӗччӗ. Тӗллев патне, паллӑ, сывлӑхлӑн, юратуллӑн кӑна ӗҫлесе ҫитме пулать. Асӑрхӑр, кашни хаклав ытти хаклава шута илет, унпа ҫыхӑнать, ӑнлантарать. Вӗсем пӗр-пӗринпе уйӑрӑлми ҫыхӑннӑ. Калӑпӑр, эсир питӗ ырӑ. Ырӑлӑх тӳрех сиртен вӑй, тасалӑх, чӑнлӑх ыйтать. Вӗсенчен пӗри-ҫех ҫук пултӑр, ырӑлӑх пирки калаҫмалли те юлмасть. Кунта та ҫавах. Хаклавсем темле хӑйне майлӑ пӗр «йӑва» ҫавӑраҫҫӗ пек. Ку лайӑх, анчах та ку хӑй пӗр уйрӑм тӗпчев. Кун ҫинчен каярах калаҫӑпӑр. Ку тӗслӗхпе телей, сывлӑх, юрату, ӗҫ хаклавсен пӗр пӗтӗмӗшле «йӑвине» пурӑнӑҫ хӑй уйӑрса илнине палӑртрӑмӑр. Вӗсем пӗр-пӗринпе чӑнласа уйӑрӑлми ҫыхӑннӑ. Эсир кунта «чӑнлӑх–ырӑлӑх-илем» ҫыхӑнӑва аса илме пултаратӑр. Ку виҫҫӗлӗх пур хаклавсене те пӗр ҫыхха ҫыхать, ку вӑл философин пӗр пӗтӗмӗшле хаклав никӗсӗ. Ыттисем пурте вӗсенчен тухса пыраҫҫӗ. Пирӗн вара пӗчӗкрех те пӗчӗкех те мар ыйту, пурӑнӑҫ ыйтӑвӗ. Вӑл, пирӗн шутпа, маларах палӑртнӑ тӑваттӑллӑхпа ҫыхӑннӑ. Мини-модель теҫҫӗ ун пек схемӑсем пирки. Паллах, ӑна ӑнлӑлатма та, тарӑнлатма та пулать, ҫапах та пурӑнӑҫа ӑнланса илмелӗх ку модель ҫителӗклӗ.

Сӑмах телей пирки пырать. Чӑваш телее лӑпкӑлӑхра, тӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫра курать. Тепӗри, паллах, ҫапӑҫура. Телей тӗрлӗрен, терӗмӗр. Такамшӑн чӗрӗ чуна е ҫынна асаплантарни те телей. Ун

пекки те пур. Ун пек усалсем пирки мар кунта калаçу пырать. Эпир йĕркеллĕ, тăнлă-пуçлă, ырă чĕреллĕ çынсем пирки сăмах хускататпăр. Чăн та, чун вăркавĕ хăçан лăпланать-ха. Вăл ĕç тусан кăна иртет. Унччен вара эпир хамăра хамăр валли канăç тупаймастпăр. Яваплăх, темерĕн. Ирĕклĕ те йĕркеллĕ çын кирек хăçан та хăйне яваплă туять. Апла, ĕçне те тăвать, телейлĕ те пулать. Ку, паллă. Анчах та эпир телее çын турăланнипе çыхăнтартăмăр. Чунлатнипе, тесен, çителĕксĕр пек туйăнать. Мĕнма тесен кашни çын хăйне майлă чунлă. Турăллă тесен вара пурăнăçа чи çӳлĕ шая çĕклетпĕр.

Апла, турăлăх мĕнне тĕпчемелле пулать. Турăлăх йăлтах татса парать, терĕмĕр. Турăлăх вăл, пирĕн шутпа, урăх çын патне, тĕнчене тухни. Турă пичет çапнă çын хăйĕн пирки мар, çын пирки, халăх пирки шухăшлать. Вĕсемшĕн пурăнать. Ку, паллă, çăмăл мар. Кунта вĕт хăвна та çухатма пулать. Пулнă ун пек «тĕнче гражданĕсем», тĕнчене юрататăп тесе чи çывăх çыннисене сутнă. Ун пек пĕтĕм тĕнчелĕх пирки мар кунта сăмах пырать. Çын тепĕр çын пурăнăçĕпе пурăннă чухне хăйне те манса ан кайтăр. Çавăн чухне кăна телейлĕ пулса турă патне çывхарма пултарăпăр. Çакăн пек ăнлантарнине çывăха илме пулать пуль. Апла пулсан, ытти хаклăхсем çине те куçма пулать. Калăпăр, сывлăх. Çын кирек хăçан та тепĕрне сывлăх сунать. Сывлăх чи хакли, тет. Çапла пуль. Анчах та эпĕ сывлăхлă çын кăна телейлĕ пулма пултарать теесшĕн. Сывлăх вăл çын тĕнче хутлăхĕпе пĕр килни. Дарвин теорийĕ кăна лайăх çирĕплетсе парать. Сывлăх вăл шалти процессем тулашри процессемпе шайлашса пыни, баланс. Сывлăха эпир, вăл телей условийĕ пулнă май, философи категорисен йышне кĕртесшĕн. Сывлăх хăй енчен тулли те савăнăçлă пурăнăçпа, пĕрре те пăсăлман юн, нерв тата ытти çаврăнăшсемпе çыхăннă. Сывлăх вăл, çакна пурин те пĕлмелле, чун-чĕм-ӳт çаврăнăшĕ. Çак çаврăнăшăн пĕр пайĕ кăна çухалтăр, çын чирлеме пуçлать, Çавăнпа та пĕтĕм чир нервăсенчен тени тĕрĕсех мар. Сывлăх вăл виçĕ енлĕ ыйту. Чунĕ те, чĕмлĕхĕ те, ӳт-кĕлетки те çыннăн таса çавраллă пултăр.

Юрату пирки калаҫса шухăшласа кайсан пурăнăҫ та ҫитес ҫук. Юрату та телейпе, сывлăхпа, ĕҫпе ҫыхăннă. Тĕлĕнмелле те, Сартр каланă пек, юрату ĕҫре кăна палăрать. Юрату хăй хальлĕн ҫук. Вăл хутшăнура, ĕҫре, кăмăлра. Паллах, юрату ҫынра, ҫын урлă палăрать. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, юрату вăл юратнă ҫын пек пулса кайни, унăн пурăнăҫĕпе пурăнма пуҫлани, уншăн шутлама тăрăшни. Каларăмăр малтанрах, ку вăл эгоист пурнăҫĕ мар. Альтруист кăна пĕтĕм чун-чĕререн, тасан юратма пултарать.

Юрату, пирĕн шутпа, турă панă ҫут ҫанталăк туйăмĕ. Вăл ҫын ыйтнипе мар, хăй тĕллĕнех килет. Унăн пĕртен пĕр тĕллев, ҫемье йĕркелесси, ача ҫураттарасси. Ҫапла унăн функцийĕ. Юратуллă ҫын анчах телейлĕ, вăл пур чухне ĕҫ лайăх пыни пирки пит калаҫма та кирлĕ мар. Ку пуриншĕн те паллă. Ҫапах та юрату мĕншĕн ҫухални пирки каласа хăварсан лайăх пулнă пулĕччĕ. Юрату ҫут ҫанталăк пулăмĕ терĕмĕр. Ҫут ҫанталăк вăл туйăма ача ҫураттарма парнелет. Ача ҫук-тăк, е ҫын юратупа кăмăлне килтерес тесе кăна аппаланать пулсан, ҫакăн пек ултава ҫут ҫанталăк чăтаймасть, юратăва туртса илет. Юратун тĕп функцийĕ, кăна ҫирĕплетсех каламалла, ҫын ăрăвне малала тăсасси. Ăрăва татакан ҫын юратма пултараймасть. Ҫавăнпа мар-и вара хальхи арҫынсемпе хĕрарăмсем пĕр-пĕрне юратам пекки туса ҫӳреҫҫĕ. Ача ҫуратас шухăш пĕрин те ҫуккă. Пурте юратупа савăк кăмăлшăн айкашаҫҫĕ. Секс шайĕнче кăна пурăнни ҫынна пĕтерет, ун телейне туртса илет, сывлăхсăр тăратса хăварать. Ку аксиома. Ҫапла вара юрату никĕсĕ ачара пулнине манса кайнă ҫынсем юратусăр тăрса юлаҫҫĕ те секс шайĕнче кăна пурăнма тытăнаҫҫĕ. Ăҫта кунта турăлăх. Чăн юрату кăна турăллă. Кунпа пурте килĕшĕҫ. Ҫапах та ҫав турăлăх патне мĕнле ҫитмелле-ха. Пирĕн шутпа, телейлĕ юрату кăна турă туйăмлă. Телейсĕрри шуйттанлăх патне туртать. Ҫавăнта кĕвĕҫӳ, курайманлăх, чир-чĕр...

Пĕр пĕтĕмлетсе каласассăн, **пурăнăҫ ыйтăвĕсене хуравласа ҫапла каланă пулăттăмăр. Хурав тупсăмĕ турăланнинче. Енчен те ҫавна тума пĕлсессĕн, пурăнăҫ уҫăлать, ĕҫ ăнать, юрату килет, сывлăх иксĕлмест. Эсĕ телейлĕ. Вара, ҫавăн чухне сан чунна темле калама ҫук вăйлă та тутлă туйăм сăрхăнса кĕрет, е тепĕр чух**

**аслати пек пырса çапать, чĕтретсе пăрахать. Ун чухне хăвна турă пекех туятăн.** Ку туйăм час çухалмасть, чылай пĕчĕккĕн те пулсан, тепĕр чух ĕмĕрлĕхе çутатать. Çапла шăппăн кăна йăлл! кулни палăртать те ĕнтĕ çын турăланнинче. Ун пек çын никампа та вăрçмасть, тавлашмасть, чĕрре кĕмест. Пачах урăхла, вăл кашнине юрама тăрăшать, тăвана та юта та пулăшать, таса та ырă пурнăçпа пурăнать. Ун чĕри çине турă хăй пичет çапнă тейĕн. Сăлтавĕ вара питĕ ансат. Çавăн пек çын сывлăхлă, юратуллă, ĕçлĕ, апла пулсан, телейлĕ. Вăл хăй сисмесĕрех турă шайне тухать. Пурăнăç ыйтăвĕсене çын вара турăланса татса парать. Турă тенине кунта çут çанталăк шайĕнче тесе те ăнланма пулать. Мĕншĕн тесен çут çанталăкра нимле усаллăх та, курйманлăх та, çапăçу та çук. Унта ырăлăх, пулăшу, килĕштерӳ. Конкуренци пур пулсан та вăл пĕрлĕхлĕ пурăнăçпа çемçелет. Унта кашнин хăйĕн вырăнĕ пур. Çапах та çын халĕ çут çанталăкран чылай иртсе кайнă. Вăл çут çанталăкран кăна мар, хăйĕнчен хăй те иртсе пырать. Вăл турăланса татах та татах чунланса пырать.

ЫЙТУСЕМ

1. Тĕнче никĕсĕнче мĕн тăрать.
2. Мĕн вăл хутшăну.
3. Тĕнче куçĕмĕн вăйĕ ăçта.
4. Пурăнăç моделĕ мĕнле хакласенчен тăрать.
5. Телей, сывлăх, юрату тата ĕç хаклавсем мĕне пĕлтереççĕ.
6. Мĕн вăл турăланни.

# 3. ÇАВРА ТĔНЧЕ
## 3.1. ПАТТЕРН

Тĕнчен хăйĕн хурми пур. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан вăл çавра. Мĕншĕн çавра, тесе ыйтсассăн, тӳрех калама пулать. Кирек мĕнле япала та хăйĕн энергине упраса хăварас тесе тăрăшать, кĕскерех те тӳртерех çулпа кайса аталанма тăрăшать. Калăпăр, çын нихăçан та кĕтеслесе çӳремест, çула пĕрех çавралатать, кĕтеслĕ çула татать. Аристотель çаврана пур енчен те, йăлтах пулса çитнĕ фигура тенĕ. Тĕнче çавра хурмаллă. Процесс шайĕнче картса каласан, тĕнче вăл япала, энерги тата информаци çавăрăнăшĕ. Апла, тĕнчене пĕр лекалăпа, пĕр паттерна пăхăнса тунă. Паттерн вăл йĕркелĕх (организаци) принципĕ. Тĕнче тытăмĕ, процесĕ, апла, пĕр хурмаллă, çавракаллă.

Çак гипотезăна çирĕплетсе парас тесе темиçе тĕслĕх илсе парар-ха. Çут çанталăк тытăмĕнче тем тĕрлĕ çаврăнăш та пур. Сăмахран, геологи циклĕ вулкансем тапса тăнинчен (вулканизм), тусем йĕркеленнинчен (горообразование), океан тĕпĕсем юшкăнланнинчен (седиментогенез), океан тĕпĕнчи плитасене магма ирĕлтернинчен (магматизм) тата алюминоселикатлă породăсен кристалл тытăмĕ улшăннинчен (метаморфизм) йĕркеленсе тăрать. Ку чи пысăк цикл. Çакă çавра йĕркелесе тăрать те атмосферăри температурăпа газ хутăшне. Çавăнпа, Д. Лавлок калашле, пирĕн планета çинче пурăнăç пур.

Пурăнăç апат циклĕпе те çыхăннă. Кашни чĕрĕ организм тепринпе çыхăннă. Калăпăр, ӳсен-тăрансем (продуценты) выльăхчĕрлĕхшĕн (редуценты) апат пулса тăраççĕ пулсан, выльăх каяшĕ вара сапрофагсемшĕн апат. Вĕсем пĕтĕм органикăна ӳсен-тăрансене тавăрса параççĕ. Çапла çаврăну хăйне майлă экологи циклне йĕркелет.

Çут çанталăкра пур япала та çавраçуллă. Çавăнпа та эпир çавралăх принципĕ пирки калаçма пултаратпăр. Ку принцип обществăна та йĕркелесе пырать. Тĕслĕхрен, диктатура хыççăн революци килет, революци хыççăн анархи, анархи хыççăн демократи. Демократи хыççăн каллех диктатура. Çавралăх саккунĕ пур

çĕрте те ĕçлет. Ахальтен мар халăхра «ырă усалпа çаврăнса килет», теççĕ. Асăрхăр, çавра принципĕ хирĕçтăруллă япаласене кăна йĕркелет.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пурăнăç вăл хăй пĕр кустăрма. Кулленхи пурăнăçпа пурăнакан çынран ыйтса пăхсан, тӳрех, пурăнăç вăл кустăрма тет. Чăн та, унăн иртен пуçласа каçчен çаврăнкалама тивет. Пĕр ĕç хыççăн тепĕри. Ĕçĕн вĕçĕ-хĕрри çук. Кунран кун çапла пĕр хурмаллă ĕç, япала. Апатне пĕçерес, çиес, ĕçлес пулать. «Ĕçле-ĕçле çи», тет халăх. Çакă çавра пулать те пурăнăçăн тĕп шăнăрĕ, паттернĕ. Ахаль чухне те ăçта каяс-тăвас пулсан, «чипер çаврăнса кил», теççĕ. Кирек мĕнле ĕç те вĕçлĕ пулмалла, унсăрăн тепĕр ĕç пуçлаймастăн. «Ĕçе вĕçлес тесен виçĕ пус та пулин тӳлемелле», тет чăваш. Тĕнче, пурăнăç тата çын çаврăнăçулăхне халăх тахçанах асăрханă. Çавăнпа та пур япалапа пулăма та, пуçламăшĕпе вĕçне сыпăнтарса пырса, асăрханулăн кустарать. Çавăнта палăрать халăх ăслăхĕ[1]. Халăх ăслăхĕ пирки шухăшлар-ха.

Хальхи вăхăт пирки шухăшласа кайсассăн, йĕри-тавра тăвăл хуçаланнă пек туйăнать. Чăвашра вара лăпкă, тăнăç. Халăх ĕçе кӳлĕннĕ. Чăваш тĕнчипех ĕçлесе парать. Пурăнăç çапла çаврăнса килчĕ пулĕ. Çавăрăнса килчĕ çав. Тĕнче вăл çавра. Ăçталла кайсан та çав вырăнах каялла çаврăнса çитетĕн. Апла, чăваш пурнăçĕ те çав саккунах пăхăнать пуль. Анчах çав саккунăн вăрттăнлăхĕ те пур вĕт-ха. Унăн хăйĕн йĕрки мĕнлескерли-ши. Çав йĕркене тĕслĕхсем çине таянса шырар мар-и.

Çынсем юлашки вăхăтра питĕ çивĕчленсе кайрĕç. Тĕнче касса çӳреççĕ. Çын çапла тума пултарнинчен те мар, тĕнчерен тĕлĕнмелле. Ăçтан килчĕ-ха çакă, темелле. Тупсăмĕ те пур вĕт-ха унăн. Тупсăмĕ çынрах. Çын çынран хăрама пăрахрĕ. Лайăх çынсем нумайланчĕç. Çакă пытарăнчăк ăнлава ăша тӳрех илме те çук пулĕ. Анчах та ку тĕрĕсех. Каларăмăр-иç, кампа тĕл пулатăн, çавăнпа каятăн тесе.

Пирĕн шутпа, чăваш шухăшлавĕ-туйăмĕпе шутлавĕ темле идея патне çитнĕ. Вăл идея пурăнăçпа халăх сăмахлăхĕ çине таян-

---

[1] «Ăслăх» тени «мудрость» ăнлавпа пĕр килет.

са аталанать пек. Халăх хăй идейине тахçанах çырнă. Вуласа ил те – пурăн, çыр. Вăл ваттисем каланинче, каларăшĕсенче. Мĕн каланă пулĕ тетĕр унта. Унта пĕр чаплă шухăш пур, халăх хăй асаплă пурăнăçĕнче çуратнă шухăш. Кирек мĕнле ĕçе те майлаштарма пĕлмелле, çураçуллă тумалла. **Кирек мĕнле ĕçĕн те хăйĕн çаври пур. Çавă çураçуллă çаврана пăхăнса тытса пырсан, пурăнăç ăнать.** Чăн та, халĕ те çапла мар-и вара. Пурăнăç халь пуринчен ытла çаврăнăçуллă пулма ыйтать. Ĕлĕкхи чăваш та чылай вăр-вар пулнă пулас. Ăçта каяс-тăвас пулсан, ачине лайăх çаврăнса çитме ырă суннă, тăванпа çураçуллă пурăнмалла тесех тăнă. Çавă пирĕн юна кĕнĕ пулас, çавăнпа пирĕн тăрăхра тăнăç пурăнăç хуçаланать.

Мĕн калани вăл, тен, талккăшĕпе те мар пуль, анчах, çав татуллă пурнăç тени, çын тавра чăнласах хуçаланать. Çын пурăнăçа хăй тĕллĕн çеç йĕркелеме пултарĕ-и вара теме пулать. Пулать иккен. **Чăваш çынни те хăй ĕçне уçма пултарчĕ. Çавă ĕç пурăнăç центрĕ пулса тăчĕ. Çав центр тавра çаврăнать çураçуллă пурăнăç. Халĕ тин ĕç çаври витĕр çĕнĕ халăх çирĕпленсе аталанса тухассăн туйăнать.** Ĕç малалла пырать. Пур ĕç те, тĕлĕнмелле, пĕр пĕтĕмĕшле пăхсан, чăваш пурăнăçĕпе, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă. Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха, мĕнпур тĕнче çынни чăваш пурăнăçĕпе кăсăкланать, ăна тĕслĕх шайне лартать. Кун пекки халиччен пулманччĕ-ха. Çавăнпа тӳрех кашни чăваш ачине чĕнсе калас килет. Кам та кам хамăрăн пурăнăç çинчен шухăшлать, хăйне валли пĕр ĕç суйласа илетех. Вăл ĕç çавралăх идеи çинче тытăнса тăрас пек туйăнать. Чуна мĕн ыраттарать, çавă çавăрттарать мар-и пире. Тăнăç та çураçуллă пурăнăç тупсăмĕ тепĕр çăлкуçран та тапса тăрать. Пирăн тĕнчере пултаруллă та çаврăнăçуллă çынсем таçанах пулнă. Аса илер-ха хамăрăн вĕрентекенĕмĕре, Иван Яковлева. Вăл мар-и-ха вара çак тăнăç пурнăç никĕсне хываканĕ. Пирĕн патриархăмăр уçнă шкулсенче тĕрлĕ халăх ачисем пĕрле вĕренсе ĕçлесе пурăннă. Вĕсем халăх йăли-йĕрки, сăмахлăхĕ çине таянса ӳснĕ. Халăхран асли çук. Халăх вара, каларăмăр, çураçуллă çавра тĕнче туса хума вĕрентет. Çав çавра тĕнче халĕ те çаврăнать, Яковлев шкулĕ пиртен çын тăвать.

Çав шухăшпах пулĕ эпир хамăр та, Иван Яковлев пурăнăçĕпе хавхаланса, хамăрăн тăван халăх шухăшлавĕ, пурăнăçĕ, чăваш тĕнчи çинчен пуçа çавăратпăр. Тăван çĕр-шывран хакли мĕн пултăр. Анчах эпир ăна юратса тăнă çĕртех пăрахма та ĕлкĕрнĕ иккен. Мĕнле куçпа пăхса, мĕнле ĕçсем тăватпăр-ха эпир çак Çĕр çинче пурăннă чухне. Чылай хурланма тивĕ кун пек ыйтсан. Ара, хăвăрах пĕлетĕр, авалтан чи чаплă çĕр ĕç сынни хăй çĕрне пăрахса пырать. Мĕн тумалла тет. **Çĕрпе çураçуллă пурăнмалла, урăх ним те мар. Çĕр вăл хăй пĕр çавра тĕнче. Çавă çавра тĕнче ăшĕнче пурăнма вĕренмелле те пирĕн. Пирĕн çавă çул. Çулăн унăн хăйĕн саккунĕ. Хăйĕн çаври.** Тĕслĕхрен, ялта выльăх тытмасан, лайăх тыр-пул туса илетĕп тесе ан та шутла. Ку хăй пĕр çавра. Уя мĕн чухлĕ тислăк кăларатăн, çавăн чулĕ çимĕç туса илетĕн. Кун пек çаврасем çĕр çинче питĕ нумай. Хальлĕхе пурне пĕлсе те çитерейместпĕр. Çĕртен кăткăс япала ку тĕнчере çук. Чи кирли вара, ун çине çураçуллă куçпа пăхма пĕлни. Вара çĕр хăй те çураçнă хĕр пекех пулĕ.

Кăна мĕншĕн калатпăр. Мĕншĕн тесен кашни çын хăй те çĕр пекех. Вăл çакă тĕнчене хăй тавра çураçуллăн çавăрттарать. Никама та усал тумасть чăваш çынни, кашнине пулăшма тăрăшать. Çавăнпа унăн ĕçĕ ăнăçлă килсе тухать те. Мĕн-ма тесен халăхăн тĕп саккунĕ – çураçулăх. Çакă шухăш чăваш ăс-тăнне ачаранах кĕрсе çирĕпленсе ларнă-тăр. Сăмах май каласан, пирĕн ыттисенчен вĕренмелли питĕ нумай. Эпир çураçтаруллă-тăк, апла, кӳршĕсем пек тутарла кăна мар, чăвашла та пит лайăх пĕлмелле. Пирĕн вĕт, мĕн калăн, хăш-пĕр вĕреннĕ чăваш чăвашла та пĕлмест. Тутарсем вара пурте тенĕ пекех чăвашла питĕ лайăх чухлаççĕ. Пирĕн вĕсенчен вĕренмелле мар-ши. Сăмахран, мĕн-ма пирĕн Иван Яковлев тапхăрĕнчи пекех Атăл тăрăхĕнчи пур халăх чĕлхине те пĕлмелле мар-ши. Тутарсен тĕслĕхĕ пире тутарла та, марилле те, мăкшăлла та вĕренме хистет. Вырăсла кăна вĕренни халĕ çителĕксĕр. Çураçуллă çавра тĕнче пурне те пĕр туслă йыша çыхать, пĕр-пĕрин ĕçĕ-хĕлне, шухăш-туйăмне, чĕлхе–çаварне пĕлме ыйтать.

Пĕр пĕтĕмлетсен, çакă идея, çураçуллă çавра тĕнче тени, чăваш идеи кăна мар, пĕтĕм тĕнче идейи пулма тивĕçлĕ. Хăвăрах шухăшласа илĕр-ха, хальхи вăхăтри экологи кризисĕ те, экспертсем каланă тăрăх, çав çураçуллă çавралăх пĕтсе çитнипе килсе тухнă. Каламасăрах паллă, çакă тĕнче те, тĕнчере мĕн пурри те пĕр вĕçĕмсĕр çаврăнса тăмалла. Çавă шухăшпа пурăнать халăх. Пурăнăç вăл кустăрма. Тĕлĕнмелле вĕт. Мĕн кăна курман пулĕ пирĕн халăх, çапах та самана ăна хăйĕн йывăрăшĕпе чылай пусарнă пулин те, вăл халĕ те питĕ çаврăнăçуллăн курăнать. Ĕçлет, пурăнать, пурне те ырă тума тăрăшать. Ара, пĕтĕм тĕнчене ĕçлесе пани вара вăл мĕне урăха пĕлтертĕр. Тĕлĕнмелле, пурне те ĕлкĕрет. Чăнласах та вăл хăй пĕр çураçуллă çавра тĕнче.

Тĕслĕхсемпе çирĕплетнĕ хыççăн, çавра ăнлавпа çыхăннă пулăм çинчен Субетто сăмахĕсемпе çырса кăтартсан аван. «Цикл, тет вăл, çын ĕмĕчĕпе тĕллевĕ патне мĕн чухлĕ çитнине палăртакан çавра процесс». Цикл ăнлава тĕллев, цикл пайĕсем (стадийĕсем), продукци, вăхăт кĕреççĕ. Калăпăр, ĕç циклне, çаврине ĕнтĕ, тĕпчев этапне, конструктор шутланине, технологине, япалине (продукцине) хăйне тунине, унпа усă курнине тата ăна пĕтернине (утилизаци) кĕртме пулать. Енчен çак çавра процесăн пĕр пайне кăна тат, цикл саланса каять. Сăмахран, япалапа усă курнă хыççăн эпир ăна тĕппипе пĕтерейместпĕр пулсан, утилизаци çук, çав япала юлашкисем, каяшĕсем пире хамăра йăлт пĕтерме пултараççĕ.

Çакна экологи кризисĕ теççĕ. Кризис ан пултăр тесен, апла, çавра шăнăрне, паттерна тытса пымалла. Пурăнăç тытăмĕпе юхăмне паттерн, йĕркелӳ принципĕ тытса пырать.

## 3.2. ПУРĂНĂÇ ЮХĂМĔ

Ăçталла юхать пурăнăç юхăмĕ. Вилĕмелле е пурăнăçалла. Малтанрах вилĕм вăл хăй те çĕнĕ пурăнăç пуçламалли мел кăна тесе каларăмăр пулсан, паллă, кирек хăçан та ку юхăм пурăнăçалла юхать. Юхăм тени пирĕн текстра «процесс» ăнлавпа пĕр килет. «Пĕр шыв юххине икĕ хут кĕреймĕн». тенĕ Гераклит. Пу-

рăнăç юххине те çапла икĕ хутчен кĕме май çук. Юхăм вăхăтпа çыхăннă. Иртнĕ вăхăта каялла тавăраймăн. Çавна пĕлтерет ку афоризм.

Процесс паттернпа структурăна пĕрлештерет. Урăхла каласан, ăс-тăнпа пурăнăç хушшинче вĕсене пĕрлештерекен процесс, юхăм пур. Унсăрăн вĕсем нихăçан та палăрас çук. Çынпа тĕнче хушшинчи çав процеса ĕçлев[1] теме пулать. Çын тĕнчене ĕçлев урлă кăна кĕме пултарать. Кирек мĕнле ĕçлев пултăр вăл. Пурăнăç юхăмĕ çинчен калаçас пулсан, апла, ĕçлев мĕнне пĕлмелле. Ĕçлев вăл, пирĕн шутпа, тĕнчене улăштаракан туйăмлă тата предметлă тăву, вăйăм. Çын кирек мĕнле предмета туйса-сиссе тăрать. Туйăмсăр пĕр ĕç те пулмасть. Предмет тени кунта çын аллине лекнĕ пĕр-пĕр япалана пĕлтерет. Япали вăл ӳтлĕ-кĕлеткеллĕ те, ӳтсĕрри те пулма пултарать. Çын вăл япала-предметран мĕн те пулин тăвасшăн. Çавăнпа та чăваш «япалана тытса пăхмасăр ĕненмест». Çын хăйĕн туйăм-сисĕмне ĕненет, вĕсем ăна улталамаççĕ.

Улăштарни ĕнтĕ кунта пĕр япаларан тепĕр япала туса хунине пĕлтерет. Калăпăр, малтан вăл тăм кăна пулнă, унпа ĕçленĕ хыççăн кăкшăм пулса тăнă. Ку ĕнтĕ вăл çын аллинче пулса курнă япала. Вăл халь тин улшăннă. Кăна предмета туса хуни (опредмечивание) теççĕ. Ку тăвăмра çын пахалĕхĕсем предмета, объекта куçаççĕ. Пĕтĕм тĕнче те çавах, майĕпен ĕçлевлĕн улшăнса пырать. Паллă, çын çавă юхăмра хăй те улшăнать. Ăна предметран тухни (распредмечивание) теççĕ. Ку чухне вара япала пахалăхĕ хăй çынна куçать. Сăмахран, машинăпа ĕçлекен çын калама çук, тимĕр пек çирĕпленсе каять. Машина çирĕплĕхĕ ăна куçать. Вăл машина-çын пулса тăрать.

Калас пулать, ĕçлев яланах пĕлевпе[2] çыхăннă. Пĕлӳсĕр ĕç çук. Ĕç пĕлӳ парать. Ĕçлев яланах пĕлевлĕ. Кирек мĕнле ĕç тытса ту, çав вăхăтра пĕр вĕçĕмсĕр ыйту сиксе тухать. Ĕçлекен çын çавă ыйтусене татса парать, тепĕр чухне йăнăшать те. Йăнăшмасăр нимĕн те пулмасть. Пĕлев çулĕ йăнăшлă, тумхахлă çул. Кай-

[1] «Ĕçлев» тени «деятельность» ăнлавпа пĕр килет.
[2] «Пĕлев» тени «познание» ăнлавпа пĕр килет.

ран кăна ку çаплаччĕ-çке тесе калатпăр. Йăнăшу пирки çапла каласа хăварас пулать. Юрать йăнăшсем пур. Вĕсем пулман пулсан эпир нимле пĕлӳ те пухайман пулăттăмăр. Çавăнпа та йăнăшран хăраса тăмалла мар. Вăл аталану вăйĕ.

Пурăнăç юхăмĕн, процесăн, ĕçлевĕн хăйĕн тытăмĕ (структури) пур. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан вăл улшăнмасть. Паллă, ĕç тăвас тесен, чăн малтан, ĕçлекен çын, ĕçлевçĕ, ĕç субъекчĕ кирлĕ. Унтан ĕç объекчĕ, предмет. Вĕсене пĕр пĕрлĕхе процесс, ĕçлев çыхать. Ĕç тума ĕç хатĕрĕ, меслечĕ кирлĕ. Ĕçĕн хăйĕн тĕллевĕ-курăнăвĕ пур. Ĕçлесен-ĕçлесен мĕнле те пулин результат, ĕç вĕçĕ палăрать. Кайран ăна хакламалла пулать. Енчен те хаклавĕ карта лармарĕ-тĕк, е тĕлленипе пĕр килмерĕ-тĕк, ĕçе çĕнĕрен пуçлаççĕ. Ку цикл вара, ĕç вĕçĕ çынна хăйне мĕн тивĕçтерриччен пырать.

Ĕçлев питĕ курăнуллă сăнарлă процесс. Ĕçленĕ чухне çын хăй мĕн тунине тата тумаллине курса тăрать. Унсăрăн ĕç ăнмасть. Енчен те мĕн тумаллине малтанрах ăсра çавăркаласа пăхмасан, тӳрех калама пулать, ĕç вĕçĕ тĕлленĕ пекех килсе тухмасть.

Кунсăр пуçне вăйăм хыççăнхине те шута илмелле. Çын хăй мĕн тунă хыççăн мĕн пулассине пĕлмест. Пĕр япала тăвас тенĕ çĕртех тепĕр япала сиксе тухать. Ку вăл çынран хăйĕнчен те килмест. Тĕнче çапла. Ăнсăртлăх, каларăмăр, тĕнче тымарĕнче. Вăл ăнтлă пулăм. Кирек мĕнле нумай пĕлсен те тĕнче хăй вăйне ăнсăртлăх урлă палăртать. Çын çав уйрăмлăх урлă сиксе каçаймасть. Çавăнпа та тăву хыççăн хăру[1] пуласса кĕтсех тăр. Паллах, ĕçе пĕлсе, курса тăрса тумалла. Анчах та нумай чух ун пек килсе тухмасть. Çапах та пĕр пĕтĕмĕшле ку пĕлӳ-куру-тăву çыхăну пурнăçлансах пырать. Унсăрăн эпир пĕр утăм та тăвайман пулăттăмăр. Тĕслĕхрен, çын ура ĕçта пусмаллине пĕлсе курса утать. Ку хăй тĕллĕнех (автоматизм) пулса пырать. Унсăрăн, мĕнле калаççĕ-ха, «хĕрĕх уралла хурт хăш урипе утмаллине шутласа утайми пулса ларнă тет».

Пурăнăç юхăмĕ пирки шутласа кайсан тата ĕç еккине те шута илмелле пулĕ. Ĕçĕн хăйĕн майĕ, утти, кăмăлĕ, юхăмĕ пур. Çав юхăма хирĕç кайсан эсир хăть кирек мĕнле ăслă пулăр, ан-

---

[1] «Хăру» тени «последствие» ăнлавпа пĕр килет.

чах та ĕç текех малалла каяймĕ. Ĕç еккипе пĕр пулсан чун юрласа ярать. Чĕре савăклă. Кăмăл тулли. Эсĕ телейлĕ. Акă мĕн вăл ĕçлевлĕ пурăнăç юхăмĕ. Кăмăла шута илмесĕр ĕçлекен çын хур кăна курать. Пурăнăç вăл телей кӳмелли пулăм терĕмĕр пулсан, апла, ĕçлев телей меслечĕ. Ĕçлемесĕр телей курма çук. Телей, çапла шутласан, хăйех юхса кĕмелле пек пирĕн чуна. Анчах ку пурăнăç саккунĕсене пĕлсе тăрсан кăна пуль çапла пулма пултарать. Эпир вара вăл саккунсене пĕлсе пĕтерейместпĕр. Кунта эпир Моцарт мĕнле ĕçленине илсе кăтартасшăн. Вара, тен, ăнланмалларах пулĕ. Хăй каланă тăрăх, вăл нимле музыка та шутласа кăларман. Музыка хăй тĕллĕнех килнĕ унăн пуçне, çырса кăна ĕлкĕр. Турă хăй парать тенĕ пек. Пурăнăç юхăмĕ, ĕç еккийĕ, тăву вăйĕ калама çук хăватлă, çынна вăл хăйех таçта çити илсе кайма пултарать, турă таранах.

Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, палăртнă кĕвĕллĕ юхăма пĕрмаях тăнласа итлесе тăрас пулать. Енчен те вăл сирĕн ăшăрта янăрама тытăнчĕ-тĕк, эсир тĕрĕс çул çинче. Ун пек чухне ĕç, пĕлӳ, телей хăйсем тĕллĕнех тенĕ пек килсе кĕреççĕ.

## 3.3. ТĔНЧЕ ТЫТĂМĔ

Тĕнчен хăйĕн хурми (паттернĕ), юхăмĕ (процесĕ) пур пулсассăн, тытăмĕ (структури) те пур ĕнтĕ. Виçĕ пулăм пĕр уйăрăлми çыхăннă, пĕр пĕрлĕх пулса тăраççĕ. Тытăм вăл япаласен пĕр улшăнми çыхăнăвĕ. Калăпăр, машинăн хăйĕн тытăмĕ пур. Кĕскен каласан вăл шасси, урапасем, кардан, двигатель тата руль. Çак элементсен пуххи (вĕсем пĕр-пĕринпе уйăрăлми çыхăннă) пулать те ĕнтĕ пĕр пĕрлĕхлĕ система, машина. Система-машинăн пĕр пайĕ-элеменчĕ кăна тухса ӳктĕр, машина çухалать. Пĕр-пĕр япали те хăй тĕллĕн ниме те пĕлтермест, тимĕр татки кăна. Тĕнче те хăйне майлă пĕр машина, ĕлĕкрех ăна сехетпе танлаштарнă, унăн хăйĕн тытăмĕ пур. Мĕншĕн тесен вăл хăй пĕр пĕрлĕх, система.

Синергетика меслечĕпе усă курса эпир тĕнчене автопоэзлă система пек курма пултаратпăр. Кашни элемент тепĕрне тума пу-

лăшать, пĕри теприне çыхăнтарать. Çапла тĕнче хăй халлĕн йĕркеленсе аталанса пырать. Ку идея тĕрĕсех пулсан, пĕтĕм тĕнче çаврасен çыхăнăвĕсенчен тытăнса тăмалла. Çавра тĕнче пирки эпир калаçнăччĕ.

Тепĕр енчен пăхсан, тĕнче вăл хутшăну, процесс. Пур япала та пĕр-пĕринпе çыхăнать. Будстрап теорипе тĕнче сеть пек карăнать. Тĕлĕнмелле те, космос та, енчен те ун çине аякран пăхсассăн, пыл хурчĕсен карасĕ пек, сеть пек курăнать. Ку икĕ теори пĕр-пĕрне хирĕçлемеççĕ. Чăн та, ункăсене пĕр çĕре пуçтарсан куç умне шăтăкла килсе тухать. Кам, мĕнле çав шăтăклана çыхать, паллă мар. Пирĕн шутпа, вăл хăй тĕллĕнех çут çанталăк саккунĕсемпе килĕшӳллĕн килсе тухать.

Обществăра та çавах. Çын тĕнчине пăхсан та эпир пĕр вĕçĕмсĕр хутшăну куратпăр. Хутшăнăвĕ япала урлă пулса пырать, терĕмĕр. Енчен те эсир халĕ кашни çынна куç умне тăратса пăхма май тупатăр пулсан, тӳрех куратăр: кашни çын шăтăкла çыххинче, тĕввинче хутшăнусене йĕркелесе тăрать. Çын тĕнчи те сеть (шăтăкла) пек. Çавăнпа та çын ытти çыхăсем урлă пĕтĕм тĕнчепе çыхăнма пултарать. Халь тин тĕнчене кун пек курса тăрсан, кашни пуринпе, пурте пĕр-пĕринпе çыхăннă тенинче ним тĕлĕнмелли те çук. Эсир пĕр утăм çеç тунă пултăр, сирĕн хусканăвăр, нерв системинчи пек, шăтăкла тăрăх пур еннелле те каять. Паллă, унăн чикки - çын пурăнакан тĕнче. Унтан ытла кайсан вăл пирĕншĕн ниме те пĕлтермест. Анчах çав утăмсене пула, хамăр хушăрта калама çук пысăк хусканусем пулса иртме пултараççĕ. Эпир каланă сăмах мĕнле ахрăмпа çавăрăнса килессине те пĕлместпĕр вĕт. Кирек мĕнле тăву хыççăн та хирĕçле тăву çуралать. Çакă пулăмсем питĕ кĕтретлĕ курăнаççĕ. Çапах та, енчен те эпир куç умĕнче тĕнчен шăтăкла тытăмне курса тăрсан, нимле вăрттăнлăх та кунта çук теме пултаратпăр. Тĕнче тытăмĕ çапла: кашни япала тепĕринпе çыхăннă, сеть.

Ку, ăнтлă курăм. Анчах çын тени вăл объект кăна мар, субъект та. Унăн хăйĕн туйăмĕ-сисĕмĕ, кăмăлĕ, ăсĕ, вăйĕ, тĕллевĕ. Çын тĕнчи, апла, хăйĕнчен те килет. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, эпир пурте çын аллинче. Пурăнăçăн хăйĕн иерархийĕ пур. Кашни çын

хăйĕн ирĕкне палăртасшăн. Влаç та хăй мĕн тăвас тенине тăвать. Çавăнпа Ницше тĕнчере пăхăнтарулăх (воля к власти) пуç пулса тăрать тенĕ. Кашни тепĕрне пăхăнтарасшăн. Ку тĕнчере пăхăнтарни кăна мар, пăхăнни те пур. «Тайнă пуçа хĕç касмасть», теççĕ. Малтанрах каларăмăр: пăхăнмасăр пăхăнтарма çук.

Пысăккăн пăхсан тĕнче сеть пек курăнать, терĕмĕр, енчен те кашни ячейкине тĕпчеме тытăнсан вара, сеть хăйне майлă иерархи пулни сиксе тухать. Пĕр-пĕринпе пĕр танлă, пĕр шайлă та майлă çеç мар иккен тĕнче. Вăл чӳхенет, хумланать, пĕри тепĕрне хăй айне тăвать, пуç пулса тăрать, пăхăнтарать. Ăнтлăн пăхсан, паллă, пуç пулса тăракансем шăтăкла çыххисенче (тĕввисенче). Вĕсен аллинче мĕнпур çыхăнтару мелĕсем. Вĕсем «тилхеписене» алăран вĕçертмеççĕ. Апла, калама пулать, пуçлăхсем тавар çаврăнăшне тĕрĕслесе йĕркелесе тăракансем. Пăхăннисем çав тавар çавăрăнăшне кĕрсе кайнă. Ун пек çынсем пурте «тавар», япала шайĕнче. Çын хăй пĕр тĕллев тени (Кант) кунта, иерархире, пăрахăçланать. Çын кун пек пăхăнтаруллă тĕнчере ĕç хатĕрĕ кăна.

Тĕнче тытăмĕн тата пĕчĕкрех ячейки те пур. Вăл çемье. Кунта пĕр-пĕрне пăхăнтарни пур пулсан та, çапах та ратне туйăмĕ хуçаланать. Ку структурăра пурăнăç вăйăмĕ хăй пуç пулса тăрать (Шопенгауэр). Çемьере пурăнăç хăйне малалла тăсать. Пурăнăçăн хăйĕн ирĕкĕ (власть к жизни) пур. Мĕн каламалли пултăр, кашни чĕрĕ чун пурăнасшăн. Дарвин калашле, кашни организм хăйне геометри прогрессипе йышлатасшăн. Çемье тытăмĕ çавăнпа та урăхларах. Кунта пурте пур. Пĕри (асли) пуç пулса тăни те, пĕри теприне пулăшни те, хăй хальлĕн йĕркеленни те. Ахальтен мар Энгельс çемьене патшалăх ячейкки тенĕ. Обществăри пĕчĕк группăсем те çемье майлăрах чăмăртанаççĕ. Унта та çураçтаруллă тĕнче. Япони экономики йăлтах çемье идейийисем çинче никĕсленет иккен. Çавăнпа та ку тытăма экономика шайĕнче те пăхса тухма пулать. Экономика тĕнчен çирĕп тытăмĕ, вăл тавар тата финанс (укçа) çавăрăнăшĕпе çыхăннă.

Халĕ эпир индустри хыççăнхи обществăна кĕрсе пыратпăр. Ăна пулăшу обществи теме те пулать. Урăхла каласан, пурте пĕрне пĕри пулăшса пырать. Сана мĕн çитмест, çавăнтах пырса

параççĕ. Ялта тата çемьере кун пек çыхăну халĕ те упранса юлнă пирки эпир каланăччĕ. Пулăшнăшăн никам та укçа ыйтмасть. Пулăшупа тавăрса парать. Ку ĕнтĕ чăнласах укçасăр общество пулать. Унăн тытăмĕ вара пулăшу пулать.

Кун пекки пулма пултараймасть, тейĕр. Пулать кăна мар, пур та. Кун чухне вара тин пурте пĕр-пĕрне пăхăнĕç, пурте пĕр-пĕрне пулăшĕç. Кашнин хурлăхĕ е савăнăçĕ пĕтĕм халăха пырса çапĕ. Ăçтан ун пек пулĕ ĕнтĕ тейĕр каллех. Пулать, енчен те пурте пĕр-пĕрин çинчен пĕлме тытăнаççĕ пулсан, пулать. Ку вăл информаци обществи. Кунта пурте уçă, никам та пĕр-пĕрне улталамасть, мĕн пулнине пĕлтерсех тăрать. Çавăн патнелле утмалла мар-и-ха пирĕн. Çитет ĕнтĕ пĕр-пĕринчен пытарăнса пурăнма. Халĕ вĕт мĕн, халĕ кашни çын хăй пĕр атом, монада, хăй талай, хăй патша. Куçа-куçăн пăхсан та палласшăн мар. Кун пек юрамасть. Кун пек чухне çын пытанса та пытарăнса манăçа тухса пырать. Сана та, эсĕ те никама та ним тума та кирлĕ мар пек килсе тухать. Анчах та çын уçă кăмăллă, таса чĕрĕ чун. Вăл ыттисемпе хутшăнасăн, çав хутшăнура хăйне хăй тупасшăн. Укçа тени вара урăхла тума хистет. Укçа парсан кăна туса паратăп тет. Ку рынок тытăмĕ. Пирĕн шутпа, ку тĕнче çынна кăна мар, тĕнчене хăйне те пĕтерет.

Тĕнче тытăмĕ, куртăмăр, тĕрлĕрен. Мĕншĕн тесен тĕнче тĕрлĕ сийлĕ, тĕрлĕ курăнуллă. Ăна курса хакласа тăрасси çын интересĕпе çыхăннă. Каларăмăр, укçа витĕр пăхсан, рынок курăнать. Пулăшу урлă пăхсан, çемье е ял курăнать. Пуçсем çийĕн таптаса кайсан, иерархи сиксе тухать, хăвна та пуçран çапать. Пĕр танлă, пулăшуллă, çураçтаруллă тĕнче вара ĕмĕтри пек утопи. Ун пек нихăçан та пулмĕ, тейĕр. Анчах та халь тин ĕнтĕ тĕнчене укçапа, япалапа, тупрапа виçме пăрахса пыраççĕ. Халь тин çын пахалăхĕ, кăмăлĕ, ăсĕ, чунĕ мала тухса пыраççĕ. Малашне мĕнле тĕнче тытăмĕ çĕнтерĕ тесе ыйтсан, пирĕн шутпа, çынлăх тĕнчи мала тухса пырать. Япала мар, укçа та мар, пире çын кирлĕ. Унăн аталанăвĕ, потенциалĕ, çут çанталăкпа пĕр килекен саккунĕ, çав вăхăтрах никама пăхăнманлăхĕ, ирĕклĕхĕ, пĕрлĕхлĕ ĕçĕ пуç пулса тăрсан кăна пурăнăç малалла кайĕ. Халĕ вĕт пурăнăçа

пĕтерсе пыраççĕ. Ку тĕрĕслĕх куç умĕнче. Тĕнче тытăмне виçес тесен, пурăнăç мĕнле шайрине пăхăр. Пурăнăç, чăн критерий. Халĕ халăх йышĕ чакса пырать, çын чирлет, хăйне хăй шанмасть, никама та ĕненмест. Çакна рынок туса пырать. Çакăн пекле пĕтерсе пырсан кăна ку тĕнчере çын пуç пулса тăма пултарать. Анчах та кун пек çын шучĕпе, пурăнăç шучĕпе пуç пулни пире кирлех-и-ха. Ку питĕ иккĕленӳллĕ. Çавăнпа та, **пирĕн шутпа, пирĕн пĕтĕм вăя пухса, пуласлăха ĕненсе тăрса, пĕр-пĕрне пулăшакан общество туса хума тăрăшмалла.** Унăн çути кăшт курăна пуçланă терĕмĕр. Халĕ тин пурăнăçра информаци пуç пулса тăнă чухне ăс пухма, ирĕкленме, çут çанталăка пăхăнса çĕнтерсе пыма никам та чармасть. Хамăр айванрах пулни, тен, çавă кăна. Çын часах, акă, хăй вăйне туйса илĕ те пачах урăх тĕнче туса хурĕ. Унта урăхла пурăнăç хуçаланĕ. Унта пурте пĕр-пĕрне хисеплесе те ирĕкленсе пурăнĕç. Пĕрин ирĕкĕ тепĕрин ирĕкне хĕсĕрлемĕ. Ахальтен мар чăваш «тĕнче хĕсĕр мар», тет. Çавăн патне çитсе тухнă чухне пире, паллă, çынран юлма намăс. Юлма мар, пирĕн çын пахалăхĕпе мала тухас пулать. Каларăмăр-иç, **чăваш хăйĕн таравратлăхĕпе, кăмăлĕпе, пулăшаслăхĕпе такамран та ирттерет. Унăн тахçанах ĕнтĕ хăй тытăмлă тĕнче пур. Ăна халь тин пĕтĕм тĕнче тăрăх сармалла, çавă кăна.** Тен, сарать те вăл, пĕлместпĕр. Мĕне пĕлтерет, калăпăр, чăваш пĕтĕм тĕнчене ĕçлесе пани. Çăкăршăн çеç вĕт ĕçлет. Нимле услам та курмасть. Тен, вăл çак пĕтсе пыракан тĕнчене пулăшса хăтарса хăварасшăн. Ăна вăл хăй те ăнланмасть. Чунĕ кăна чухлать. Каять те ĕçлесе парать. Укçа парсан та илмест. Ĕлĕк çапла пулнă тет. Ибн Фадлан çырса хăварнă тăрăх пăлхар сутуçă тавар хакне, илекен каланă пек хунă. Мĕн чухлĕ хак хуратăн, çав хакпа илетĕн. Çавă архетип халăхра халĕ те хуçаланать. Çавăнпа та пиртен пуясси пулмасть. Пуйма шутласан, халăх хăй калать, пĕтетпĕр. Ку укçа тытăмлă тĕнчерен урăхла майпа, чун шайĕнче кăмăл вăйĕпе, сиксе тухса çăлăнас пулать. Тĕнче тытăмĕ ун пек тума халĕ хăйех майсем туса парать. Çавăн пек тусан кăна тĕнче тытăмĕ турăланать. Шуйттан укçи вара тимĕр татки кăна пулса юлать ура айне. Çапла пултăр тесен, тĕнче тытăмĕ пирки ятарласа пĕтĕм чун-чĕререн шутлас пулать.

Ыйтусем

1. Мĕн вăл паттерн.
2. Çавра тени пур пулăмпа та çыхăннă-и.
3. Тĕнче тытăмĕ мĕнрен тăрать.
4. Пурнăç юхăмĕ майлă е хирĕç кайсан лайăх.
5. Пĕр пĕрне пулăшакан общество туса хума пулать-и.

# 4. ТĔНЧЕПЕ ПĔР КĔВĔЛЛĔ ÇЫН

## 4.1. ТЕПРИ

Ялти ватă çынсенчен турă мĕн вăл тесе ыйтсассăн, «тĕнчене кĕвĕлесе тăракан пĕртен пĕр хăват» тенине илтетĕн. Ку Антика (Античность) вăхăтĕнчи авалхи грексен шухăшлавĕпе пĕр килет. Вĕсем те Логос (Йĕрке) пирки калаçнă. Паллах, кашни халăхăн хăйĕн Кивĕ тата Çĕнелнĕ тапхăрĕсем пур. Халĕ пирĕн Çĕнелӳ тапхăрĕ пырать. Эпир тĕнчери çĕнĕ технологисене алла илетпĕр. Çавă вăхăтрах авалхине те манмастпăр, ун чухнехи архетипсем юна кĕрсе ларнă, малашлăха илсе каякан пысăк вăй пулса тăраççĕ. Кĕвĕллĕх, йĕрке пирки калаçса каяс пулсан, чăн малтан, вĕсем кам е мĕн урлă пулса пыни пирки шухăшлас пулать. Хăй тĕллĕн вĕт нимĕн те килмест. Малтанрах эпир çын хутшăнăвĕсем çинчен шухăшларăмăр. Хирĕçтăруллă хутшăну тĕнче никĕсенче, терĕмĕр. Апла, кĕвĕлĕх те хутшăну урлă, хутшăнура палăрать пулĕ. Хутшăнун тĕп элеменчĕ вăл хăвна хальлĕхе шута илмесен, «Тепри» тени. Тепĕр çын урлă кăна эсĕ тĕнчене тата хăвна ăнланса илме пултаратăн. Кам-ши вара вăл çав Тепри. Вăл урăх çын ĕнтĕ, урăх субъект тата объект. Теприне е урăххине ăнланса илмесĕр... санăн хăвăн пурăнăçу та çирĕпленсе çитес çук, тет С.Л. Франк. Эпир тĕнчене субъект урлă кăна мар, объект урлă та ăнланса илме пултаратпăр. Сăмахран, кашни ĕç çынни тĕнчене ĕç хатĕрĕ е япали урлă ăнланать. Столяр сĕтел-пукан, çĕр çынни ӳсен-тăран, механик машина урлă ăнланать. Çапах та, чăн-чăн хутшăну вăл çынпа çын калаçнă, ĕçленĕ чух палăрать. Пурăнăç, каларăмăр, санпа çав «Тепри» хушшинче. Çавă хушăран тапса тухать те савăнăçпа хурлăх. Мĕнле хутшăнатăн, çапла пурăнатăн. Мĕнле йышăнать сана «Тепри».

Ху тата мĕнле кăмăлпа эсĕ ун патне пыратăн. Тĕрлĕрен ыйтусем пама пулать кунта. Чи кирлисем çаксем пулĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле

каласан, «Тепри» тени вăл пĕтĕм тĕнчепе танлашать. Апла, эпир ҫынпа тĕнче хушшинчи хутлăха тĕпчетпĕр. Паллах, кашни хутшăнăвăн конкретлăхĕ пур. Ҫын тĕнчене тӳрех калăпăшĕпех ярса илеймест вĕт, пĕр пайне кăна курать. Ҫын ытларах чухне ҫынпа тата пурăнăҫăн пĕр япали-пайĕпе хутшăнать. Тĕнчи те унăн пĕтĕм тĕнче мар, ҫын тĕнчи кăна вăл. Калăпăр, ҫĕр ҫыннин тĕнчи, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ял тавралăхĕ, рабочин завод е цех хутлăхĕ, хула ҫыннин хула урамĕсемпе хула ҫумĕ. Пĕтĕмлетсе вĕсене «Тепри» тейĕпĕр.

Теприн тĕлĕнмелле пахалăхсем пур. «Тепри» вăл сан тĕкĕрӳ пулать. Хăвна эсĕ ун ҫине пăхса куратăн. Ху мĕнле, вăл та ҫапла. Кунта темле мимезис. Хальхи социологсем каланă тăрăх хутшăну мелĕ «мим» текен пулăмпа ҫыхăннă. «Мим» тени вăл тепĕр ҫын пек пулма тăрăшни. Типизаци. Ҫавна пула ҫынсем пурте пĕр пеклерех пулса каяҫҫĕ, ун пек чухне вĕсене хутшăнма ҫăмăлтарах пек килсе тухать. Анчах, маларах аса илнĕччĕ, «ҫын хыҫҫăн каякан вакка сикет». Паллах, «мим» ытамне лекнĕ ҫын хăйне хăй ҫухатать. Хальхи вăхăтра пушшех те. Мĕншĕн тесен информаци хатĕрĕсĕм пĕр сăнар, пĕр тĕслĕх, пĕр правило кăтартса парса ҫынна ҫавсем хыҫҫăн кайма хистеҫҫĕ. Ҫын вара ирĕксĕрех пĕр-пĕр «артист» пек пулма хăтланса пăхать, хăйне ҫухатать. Ун пек пĕр майлă ҫынсем (одномерные люди) халĕ питĕ нумайланчĕҫ. Ҫав вăхăтрах ҫапла туни ҫын валли темле пĕр никĕс ҫуратать, «знаменатель» тупăнать. Ҫавна пулах вĕсем пĕр-пĕрне лайăхрах та хăвăртрах ăнланаҫҫĕ.

«Теприне» евĕрлесе пурăнни тĕнчере темле резонанс ҫуратать. Тĕнчере хăйне майлă хутшăну хутлăхĕсене, уйĕсене асăрхама пулать. Вĕсенче ҫын хăвăртрах аталанать. Урăх хутлăха лексен вара, кĕтсех тăр, вăл асапланать, хăйне хăй вырăнта мар пек туять. «Мим» ятлă евĕрлеве пула ĕнтĕ тĕнче пĕрпекленсе каять. «Тепри» тени кирлĕрен те кирлĕрех килсе тухать. Халĕ тин эсĕ унсăрăн пурăнаяс та ҫук. «Тепри», каларăмăр, хăйне кăна мар, хăвăра та урăхла тĕспе ҫутатса кăтартать. «Тепри» сăнарĕнче пĕтĕм тĕнче тĕкĕрленсе курăнса тăрать. Кунта темле вăрттăнлăх пурри сисĕнет. Мĕншĕн «Тепри» ҫапла пахалăхлă. Пирĕн шутпа,

ку вăрттăнлăх тăву, вăййăм меслечĕсемпе çыхăннă. Чи ансат хутшăну, калăпăр, эсир сĕтел хушшинче таянса ларатăр. Сĕтел авăнать, хирĕç тăрать, ыраттарать те чавсăра. Мĕнле пулăм ку. Ку Ньютонăн виççĕмĕш саккунĕ ĕçлени вĕт. Кашни тăвăм-вăййăма хирĕçле тăвăм-вăййăм пур. Питĕ ансат, çав вăхăтрах питĕ тарăн саккун. Вăл кирек хăш хурмаллă куçăмра та палăрать. Механикăра кăна мар, социаллă пурнăçра та палăрать ку саккун. Урăхларах каласан, çын çине мĕнле пăхатăн, вăл та сан çине çавăн пекех пăхать. Ку, социаллă пурăнăç еплерех куçса пынине палăртакан тĕп саккун. Çын тăвăмĕ те хирĕçтăруллă. Ахальтен мар пулĕ халăхра: «Çăкăр-тăвар хире хирĕç», «Алла ал çăвать», теççĕ. Ку вăрттăнлăхăн тупсăмĕ, апла, çӳлерех илсе кăтартнă саккунта. Тĕнче эсĕ хускалса илсенех хускалать, ăнтлăх шайĕнче пăхсан, ку пулăм кашни япала тепĕр япалапа тем тĕрлĕ енлĕн çыхăнса тăнине пĕлтерет. Каларăмăр, тĕнче вăл сеть, пĕр вĕçĕмсĕр шăтăкла. Апла, тĕнче сире сыхласах тăнинчен тĕлĕнмелли çук, вăл эсир мĕн тунине туса пăхать. Паллах, таçта аякра сирĕн хусканăвăр палăрмасть те пулĕ, анчах çывăхри ячейкăсем питĕ сисĕмлĕ, вĕсем сире чăнласа тĕкĕрлесе кăтартса параççĕ.

«Тепри» тени ахальтен палăрмасть. Вăл яланах сирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ япала. Калăпăр, çак самантра çул хĕрринче выртакан чул катăкĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать-и. Çукрах пулĕ. Юнашарах тăракан юлташ вара яланах пĕлтерĕшлĕ. Атте-анне, тăвансем пирки каламастпăр та. Вĕсем яланах пĕлтерĕшлĕ. Çав сирĕншĕн кăна пĕлтерĕшлĕ тĕнче «Тепри» вырăнĕнче çӳрет те. Турă-и унта, учитель, е юратнă çын, пурпĕрех. Чи кирли кунта, пĕлтерĕшлĕ пулни. Кашни пĕлтерĕшлĕ «Тепри» умĕнче мĕнле те пулин роль вылять. Урăхла каласан, ун пек пулма тăрăшать. Ун аллинчен хăтăлас тесен те хăтăлаймастăн. Мĕншĕн тесен вĕсем уйăрăлми çыхăннă. Эсĕ «Теприпе» уйăрăлми çыхăннă. «Мим» е евĕрлев саккунĕ çына саншăн пĕлтерĕшлĕ çын пек пулма хистет. Вара эпир ирĕксĕрех хамăра хамăр пăрахсах çын хыççăн каятпăр, хамăра хамăр çухататпăр. Тин каланă социаллă саккунсене хирĕç тăма май çук. Хирĕç тăракансем те пур пулĕ, анчах, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ытларахăшĕ çак «мим» саккунне пăхăнаççĕ.

«Теприн» витӗмне шута илес тесессӗн, ача урамра мӗнле вылянине кӑна пӑхса илӗр. Амӑшӗ юнашар ларать-тӗк, вӑл пӗр майлӑрах, тирпейлӗрех, хӑйне хӑй чарса вылять. Енчен те аслисенчен никам та ҫук пулсан вара вӑл хӑйне ирӗке ярать. Юнашар саншӑн пӗлтерӗшлӗ, пысӑк ҫын пулни сан пурӑнӑҫна, вылявпа ӗҫе те йӑлт улӑштарать. Чӑн та, калӑпӑр, пуҫлӑх командировкӑна кайнӑ пултӑр, ҫавӑнпа усӑ куракансем самантрах тупӑнаҫҫӗ. Вӗсем е ӗҫрен маларах тухса каяҫҫӗ, е эрех-сӑрапа йӑпанма пӑхаҫҫӗ, кам мӗне пултарать. Апла, хамӑртан ҫӳлерех ҫын пурри те питӗ пӗлтерӗшлӗ. Ҫавӑнпа мар-и хӑшӗ-пӗрисем пӗтӗм вӑйран пуҫлӑха ларма тӑрӑшаҫҫӗ. Ун пек туни вӑл ирӗклӗх илниех. Каларӑмӑр, ҫын яланах ҫын аллинче.

Тепӗр енчен пӑхсан, «Тепри» тени, халӑх сӑмахӗпе те ҫыхӑннӑ. Ҫын тепӗр ҫынна питлет, ун ҫинчен сӑмах сарать. Ял ҫапла калаҫать, теҫҫӗ вара. Ҫавӑн пек сас-хура та «Тепри» вырӑнӑнче тӑрать. «Ҫын мӗн калӗ», тетпӗр. «Ыр ҫын вилсен ят юлать», теҫҫӗ. Халӑх каланине, вӑл мӗнле пӑхнине кашни пуҫа илет, итлет, тӗрӗс турӑм-ши тесе, хӑйӗн ҫине ҫавӑрӑнса пӑхать. Халӑх калани ҫавӑнпа та калама май ҫук пысӑк вӑй пулса тӑрать. Ку шӑхӑша маллала тӑссан, «Тепри» вӑл ҫын усӑ куракан саккун та, пурӑнӑҫ хаклавӗсем, нормӑсем, правилӑсем, ҫын сӑмахӗ те. Пурне пӑхса тухма та май ҫук. Чи кирлине, хаклавсем мӗнле пуҫ пулса тӑнине вара ҫитес параграфра пӑхса тухӑпӑр, халӗ вара «Тепри» текен тепӗр пулӑма пӑхса илмесӗр иртсе каяймастпӑрах. Вӑл намӑслӑх, айӑплӑх, совесть. Вӗсем пурте пӗр шайра пек. Ҫав вӑхӑтрах пӗр шайра та мар.

Мӗн-ха вӑл намӑс, айӑп, совесть. Пирӗн шутпа, ку пулӑмсем пурте «Тепри» ӑнлавпа ҫыхӑннӑ. Такам, пирӗншӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ ҫын, «Тепри», пирӗн ҫине пӑхать, йӑлт курать пек. Эпир мӗн те пулин япӑх турӑмӑр-тӑк, ҫавна «Тепри» тӳрех асӑрхать, пире тепӗр чух сасӑпах пӗлтерет. Ҫав тиркенӗ сасса илтнӗ-илтмен эпир намӑсланса каятпӑр, хамӑра хамӑр айӑплӑ пек туятпӑр. Ку ӑнланмалла пек. Пӗлтерӗшлӗ ҫын вырӑнӗнче, каларӑмӑр, такам та пулма пултарать (атте-анне, юратнӑ ҫын, тӑвансем, юлташ, пуҫлӑх тата ытти те). Чӑваш пуринчен ытла ватӑсенчен, леш

тĕнчене кайнă тăванĕсенчен вăтанать. «Ватăсем мĕн калĕç», тет. Вĕсене пĕрмаях пиллештерет. Чи пĕлтерĕшлĕ «Тепри», апла, чăвашшăн вилнĕ, анчах яланах юнашар тăракан аслă тăванĕсем. Вĕсенчен пил ыйтса пуç тайса тăрать вăл. Эпир вĕсем умĕнче пурăннăшăн та айăплă пек. Упраймарăмăр, тетпĕр. Вĕсем пурăннă пулсассăн, мĕн кăна туман пулăттăмăр. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, эпир çын умĕнче намăсланатпăр, хамăр айăпа туятпăр. Çавăнпа çын та эпир.

Совесть тесе эпир ӳкĕнӳлĕхе калатпăр. Вăл ăçтан тухни вара паллах та мар. Хăшĕ-пĕрисем вăл пулăм турра ĕненнипе çыхăннă теççĕ. Турă умĕнче ӳкĕнекен совеçлĕ иккен. Кам турра ĕненмест, унăн совеçĕ те çук. Ун-мĕн тем те тума юрать. Совесть çуккă-ха та, ӳкĕнмест те-ха. Ку шухăш тĕрĕсех пулма пултарать. Анчах, пирĕн шутпа, тĕнче тени чылай ансатрах. Совесть вăл хăвăнпа ху калаçни. Санăн шалта, эсĕ кирек мĕнле çылăха кĕрсе пĕтнĕ пултăр, пĕрех, тем пур. Вăл таса, лайăх, ырă. Вăл турă пек. Çавă таса çын сан ăшрах ларать, сана тӳрĕ çултан пăрăнма памасть. Хăвна ху улталаймăн. Эсĕ хăвăн патна совесть пулса таврăнатăн. «Тепри» тени кунта, апла, хăвах. Эсĕ ху патне турă пулса çаврăнса тухатăн. Таса, нимпе те вараланман çын санпа калаçать. Хăвна унпа танлаштарса пăхатăн та ху тĕрĕс мар туни-не тӳрех куратăн, намăсланса каятăн, ӳкĕнетĕн. «Совеçлентĕм», теççĕ вара.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, «Тепри» вырăнĕнче тĕнче хăй тата унăн пайĕсем те пулма пултараççĕ. Вăл шута çыннăн пăсăлма пĕлмен чунĕ те кĕрет. Чун вилĕмсĕр, терĕмĕр, вăл хăйне майлă хаклавсен пуххи, е матрици пек ăнлантăмăр. Халĕ çав хаклавсем, хаксем патне тепре таврăнса тĕплĕнрех калаçар-ха.

## 4.2. ХАК, ХАКЛАВ, ХАКЛĂХ

Хакласси хутшăнупа çыхăннă. Хак хутшăнура кăна сиксе тухать. Хăй хальлĕн кашни япалан хăйĕн пахалăхĕсем пур пулĕ. Анчах пахалăх вăл хаклăх мар-ха. Япалана çын кăна хаклама

пултарать. Хаклани япалана пĕлтерĕшлентерни. Енчен те мĕнле те пулин япала мĕн тума та пулин сана кирлĕ-тĕк, вăл çавăнтах хаклавланать. Ун чухне вара тин хаклăх çинчен калаçма пулать. Хаклăх тени хальхинче нимле япалапа та çыхăнмасть. Вăл абстракци хăй хальлĕн пурăнать. Пирĕн шутпа, хак хуни хаклăха пĕтерет. Аса илĕр-ха авалхи чăваш епле суту-илӳ тунине. Вăл нихăçан япала хакне пĕлмест, хак хумасть. Кунта тĕлĕнмелле ăслăх. Хак хураканĕ - тавара илекенни. Чăваш, апла, нихăçан та ниме те сутмасть. Сутма тăрсанах хак хурас пулать. Вара хаклăх çухалать. Сăмахран, йĕркеллĕ çын хăйĕн пĕлтерĕшлĕ япалисене нихăçан та сутмасть. Кунта, паллах, атте-анне, тăвансем кăна мар. Кунта çĕр, тăван çĕршыв, чыслăх, тасалăх тата ыттисем те. Вĕсем сутăнмаççĕ. Вĕсен хакĕ çук. Анчах, каларăмăр, рынок тапхăрĕнче пурте тавара тухаççĕ, пурте сутăнать. Апла пулсан, вĕсем пурте хăйсен хаклăхне çухатаççĕ. Сутма тухнă çын тĕнче хаклăхне пăрахăçлать.Уншăн халĕ ним те хаклă мар, хак çеç пултăр. Рынок, пасар хакне пăхăнса вăл укçа пуçтарать. Апла, сутуçă тĕнчене тӳрех пĕтерет. Хаклăхне çухатнă тĕнче халĕ ĕнтĕ никама та ним тума та кирлĕ мар, сутса укçа тусан юрать вара.

Кун пек хутлăхра çын та хăйне çухатать. Вăл халĕ тин «хăйне хăй пĕр тĕллев» мар, вăл ĕçĕн тĕп хатĕрĕ-мĕн. Ăна та сутаççĕ, тĕрĕссипе вăл хăйĕн вăйĕпе ăсне сутать. Уншăн ăна ĕç укçи тӳлеççĕ. Акă вăл пасар тапхăрĕ, акă мĕншĕн пĕтет çын. Ăна та хакланă. Унăн хаклавĕ укçа ятлă. Кун пек чухне çынна пурăнма, паллах, питĕ йывăр. Çавăнпа та нумайăшĕ çын шайне ӳссе аталанса çитеймеççĕ те. Тавар шайĕнчех юлаççĕ.

Хаклавсемпе мĕн пулса иртнине ăнланса илес тесен, хутшăну пулăм патне таврăнас пулать. Хутшăну пурне те ăнлантарать. Хак, хаклав, хаклăх хутшăнуран сиксе туçхаççĕ терĕмĕр. Хутшăну çуккă-тăк, ним те çук. Хак, паллах, япалан пахалăхĕпе çыхăннă. Çыншăн япала мĕнпе пахине курса хак хураççĕ. Япали тата çукрах та пулма пултарать (бренд). Куншăн та тӳлеççĕ. Суту-илӳ балансĕ вара тӳрленет. Хăй хаклă япаласем хаклăхне çухатни çак ансат хутшăнура пулĕ тетпĕр, суту-илӳре. Малтанрах эпир пулăшу экономики пирки кăштах калаçнăччĕ. Халĕ çавна

тёплёнрех пăхса тухар-ха. Тен, япалан хаклăхне çухатмасăрах ĕçлеме, суту-илӳ тума май килет. Çĕнĕ экономика пĕлтерĕшне уçса панă чухне эпир: «Мĕн çитменнине çитермелле», терĕмĕр. Кам, мĕнле çитерĕ сан мĕн çитменнине. Пĕр-пĕрне пулăшса, ытлашши тавара урăх çынпа пайласа, тата ытти те терĕмĕр. Юрать тейĕпĕр, эсĕ хăвăн ытлашши продуктна кӳрше леçсе патăн, анчах та сан хăвăн та мĕн те пулин çитмест вĕт-ха. Сана кам мĕн парĕ. Параканĕ тупăнать пулĕ тетпĕр. Сăмахран, кашни çын кама та пулин мĕнпе те пулин пулăшсан, таварсен çавăрăнăшĕ, хальхи пасарти пеккиех, пуçланса каять. Эсĕ пулăшса панă тавар сан пата хăвна кирлĕ таварпа çаврăнса çитет. Кунта та тавар çавăрăнăшне йĕркелемелле пулать, апла. Тĕнче вăл цикл, терĕмĕр. Кирек мĕнле пулăм та, япала та çавăрăншра кăна пурăнма пултарать. Пуринчен ытла ку чĕрĕ чĕрчунсемпе çынна пырса тивет. Çапла хăйне майлă экологиункисем çут çанталăкра та, социаллă пурнăçра та йĕркеленеççĕ. Кун пирки çӳлтерех тĕрлĕ тĕслĕхсем илсе кăтартнăччĕ. Ăнтлă ăнлансан, тĕнче ункăланмасăр пурăнаймасть.

Халĕ суту-илӳ процессне тепĕр хут пăхса илер. Çын, калăпăр, хăй таварне кам илет çавна пĕр пуссăрах парса ятăр. Хăй те вăл хăйне мĕн кирлине тепĕр сутуçăран пĕр пуссăрах илсе кайтăр. Пурте çапла тусан мĕн çухатрăмăр эпир. Нимĕн те çухатман, пурте хăйне кирлĕ тавар илнĕ. Пĕр тӳлевсĕр. Пурте пĕри-тепĕрне пулăшнă. Мĕнле ансат. Тепĕринче те çаплах тусан, пурте хăйне кирлĕ таварлă пулаççĕ. Паллă, кунта пасарта мĕн пуррине кăна мар пĕлмелле (информаци), çынна мĕн çитменнине те. Çуккине çитермелле-çке-ха. Чăваш мĕнле калать-ха: «Пурри те пĕтет, çукки те çитет, пĕрле пурăннине мĕн çитет.». Кунта пуласлăхри экономика формулине çырса кăтартнă. Чăваш тахçан авал ку меслетпе, пулăшу экономикине аталантарса пурăнса пăхнă пулас. Анчах хальхи вăхăт ăна кун пек майсене вăйпа мантарнă. Çапах та пур-ха кăштах пулăшас тени. Питĕ пурне те укçаллах тумасть-ха чăваш.

Пулăшу экономики хаксене пăрахăçларĕ пулсан, апла, хаклавĕ те çук. Хаклани çуккă-тăк, хаклăх юлать. Пур япала та

хӑй хаклӑхне халь тин ҫухатмасть ӗнтӗ. Пурте-пурте хаклӑ, ниме те сутма юрамасть, унсӑрӑн хаклӑх ҫухалать. Сутсан пурте пӗтет. Пурне те укҫа ҫӑтса ярать. Ҫапла пулса пырать те халӗ. Укҫа ҫут ҫанталӑкне те, туррине те, ҫыннине те сутӑн илсе ҫисе ярать. Ҫакна ҫын халӗ тин ӑнланса илме пуҫларӗ. Пурте мар, паллах. Шуйттан аллине, урӑхла каласан укҫа серепине лекнисем, малаллах талпӑнаҫҫӗ, эпир прогреса вӑйлататпӑр, пурӑнӑҫа хӑвӑртлататпӑр, теҫҫӗ. Прогресс укҫапа виҫӗнмест, вӑл тӗнче хаклӑхне вӑйлатса пыни. Хаклӑхсӑр тӗнче пӗтсе килнине хӑшӗсем вара курмӑш пулаҫҫӗ. Ахальтен-им пурӑнмалӑх пӗр «ылтӑн миллиард» ҫын ҫеҫ хӑварасшӑн вӗсем. Ыттисен вара вилсе пӗтмелле тет. Акӑ мӗнле ҫавӑрӑнса тухать пасар хаклӑ тапхӑр. Хаксемпе питӗ асӑрханулла пулмалла. Ӑслӑ халӑх кӑна хак хӑрушлӑхне курса тӑрса мӗнпур япалан хакне ҫухатнӑ пулнӑ. Ку тӗлӗнмелле ӑнтлӑ пулӑма пирӗн тепӗр хут ӑнкарса илмелле пулать. Унсӑрӑн пӗтетпӗр.

Хаклав пирки шутласан, мӗн хаклаканни вӗт вӑл ҫын, ҫын хаклать. Нивушлӗ вара ырӑ чӑваш пек, ун пеккисем халӗ те пур, ӗҫшӗн мӗн чухлӗ тӳлемелле вара тесе ыйтсан, ним те кирлӗ мар, темелле мар. Ырӑ ҫын сана пӗр пус укҫасӑр туса парать. Вӑл ниме те хакламасть. Мӗншӗн тесен ӗҫ вӑл хӑй хаклӑх. Мӗнле калаҫҫӗ-ха философсем, искуссство искусствӑшӑн, ӗҫ ӗҫшӗн хӑй хальлӗн пулса пырсан вара тин япалан е пулӑмӑн чӑн пӗлтерӗшӗ палӑрать. Енчен те ку тӗрӗс пулсан, ҫыннӑн пӗтӗм ырӑ вӑйне пухса, япалан хакӗ ҫук тесе, япалана хаклама пӑрахас пулать. Пӗр пуссӑрах ӗҫлесе пар. Ӗҫ хире-хирӗҫле кӑна пултӑр. Пӗритепӗрне пулӑшсан каллех чиперех килсе тухать. Кунта каллех ӗҫе ункӑлани пур. Ялти ҫынсем ҫапла тӑваҫҫӗ те. Кашни тепӗрин патне пулӑшма ҫӳрет. Ӗҫ ункӑланать. Енчен те кам та кам ултался теет пулсассӑн, ункӑна курса тӗрӗслесе тӑракан ялти сас-хура пур. Эсӗ ӗҫе хире-хирӗҫле тавӑрса паманнине часах асӑрхаҫҫӗ те сана ҫав ункӑран кӑларса пареҫҫӗ. Ялта эсӗ пӗччен пурӑнаймастӑн, вилетӗн. Мӗншӗн тесен ҫут ҫанталӑкпа таччӑн ҫыхӑннӑ экологи унки социаллӑ ункӑ ыйтать. Вӗсем иккӗшӗ те: ӗҫ ункипе эколги унки пӗр утӑмласа пыраҫҫӗ, вӗсен пӗр ритм. Ку ритма

пĕччен ĕлкĕрсе пыма май çук. Пĕрлĕхлĕ ĕç кăна вăй-халлă, çавă кăна пĕр утăмлă.

Енчен те патшалăх пĕлтерĕшлĕ ĕççем тумалла-тăк, кунта та пысăк опыт пухнă пирĕн халăх. Ас тăватпăр, çул тума кашни çынна ĕç уйăрса панăччĕ. Тӳрех каламалла, çул тунăшăн никама та пĕр пус та тӳлемен. Калăпăр, санăн виçĕ кубометр чул, виçĕ машина хăйăр турттармалла пулнă пулсан, эсĕ ăна пĕр сăмахсăрах пурнăçланă. Çав чул сарнă çул ĕмĕрлĕхе. Уншăн никама та пĕр пус тӳлемен. Апла-тăк, кирек мĕнле пысăк ĕçе те халăхпа нимелле тума пулать. Ку ырă йăла-йĕрке те халăхра упранса юлнă-ха.

Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, хаксене пăрахăçлама, хаклама пăрахма ним те мар пулать. Вара тин хăйĕн хаклăхне çухатман пурăнăç хуçаланма пуçлать. Никам та тек укçа пухас тесе ухмаха тухмасть. Ку вĕт турă патне пĕр çул. Укçа серепине сирсе ывăтнă çын çăмăллăн сывласа ярĕ, вăл чăннипех те ирĕклĕ, чунчĕреллĕ, ырă кăмаллă пулĕ. Тĕнчере халĕ тин пурте хаклăхлă, нимĕн те сутăнмасть, хăй хаклăхне çухатмасть. Аваллăха, «натуральное хозяйство» теççĕ, унта каялла таврăнни мар ку. Таврăнни пултăр, пултăрин, анчах та ку таврăну çĕнĕ шайра пулса пырать. Икĕ хут пăрахăçланă хыççăн диалектика саккунне пăхănса эпир çĕнĕ пурăнăç пуçласа ярăпăр. Паллах, хальхи хуçасем кун пек тума чарса тăрăçĕ, вĕсен хăйсен укçисене çухатас килмест-тĕр. Укçа çук пулсан, пуян та çук пулать. Ку хăратать. Çавăнпа та ку пулас пурăнăç çапăçусăр пулмасть. Укçасăр пурăнас çынсене, укçасăрах ĕçлес текенсене тĕрмене хупа-хупа лартĕç. Анчах пурăнăç хăйех хистет, енчен те тĕнчене упраса хăварас тетĕр пулсан, хăвăра та ĕнтĕ, хаксемпе хакланине пĕтерсе хаклăха упраса хăварас пулать. Тĕнче питĕ хаклă, ăна пĕтерме çук. Унăн хаклăхне пĕтерсен хамăр та пĕтетпĕр. Çын кун пек чухне чи пысăк хаклăх пулса тăрать.

Çакăн пек шухăшсем çуралаççĕ хаксем пирки. Кам та кам çын пулса пурăнас тет, çакă пулăмсем пирки шутлатех. Малтанлăха, ку пулăшу экономикине кĕрес тесен, пĕр услови пулмалла пек туйăнать. Çыннăн питĕ хăй тĕллĕн, çителĕклĕ пурăнăçпа пу-

рӑнас тӗллев лармалла. Ҫук, суту-илӳ туса укҫа пухса мар, ҫут ҫанталӑкпа тата халӑхпа пӗрле пулса йӗркелемелле пулать ҫавӑ ҫителӗклӗ пурӑнӑҫа. Шутламалли кунта нумай. Ку пулӑшу экономики утопи пек кӑна илтӗнет хальлӗхе. Анчах та тӗплӗн, ӑнтлӑ шухӑшласан, ниҫта та кайса кӗрейместӗн. Е вилӗмлӗ укҫа, е пурӑнӑҫ илемӗ. Укҫасӑр пурӑнма пулать. Пурӑнӑҫсӑр вара пурӑнма ҫук. Пурӑнӑҫ философийӗ ҫапла.

## 4.3. ҪӖНӖ ҪЫН

Тӗнчепе пӗр кӗвӗллӗ ҫын пирки шухӑшлӑпӑр. Пур-и ун пек ҫын. Пирӗн шутпа, пур. Анчах вӑл, тӗнчерен уйӑрӑлми тӑраканскер, куҫа тӑрӑнмасть. Вӑл ҫук пекех. Ӑна никамах та асӑрхамасть. Хӑйне кӑтартас тесе ҫӳремест вӑл. Апла, ӑна, тен, тупса палӑртма та ҫук. Пулать кӑна мар, унӑн тӗп паллӑрӑмӗсм пирки те шутлӑпӑр. Тӗп палли ун, пирӗн шутпа, ҫут ҫанталӑкпа пӗр пулни. Вӑл ҫут ҫанталӑк ритмне, саккунӗсене пӑхӑнать, унпа пӗр утӑмлӑ пырать. «Ирех тӑрать тумланать, ирех ӗҫе тытӑнать». Хӗвелпе тӑрать, хӗвелпе ҫывӑрма выртать. Ҫут ҫанталӑк ачи, тейӗпӗр ун пирки. Ун пек ҫыншӑн вилӗ япала ҫук. Ҫут ҫанталӑкӑн кашни пулӑмӗ чӗрӗ. Пӗтӗм космос хӑйне майлӑ тӗллевлӗ тата ӑс-тӑнлӑ. Ҫут ҫанталӑк ачи кашни япалапа, ҫул хӗрринче выртакан чулпа та, ҫынпа калаҫнӑ пекех калаҫма пултарать. Ухмаха тухнӑ тесе те калаймӑн, мӗншӗн тесен, малтанрах ӑнлантартӑмӑр, кашни япалан хӑйӗн хутшӑнӑвӗ, хирӗҫтӑруллӑ вӑйӑмӗ пур. Грофф ӑнлантарнине шута илсен, пирӗн ӑс-тӑн чул пурӑнӑҫне кӑна мар, космос мӗн пулнине те шута илме пултарать. Эмпати теҫҫӗ ӑна, ҫавӑ пултарулӑха. Кунта тӳрех авалхи ҫын пултарулӑхӗ аса килет, ҫын пур япалана та чӗрӗлӗх кӗртме пултарать. Антропоморфизм, теҫҫӗ. Ун пирки кӑштах калаҫнӑччӗ те. Ҫын пурне те хӑйне пӗлсе ӑнлантарать. Протагор калашле, тӗнчене виҫекен ҫын хӑй пӗртен пӗр виҫе пулса тӑрать.

Тепӗр паллӑрӑм та пур. Вӑл ниҫта та пӗр йӗр те хӑвармасть. Ҫын пӗр йӗр те хӑвармасӑр ҫӳреймест, паллах. Анчах ури-

не вăл акă çапла пусать: пуснă çĕрте тепĕртакран нимле йĕр те палăрми пулать. Ун пк те тума пулать-и вара, тейĕр эсĕр. Пулать кăна мар, çапла пурăнаççĕ те ял çыннисем. Ун пек çын ниçта та çĕмĕрсе кĕмест. Унăн утăмĕ çут çанталăк еккипе пĕр килет. Сăмахран, йывăç касмалла тейĕпĕр. Çын малтан каçару ыйтса, йывăç мĕнлине тата хăш еннелле йăвантармаллине пăхса йывăç тавра виçĕ хутчен çавăрăнать, унтан каснă пĕр йывăç вырăнне виççĕ лартма сăмах парать, вара тин хăй ĕçне пуçăнать. Кирек мĕнле ĕçе те çапла шутласа, вăрманпа-и унта, хирпе-и, пуринпе те пĕр чĕлхеллĕ, пĕр майлă пулса хускалать çын.

Халăх хушшинче те çавах. Кашни çынпа пĕр чĕлхе тупать çавă çын. Кашнинпе килĕштерсе ĕçлет. Ун пек çынсем юнашарах. Тен, хăвăра асăрхаса пăхăр-ха, эсир те çаплах хăтланатăр. Чăнах та çапла. Анчах та чылай чухне тăвас тенĕ чухнехи пек килсе тухмасть. Мĕншĕн-ши çапла килсе тухать. Кунта шутламалли питĕ нумай. Пирĕн шутпа, çут çанталăк хăйĕн интересне, тĕллевлĕхне уçăмлăн палăртмасть. Енчен те эпир унăн пахалăхĕсене пĕлетпĕр-тĕк, саккунĕсене шута илетпĕр-тĕк, ним те мар мĕн тăвас тенине тăватпăр. Çут çанталăк пире ирĕк парать. Социаллă пурăнăçра кашни çыннăн хăйĕн интересĕ уçăмлăн палăрать. Кашни хăйĕнне çине тăрса тăвасшăн. Хирĕçтăруллă самантсем тăтăшах малтанрах мĕн тăвас тенине улăштарса пĕтерсе хураççĕ. Социумра çапла. Çут çанталăкра вара, хăвăн ĕçна тăвас тесен, çут çанталăкпа пĕр кĕвĕллĕ пулни те çителĕклĕ. Çынпа çын хутшăннă чухне вара çураçтарулăха витĕмлĕрех палăртас пулать. Çураçтарулăх çуккă пулсан, социаллă саккунсене пĕлни те çителĕксĕр. Мĕн вăл, çураçтару. Вăл килĕшӳлĕх, пĕрлĕлĕх, тăванлăх, юратулăх, туслăх, пĕр шухăшлăх, туйăмлăх, пулăшулăх, хутшăнулăх, ырăлăх тата ытти те. «Çураçтару» ăнлав теме те пĕлтерет, ăнлантарать, хăй тавра пĕтĕм тĕнчене пуçтарать. Чăваш çураçтарса пурăнма юратать, вăл унăн чи пысăк палăрăмĕ, тет В.Г. Родионов[1].

---

[1] Родионов В.Г. Стих. Слово. Образ: Сб. статей разных лет. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, – С. 294-298.

Эпир те çак ăнлавпа усă курса тĕнчене ăнлантарса парар мар-и. Çураçтару вăл, чăн малтан, икĕ енлĕ килĕштерÿ. Хĕр çураçма кайсан ашшĕ-амăшĕсем пур енлĕн калаçса татăлаççĕ. «Çĕнĕ çын», хуньăм хĕрĕ ĕнтĕ, вăл та упăшки килĕнче хăйне малтанлăха питĕ сăпайлă тыткалать. Пур япала та, çут çанталăк та килĕштерÿллĕн аталанать. Каларăмăр, кашни япала тепĕринпе пĕр кĕвĕллĕ. Наука ăна коэволюци терминпа палăртать. Çапах та çын хутшăнăвĕнчи пек ăнлануллă тата туйăмлă килĕштерÿ унта çук. Çын анчах çапла тума пултарать. Хутшăнура ăс-туйăм хумлăн-хумлăн пĕр-пĕрин çумне çапăнса çынсене пĕр шухăшлă, пĕр ĕçлĕ туса пĕрлештерет. Тĕрĕссипе, ку питĕ вăрттăн пулăм. Эпир пĕр çын тепĕринпе мĕншĕн килĕштернине ку таранччен те пĕлместпĕр. Мĕнле резонанслă пулăм ку. Çураçтаруллă пулăм ырă кăмăллă, пĕр-пĕрне пулăшас текенсен хушшинче кăна хуçаланать. Усал шухăш тытнă çын тепĕрне сиен кăна кÿрет. Вĕсем нихăçан та калаçса татăлаймĕç. Тату пурăнăç çуруçтару пулăмĕ çинче никĕсленет.

Çавăнпа та эпир «çураçтару» ăнлава чи пысăк хаклăх тесе шутлатпăр. Пирĕн халăхăн вăл тĕп шăнăрĕ пулса тăрать. Чăн та, чăваш пуринпе те çураçтарса пурăнма тăрăшать. Пулин, хăйне япăх пулсан та çураçтарать. Самантлăха пуç таять-и, пăхăнам пекки тăвать-и, тепĕр чухне пурлăхне те вăхăтлăха парать, тем те тăвать, килĕштерсе пурăнас тесе. Пуринчен ытла вăл кÿршĕпе килĕштерсе пурăнать. «Кÿршĕ тăванран çывăхăрах», теççĕ халăхра. Çавăнпа та çураçтару мелĕсене кÿршĕпе хутшăннисем урлă питĕ лайăх кăтартса пама пулать. Чăн малтан, кÿршĕпе нимĕн те пайлама юрамасть. Кÿршĕ хуçалăхне хăвăнни пек йышăнас пулать. Пĕр шит ытла ана çине кĕрсе кайнă-и сухаланă чухне, улма йывăçĕсем çывăха лартнă-и, е качаки-сурăхĕ кĕрсе кайнă сирĕн пахчана, вăл ку ниме те пĕлтермест. Татуллă пурăннине нимĕн те çитмест. Кунсăр пуçне кÿршĕ картишне, пахчана е урама ĕç мĕн тума тухнă пулсан, пулăшма чĕнмесĕрех тÿрех пулăшма тытăнас пулать. Пĕрле ĕçленине нимĕн те çитмест. Кирек мĕнле пулăшăва та пĕр кутăнланмасăр, укçа мĕн ыйтмасăр туса пымалла. Кунта чи кирли, ĕç хире-хирĕçле пулни. Енчен те çĕр

улми лартма пулăшса пачĕç-тĕк сана, сыхласах тăр кӳршĕ çĕр улми лартма пуçласса. Мĕнле пуçларĕ, çавăн пек тухса пулăш. Кирек мĕнле ĕçре те çапла ал-ылмашлă пурăнсан вара чăн-чăн çураçтаруллă тĕнче çуралать. Паллах, ĕç тунă хыççăн пĕрле ларса çăкăр-тăвар пайлани те пулать. Уйрăмах уявсенче пĕрле пулма тăрăшмалла. Ĕç кăна мар, çăкăр та пĕрлештерет. Çӳлерех калараймăр, кӳршĕн мĕн те пулин çитмесен, е çукрах пулсан, çавна самантрах саплаштарма тăрăшмалла. Тĕрĕссипе, кӳрше яланах кучченеçпе каçмалла. Мĕнле те пулин япала парса янă пулсан, ăна мĕн те пулин хушса тавăрса памалла. Кӳршĕпе мĕнле пурăнмалли катехизис чылай вăрăм килсе тухма пултарать, ăна хальлĕхе никам та çырман. Çырас-тăвас текенсем аппаланса пăхма пултараççĕ. Пирĕн вара урăхларах тĕллев. Кӳршĕ урлă çураçтарулăха кăтартса парасси. Ку кĕске кăтартусем те вулакана çырлахтараççĕ пулĕ тетпĕр. Кӳршĕ вăл чи çураçтаруллă çын. Акă сăмахĕ те тупăнчĕ. Çураçтаруллă çын кирлĕ пире çак пурăнăçра пурăнма. Вăл вара хăй тĕллĕн çуралмасть.

Çураçтаруллă çын, чăн малтан, çут çанталăк çынни. Çут çанталăкпа пĕрле пулса социализациленет те вăл. Урăхла каласан, килĕштерсе пурăнма вĕренет. Ку куçа курăнман, хăй тĕллĕн те вăрттăн пулса пыракан чи тарăн социализаци. Асăрхăр, кам та кам ялта е вăрманта ӳснĕ, çавă чăнласа лайăх çын. Унăн чунĕ уçă, вăл пур япалана сирĕнпе пĕрле пайлать, ниме те уйăрмасть, пурне те килĕштерет, тĕнчене хăйĕнчен уйăрмасть. Малтанрах кăтартнăччĕ, ку ĕç çут çанталăк пулăмĕсене евĕрленипе çыхăннă. Унта пурте пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнать. Çавна вĕренет чăн малтан ача. Ӳссе пынăçем кăна халăх пурăнăçне ăнланма, çынпа çын еплерех хутшăннине сăнама тытăнать. Унта килĕштерӳлĕх сахалраххине асăрхать. Çын çынна час-часах кӳрентерет. Мĕн тăвас тетĕн, ирĕксĕрех çураçтарса пурăнма вĕренмелле пулать. Ку социализацин иккĕмĕш тапхăрĕ. Ӳссе çитнĕ çын çут çанталăкпа усă курма тытăнать. Ку чухне вăл чылай йăнăшсем тăвать. Çавăнпа та виççĕмĕш социализаци этапне эпир экологизаци теесшĕн. Хăвăрах шутласа илĕр-ха, кашни ĕç хатĕрĕ хăш енчен те пулин çут çанталăка пырса тивет, ăна амантать, пĕтерет. Çавна

пула экологи кризисĕ пуçланать. Апла ан пултăр тесен, пирĕн техника хатĕрĕсене çут çанталăк пулăмĕсемпе килĕштерӳллĕн хутшăнтарма вĕренмелле. Техника та çураçтаруллă пулма пултарать. Техникăн флорăпа фаунăна таптаса, çурса, вĕлерсе пĕтермелле мар, чĕрĕ чунсене пулăшса пымалла. Ку калама çук пысăк задача. Ăна хальтерех кăна пурăнăçлама пуçларĕç. Каларăмăр, унăн тĕп çул-йĕрĕ япала, энерги тата информаци çаврăнăшĕсене йĕркелесе ярассипе çыхăннă. Апла, техника аппарачĕсен те çавă çаврăнăшсене хускатаса ярса йĕркелесе тытса пурăнма пĕлмелле. Ку хăй тĕллĕнех пулса пымалла. Ăна-кăна хальлĕхе кирлĕ пек тума пĕлместпĕр. Çавăнпа пĕтет те çут çанталăк.

Тăваттăмĕш этап вара çын хăйне хăй йĕркеленипе çыхăннă. Вăл вĕт хăйĕн умĕнче те социализациленет. Ахальтен каласан, тĕкĕр çине пăхса илет те, хăй чипер те вăйлă, ăслă та ырă пулнине курса илет. Эпĕ лайăхах-иç тет. Енчен те хăйĕнпе вăл кăмăлсăр юлать, çавăн чухне хăйĕнпе хăй татах ĕçлет, лайăхланас тет. Кун пек социализаци механизмне эпир «Тепри» текен çын е тĕнче пайĕ пуррипе ăнлантарса панăччĕ. Çавă «Тепри» урлă социализациленет те çын. Социализаци тени, ăнлантăр пулĕ, кунта çураçтарса пурăнма вĕрен тенипе пĕр килет.

Енчен те халĕ çакă этапсене пĕтĕçтерсе аталантарса пырсан, çĕнĕ çын ăнлав çуралать. Вăл çураçтаруллă çын терĕмĕр. Унăн пахалăхĕсем çынпа хутшăнса çут çанталăк хутлăхĕнче пурăнма юрăхлă пахалăхсем. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, вăл никама та тивмест, никама та айăпламасть, никама та вĕрентмест, вăл мĕн пуринпе шайлаштарса майлаштарса пурăнать. Вăл çук тесен те тĕрĕс. Кама аса илтерет çакăн пек çын. Чăваша, паллах. Чăваш вăл ку тĕнчери çĕнĕ çын. Ăна хальлĕхе никамах та курса каймасть. Ăна никам та тĕпчемен, унăн пахалăхĕсене палăртман. Халĕ тин çакă шухăшлавсем хыççăн эпир çĕнĕ çын пирки малалла тĕшмĕртме пултаратпăр.

Çĕнĕ çыннăн чи пысăк пахалăхĕ, пирĕн шутпа, чӳклĕхпе çыхăннă. Вăл чӳк çынни. Кăна темле тĕшмĕшленсе мар, наука шайĕнчех калатпăр. Кирек мĕнле ситуацире те вăл хăйне хăй шеллемест, çынна кирлине пурне те парать, нимĕн те ыйтмасть,

хăй тĕллĕн пурăнма тăрăшать. çавăнпа та пуль эпир ăна куçа-куçăн тăрсан та курмастпăр. Ку çеç те мар, чылай чухне ку пахалăхсем халĕ япăххăн курăнаççĕ. Йалт паракан çынна ухмах теççĕ. Чӳклĕх асапне курнă пулсан вара, çавă кирлĕ пулнă та ăна тесе кулкалаççĕ. Чӳклĕхлĕ çын ĕнтĕ вăл Христос пек, çапла вĕт. Вăл хăй пурнăçне çыншăн парать, чӳклет. «Тепри» теекен уншăн чăн турă пулса тăрать. Уншăн пуçне хурать. Апла, пĕр шухăшласан, Христосшăн кашни çын турă вырăнĕнче пулнă, вĕсемшĕн панă вăл хăйĕн пурăнăçне. Ку тĕлĕнмелле парадокс пек туйăнать. Анчах та çураçтарулăха аса илсен ним ăнланманни те çук кунта. Çураçтаруллă çыншăн кашни çын турă. Апла, вăл хăй те турă пек курăнать. Турра курнă-и эсир. Çук. Çавăнпа ку çĕнĕ çын та курăнмасть.

Эпир çак курăнманлăх пулăма, пĕтни, тесе хаклатпăр. Пирĕн халăх калама çук ăслă, кашни çын, чăн ăсси. Хăйне вăл нихăçан та кăкăр çапса кăтартмасть. Ĕçне тунă та пĕр шарламсăр кăмăллăн кулса пăхса ларать. Тĕнче вара халĕ те мĕншĕн тытăнса тăнине ăнланса илеймсĕр татах та татах ахăрса тăрать. Пурте тĕнче çын ахăрнипе тытăнса тăрать пулĕ тесе шутлаççĕ. Çук иккен. Тĕнчене çураçтарулăх тытса тăрать. Тĕлĕнмелле те, çураçтаруллă çынни вара çук пек, пĕтнĕ пек пулать. Акă сана турăлла чӳклĕх. Чӳклĕх чăнласах чи пысăк пахалăх. Çĕнĕ çын пахалăхĕ.

Çĕнĕ çын терĕмĕр пулсан, тĕнче епле çĕнелсе пыни пирки те шутласа илмелле пулĕ. Тĕнче çураçтаруллă хутшăнусенче кăна çĕнелет. Хăй халлĕн йĕркеленӳ (самоорганизаци) процесĕсем çураçтаруллă резонанслă пулăмсем çинче никĕсленеççĕ. Хутшăну эффекчĕ калама çук пысăк, тата вăл темле вăрттăнлăх пек курăнать. Чăн та, асăрхăр, икĕ çын вăл икĕ çынран пысăкрах. Мĕншĕнни паллă, мĕншĕн тесен вĕсем хутшăнаççĕ. Виçĕ çын темрен те пысăкрах, вĕсем тĕнчене тытса тăма кăна мар, улăштарма та пултараççĕ. Виççĕллĕ схемăсене аса илĕр. Йĕркеллĕ тĕнчере пурте виççĕллĕ. Турри, ачи тата сывлăшĕ. Урăхла каласан, ашшĕ, амăшĕ тата ачи. Виçĕ çын пур çĕрте коопераци е система эффекчĕ хуçаланма тытăнать. Ку вара çураçтарусăр пулмасть.

Пĕтĕмлетсе каласан, **çĕнĕ пурăнăç çĕнĕ çын çинче никĕсленет. Çĕнĕ çын пахалăхĕсем хальлĕхе палăрсах çитмен-ха. Çапах та унăн чи пысăк паллăрăмĕсене çураçтарулăхпа чӳклĕхре куратпăр. Çĕнĕ çын вăй илсен хăйне кăна мар, çут çанталăкпа обществăна та улăштарĕ.** Вăл çук мар, чылай чухне вăл халăх хушшинче халĕ те хаклă чул евĕр ялтăрса илет. Паллă, вĕсем мĕн ĕлĕкренех пулнă, анчах хăйсене пытарса пурăннă пирки курăнсах та кайман. Вĕсен пахалăхĕсене тата малашлăхне курса тăма вăхăт çитрĕ пек туйăнать. Çавăнпа та эпир тĕнчере çĕнĕ çын, çураçтаруллă çын пурри пирки калаçрăмăр та.

Ыйтусем

1. Мĕн вăл Тепри.
2. Мĕншĕн çын хăйне Тепри урлă кăна пĕлме пултарать.
3. Хаклани мĕншĕн хаклăха пĕтерет.
4. Мĕн вăл çураçтару.
5. Çĕнĕ çын мĕнле пахалăхсемпе палăрса тăрать.
6. Мĕн вăл çураçтаруллă çавра тĕнче.

5.

# 5. ПУРĂНĂÇ СĔМĔ

## 5.1. ПУРĂНĂÇ ТУЙĂМĔ

Çын пурăнăçĕ ăс-тăнпа кăна мар, туйăм-сисĕмпе те çыхăннă. Тӳрех каласа хăварас пулать, ăнлавсем те туйăмсăр мар. Кирек мĕнле ăнлав никĕсĕнче сăнар пур. Сăнар вара вăл туйăмлă пулăм. Калăпăр, «йывăç» ăнлавра темле тăванлăх, хитрелĕх, пулăшулăх пурри сисĕнет. Ахальтен мар «пурăнăç йывăççи», «усалпа ырă йывăççи», «пĕлӳ йывăççи», «киремет йывăççи, «таса раща», «асатте лартнă йывăç», «чун йывăççи» пур. Тĕслĕхрен, «куçăм», тейĕпĕр. Кунта вара хаваслăх, пурăнăç, хăрушлăх тата ытти те. Терминсем, ăнлавсем, категорисем хăйсем тĕллĕн йĕркеленмеççĕ. Кирек хăçан та вĕсенче сăнарлă туйăмлă пайĕ пур. Çавăнпа та эпир сăмах каласа савăнма пултаратпăр. Ун пеккине **ăнлавлă туйăм** теме пулать. Çав вăхăтрах Тютчев калашле, каланă сăмахра чăнлăх çук. Туйăм-сисĕм вăл чăнлăхпа çыхăннă-и. Паллах, çыхăннă. Туйăм чылай чухне улталамасть. Эпир хамăр ăса кăна мар, туйăма та ĕненетпĕр. Сăмахран, юр сивĕ, хĕвел ăшă, шыв йĕпе тата ытти те. Туйăм-сисĕм чăнлăхĕ хăй пĕр критери. Ăслани-шухăшлани те тутлă пулăм. Чăнлăхĕ хăй те лăплантарать. Енчен те кирлĕ информаци çителĕксĕр пулсан, эпир канăçсăрланма тытăнатпăр. Çав вăхăтра капланса килнĕ туйăм вара çителĕксĕр пĕлĕве çитернĕ пек пулать. Апла, туйăм та шухăшлама пултарать. Ахальтен мар, туйăмсен тĕп вырăнĕ, чĕре те шухăшлать теççĕ. Чĕре ăслă, туйăмлă, йăлт пĕлет. Ăна шанмалла, итлемелле, вăл ыйтнине пурăнăçламалла, теççĕ. Сăмах май, механиксем каланă тăрăх, чĕре хăй хальлĕн насос пек ĕçлеме пултараймасть. Организмри пĕтĕм юна хăвалама унăн хăвачĕ çителĕксĕр. Ăçтан илетши, апла, хăй хăватне чĕре. Паллă, туйăмран. Шухăш-ăнлавпа туйăм-сисĕм, апла, уйăрăлми пĕрлĕхлĕ. Çапах та эпир вĕсене пайласа, çын туйăмне уйрăммăн пăхса тухăпăр.

Çын туять. Çын туйăмĕ вăл пурăнăç туйăмĕ. Туйăм вăл информациллĕ пулăм. Апла, çын çак тĕнчене туйăм урлă та ăнланма пултарать. Çапла килсе тухать те. Ун пек ăнлану мелĕсене

эпир музыкăпа, пэзипе, прозăпа, ÿнерпе, ташă-юрăпа çыхăнтаратпăр. Сăнарлă пĕлÿ тĕнчене лайăхрах пĕлме пулăшать. Енчен те ăнлавсем пурăнăçăн пĕр пĕтĕмĕшле тĕп шăнăрĕсене тупса палăртаççĕ пулсан, сăнарсем вĕсене туйăмлăн çутатса кăтартаççĕ, пире е савăнтараççĕ, е хурлантараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ чăваш хăйĕн пурăнăçĕ пирки «эпир савăнăçпа хурлăх хушшинче», тет. Анчах çын нумай чухне хăйĕн туйăмĕсене палăртмасть, пытарать. Унăн шалти пурăнăçĕ куç умне ÿкмест. Çынна эпир ытларах ăнлавсем, сăмахсем, ĕçĕ урлă хаклатпăр. Мĕнле туйăмсем çуратаççĕ çавă сăмахсемпе ĕçсене, пĕлместпĕр те. Ку вăл вăрттăнлăх. Çапах та тĕшмĕртме те пулать пек. Калăпăр, вăрçса калаçатпăр пулсан, çын чунĕнче курайманлăх хуçаланать. Çыпăçуллă пулсан, çын, апла, юрататать. Ĕç пирки те çавнах калама пулать. Кама та пулин пулăшнă чухне сан ăшра ырă вăй, хирĕçле тăрсан, усал вăй пурри сисĕнет. Туйăмсен палитри калама çук пуян. Пурне те каласа тухма май çук. Çын сисĕмĕсем вара вĕçĕхĕррисĕр. Сисĕмлĕх вăл, пирĕн шутпа, ăнлавпа çыхăнман. Сисĕм, каларăмăр, вăл ÿт сивве, ăшша, хытти, çемçине пĕлни. Вăл хăй тĕллĕнех пулса пырать. Туйăмсем вара пысăкрах шайра пулса пыраççĕ. Вĕсем чуна пырса тивеççĕ, ăса кĕреççĕ. Мĕнле те пулин вăйлă туйăма чĕре кăна мар ас тăвать, вăл ген шайне кĕрет, ăса куçать. Тепĕр чухне вăл ĕмĕрлĕхе турă пичет çапнă пекех.

Малтанрах ăнлавлă туйăм пирки сăмах пулчĕ. Наукăра ăна интуици теççĕ. Кун çинчен тĕплĕнрех калаççан та юрать. Интуици, шалти ăнлавлă туйăм тени. Вăл пĕр сисĕнкĕсĕр, кĕтмен çĕртен пырса çапать. Инсайт, теççĕ. Шалти туйăм чи тĕрĕсси. Вăл нумай вăхăт хушши шыраса ĕçлесен кăна идея шайĕнче питĕ пысăк туйăмлăн сиксе тухать. Ахальтен мар Архимед «эврика!» тесе кăшкăрса чупнă, Сиракуз урамĕсем тăрăх, Герон патша задачине шутласа кăларнă хыççăн.

Интуици логики паллă мар. Анчах та ку шухăшлавлă-туйăмра сылтăм тата сулахай пуç мимин çурма шарĕсем пĕрпĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени паллă. Философиллĕ каласан, интуици логики ăнлавпа туйăм пĕрлĕхĕнче. Шалти туйăм пирки халĕ нумай калаçаççĕ, ăна аталантармалли мелсене вĕренеççĕ. Тĕслĕхрен,

ăс вĕçтерме, ĕмĕтленме, медитаци тума вĕренсен лайăх. Ун пек çын чи йывăр проблемăна та темле урăхларах мел тупса татса пама пултарать.

Ĕненӳ пирки шухăшласан аван. Ĕненӳ калама çук пысăк туйăм. Вăл пĕлӳ никĕсенче. Мĕне те пулин пĕлсе ăнланма тытăниччен эпир çав япала е пулăм пуррипе çуккине ĕненсе тăратпăр. Калăпăр, тĕнче пуррине, çын пурнăçне, юратупа туслăха, юлташа эпир чи малтан, пуçпа ăнланса иличченех, ĕненсе тăратпăр. Ĕненекеншĕн ĕненӳ чи пысăк чăнлăх. Хăйĕн ĕненĕвĕшĕн çын пуçне хума та хатĕр. Турра ĕненекен хăйĕн турришĕн тепĕр çынна та вĕлерме пултарать. Ĕненӳпе пĕлӳ хушштнче ăслăх пур. Ăсси çын тĕнчене урăхларах туять. Вăл питĕ лăпкă, çирĕп кăмăллă. Ним çине те тӳрех сиксе ӳкмест, хыпса çунмасть. Ваттисем хушшинче ун пек çынсем нумай. Пурăнăç туйăмĕ вĕсен пачах урăхла. Тепĕр чухне хăшĕ-пĕринчен «мана тек ĕнтĕ нимех те кирлĕ мар», тенине те илтме пулать. Ку нирвана патне çывăх. Нирвана лăпкăлăхĕ çынна пурăнăçран уйăрать. Урăхла каласан, вĕсем хăйсене хăйсем турăсем пек туяççĕ. Турăлăх туйăмĕ пирки калама питĕ хĕн. Çапах та тепĕр чухне ахаль çын та хăйне турă пекех туйма пултарать. Ку вăл, калăпăр, темле кĕтмен кĕтретлĕ пулăмпа е япалапа тĕл пулсан килсе тухать. Кам тĕл пулман çуллахи ăшă каçсенче тĕлĕнмелле вăрттăн та тарăн тӳпери çăлтăрсемпе. Ун пек чухне чуна тем пырса кĕрет, ăш хыпса илет те таçта çити вĕçсе каяс пекех туйăнать. Çын хăйне хăй манать. Е, калăпăр, юрату туйăмĕ. Ку чухне çын турра çывăх. Ун чунĕ тĕнче чунĕ пек, шухăшĕ пысăк, туйăмĕсем тарăн та ăслă. Юрату ыйтнипе вăл тем тума та хатĕр. Тĕлĕнмелле те, çав вăхăтра вăл чăнласах калама çук пысăк ĕçсем тăвать.

Пурăнăç туйăмĕсем, куртăмăр, сисрĕмĕр те, тĕрлĕрен. Çапах та тата çын интересĕ пирки шухăшлас килет. Ку туйăм та чи пысăккисенчен пĕри. Çын хăйĕн интересĕпе пурăнать. Пĕр иккĕленмесĕр калама пулать. Интерес пур-тăк, пурăнăç туйăмĕ те пур. Интерессем пĕтсен вара, пурăнăç сӳнет, çын вилет. Интерес тени хăй хальлĕн сиксе тухмасть. Чăн малтан çын пурăнăç йывăрлăхĕсемпе тĕл пулать. Пĕрисем йывăрлăх умĕнче аптăраса тă-

раççĕ, макăрса та яраççĕ. Тепĕрисем çине тăрса, ку интереслĕ-çке тесе, малалла талпăнаççĕ. Йывăрлăха çĕнсе илекеншĕн кăна пурăнăç интереслĕ. Ĕç тени, аса илĕр-ха, мĕн те пулин ăнмасан, интерслĕрех. Çын хăй те, ăна палласах пĕлсе çитмен те, хăй патне туртать. Пĕлни, йывăр марри вара туйăм-сисĕме çивĕчлетмест. Пĕлсе çитни пире интереслентермест. Интерес туйăмĕ ĕмĕтпе, тĕллевпе питĕ тачă çыхăннă. Çитменнине çитерес килет-çке-ха. Ĕмĕт вăл тутлă кăна мар, вăл темле иллюзине, тĕлленчĕклĕхе кĕртсе ӳкерет те хăйĕн ытамĕнчен вĕçертмест, тутлăн асаплантарать. Çын вара хăйĕн ĕмĕчĕ хыççăн кайса тĕмсĕлсе çӳрет. Кун пек çын пирки «урăх тĕнчере» теççĕ. Çапла ĕнтĕ, ĕмĕт тĕнчи вăл урăх. Кунти тĕнче мар. Малашлăхра таçта тем те пур пулĕ, анчах ун патне çитме тем тĕрлĕ ĕç тумалла. Унта çитме май çуккине пĕле тăркачах нумай чухне вара ĕмĕтленетпĕр, тутлă-ха та.

Ултавлă туйăм пирки те калаçас килет. Чăваш «суя, çур пурăнăç», тет. Суйни вăл чăнлăха ятарласа улăштарса кăтартни. Ун чухне суяпа чăнлăха уйăрма çук, вĕсем йăлт хутăшса каяççĕ. Суйни чăнласах тепĕр чухне ĕç тума, пурăнма пулăшать. Чăнлăх вара ним те мар ура хурать. Суякан çын туйăмĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр, йăлт-ялт. Ун пеккисене яка, якăлти теççĕ. Суя çын лĕхĕлтетсе савăнса тăрать. Улталарăм-ха, тет. Кирек хăçан та вăл суйса хăйне мĕнле те пулин усă кӳрет, çын шучĕпе. Çавăнпа та вăл хăйне канлĕ туять, суйнăшăн пĕрре те пăшăрханмасть. Мĕнле калаççĕ-ха, «çăра шывра пулă тытать». Хальхи вăхăтри аптраман таврашĕсен туйăмĕ-пулăмĕ ку.

Суя пурăнăçа хирĕç тăракан туйăм та пур. Пурте пĕлетĕр, ку вăл чăнлăх тата тасалăх туйăмĕсем. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пурăнăç çак туйăмсем çинче тытăнса тăрать. Чăнлăхпа тасалăх пулман пулсан, тĕнче тахçанах ишĕлсе анмалла, ăна темле шуйттана сутса янă пулĕччĕç. Чăнлăх тени вăл ăнлавпа япала пĕр килни. Эпир тĕнчене тĕрĕсех ăнланатпăр пулсан, чăнлăх çуралать. Чăнлăхшăн çынсем çунса кайма хатĕр. Çапла пулнă та. Кунта тӳрех Джордано Бруно аса килет. Чăнлăх туйăмĕ питĕ пысăк. Эпир хамăра никама та улталама памастпăр. Анчах пурăнăç чеерех,

пĕрех улталать. Пирĕн шутпа, çынна, çут çанталăка, халăха улталама çук. Вĕсем чăнлăх паллисем. Чăнлăха пĕлмесен çын пурăнăçра аташса каять, кирлĕ çулне тупаймасть. Чăнлăха тупма çăмăл мар, шыравĕ чылай асаплантарать. Тупсан вара тĕлĕнмелле çӳллĕ туйăм сана çавăрса илет те, тӳпенех вĕçтерет. Чăнлăх хăватлă, ăна çĕнтерме çук. Кирек мĕнле улталасан та, суйсан, йăнăшсем тусан та, вăл пĕрех, вăхăт иртсен, çиеле тухать.

Тасалăх пирки те çавнах калама пулать. Таса япалана варалама çук. Тасалăх туйăмĕ çынна вăй хушать. Халь тин ăна никам та çĕнтереймĕ. Мĕн-ма тесен, вăл, таса. Кăшт кăна вараланнă пултăр çын, çылăха кĕнĕ тейĕпĕр, çавăнтах вăл хăйĕн вăйне çухатать. Таса япалапа, çынпа хутшăнсан тасалатăн, таса маррипе вара вараланатăн. Мĕнле калаççĕ: «Пĕр кашăк тикĕт пичке пыла пăсать». Чăнлăхпа тасалăх туйăмĕсем çынна турăлантараççĕ. Анчах пурăнăç екки çылăха кĕмесĕр пулмасть. Кунта, тен, çын айăплă та мар. Мĕншĕн тесен, çын турă мар, нумайăшне пĕлмест, йăнăшать, çавнпа та хăйне çылăха кĕнĕ пек туять. Тасалăхне çухатсанах вара вăйсăрланать. Ахальтен мар пулĕ чиркӳ çылăха каçарттармалли мелсем шутласа кăларнă. Турă, пачăшкă урлă ыйтсан, каçарать иккен. Чăвашăн вара урăхларах. Турă ырă ĕç тусан кăна каçарать. Ырă ĕç тусан, апла, эсĕ каллех таса, вăйлă, телейлĕ. Эпир вĕт телейлĕ пулма çуралнă. Телей çуккă-тăк, темле пысăк ĕç те пĕчĕкленет.

Пĕтĕмлетсе каласан, пурăнăç туйăмĕсем, кирек мĕнле пулсан та, вĕсем телейлĕх патне илсе çитермеллех. Çав туйăм патне туртăнать пурăнăç. Пурăнăçăн тĕп тупсăмĕ телейлĕх. Телей çуккă-тăк, пурăннин усси те çук. Çав туртăмсем пирки калаçса пăхарха.

## 5.2. МАЛАШЛĂХ ТУРТĂМĔ

Малашлăх туртăмĕ, паллă, туйăм çине таянса палăрса пырать. Çапах та вăл, мĕнле калăпăр, ытла курăнса та пымасть.

Ытларах чухне вăл пирĕн пурăнăçра пурăнма мĕн кирлипе çыхăннă. Çавăнтан пуçлар-ха. Унтан вара малалла та кайăпăр.

Çын кирек хăçан та хыçалтине курса малалла утса пырать. Иртни пĕлӳ кăна мар, тĕрек те парать. Ĕлĕкхи пек тусан йăнăш пулмасть, тетпĕр. Эпир иртнĕ вăхăтра пурăнатпăр. Çав вăхăтрах малашлăхсăр та пурăнăç çук. Малашлăх пурăнăçĕн тĕп вăйĕ. Аваллăх та, паллах, вăй парать. Анчах аваллăх вăйĕ ытларах ăспа çыхăннă. «Ăçта ӳкессине пĕлнĕ пулсан, улăм сарнă пулăттăм», теççĕ. Пуласлăха вара эпир пĕлместпĕр. Те синкерлĕ вăл, те хаваслă, калама хĕн. Пуласси йăлтах ăнсăртпа çыхăннă. Тата питĕ сикчевлĕ вăл. Чăн малтан, пурăнас тесен, пирĕн апат хăть çимелле. Апатне çисен çылăхсемпе чăнлăхсем пирки те шутласа илме пулать. Çавăнпа та А. Маслоу пурăнăçа çынна чи малтен мĕн кирлипе çыхăнтарать[1]. Апат пулсан çын пурăнать. Мĕнле пурăнатăн, тесе ыйтсан, чăваш «апат тăрăх» тет. Кунта чи кирлине палăртнă. Апатсăр пуçне кирлĕлĕх пирамидинче (пирамида потребностей) ытти усăллă япаласемпе пулăмсем çинчен те каласа тухнă. Сăмахран, çынна хăтлăх, хӳтлĕх, информаци кирлĕ. Пурăнăçра чи кирлипе тивĕçтерсен кăна çын тĕнче ырлăхĕпе усаллăхĕ, хăйхаллĕхĕпе хăй вырăнĕ çинчен шутлама пуçлать. Мĕнре-ха пурăнăç сĕмĕ (смысл), тет. Ăс-тăн шайĕнче шутласси, каларăмăр, хырăм тăрантмасăр пулмасть. Анчах та çав чи кирлĕ япаласем ал айĕнче çуккă вĕт-ха. Вĕсем таçта, пулаççĕ-и вĕсем ыран, пулмаççĕ-и, паллă мар. Çавăнпа та пулас пурăнăç пире хăратса тăрать. Çав вăхăтрах хăй патне туртать. Пурăнăç туртăмĕ эпир хамăра мĕнпе тивĕçтерес тенипе çеç мар, паллах, палăрать. Малашрăхра мĕн тăвас тенипе те çыхăннă вăл. Пурăнăç тĕллевлĕ пулăм. Тĕллев паянхи пурăнăçа йĕркелет. Çавăнпа та тĕллев çинчен ытларах та калаçма тивет.

Телеологи пĕтĕм тĕнчене тĕллевлĕ тет. Космос та, биосфера та, общество та, çын та тĕллевсĕр пурăнаяс çук. Антроплă принцип ăнлантарса панă тăрăх, тĕнче аталанăвĕ çын (наблюдатель) пуррипе çыхăннă. Константăсен виçи тĕнче пуçламăшĕнчех

---

[1] Маслоу А. Новые рубежи человеческой природы. М.: Смысл, 1999. 425 с.

пурăнăçа кирлĕ пек йĕркеленĕ. Космос аталанăвĕ ăслă çын килнипе вĕçленмелле пек килсе тухать.

Çын хăй умне тĕллев лартма пĕлет. Çав тĕллев ертсе пырать те ăна пурăнăç çулĕ тăрăх. Тĕллевсĕр çын çук. Çынна тĕллев системăлать. Тĕллев çук-тăк, çын та çук. Вăл тӳрех выльăха тухать. Тĕллеве пурăнăçлас тесен нумай ĕçлемелле, нумай пĕлмелле, тата чылай аталаннă технологи кирлĕ. Технологи тесе анлă пĕлтерĕшпе калатпăр. Технологи вăл ĕç майĕ те, ĕç хатĕрĕ те, ĕç алгоритмĕ те, ĕç япали те, тата ытти те. Тĕллев технолгиллĕ япала. Енчен те технологи çук пулсан, тĕллеве ĕмĕт теме пулать. Çын ĕмĕтленет. Ахальтен тенĕ пек ĕмĕтленни те пур. Анчах та питĕ хытă, куç умне малашлăхăн тĕрлĕ сăнарĕсене кăларса тăратса ĕмĕтленсен, паллах, ĕмĕт пурăнăçланатех. Ахатльтен мар вĕт, мĕнпур фантастикăллă идейăсем халь тин пурăнăçланчĕç. Тĕслĕхрен, Гарин гиперболоичĕ. Лазер тупă халĕ тин фантастика мар ĕнтĕ. Унпа пур çĕрте те усă кураççĕ. Ĕмĕтленнисенчен сакăрвунă процент ытларахăшĕ пурăнăçланать теççĕ. Апла, малашлăха кĕрес тесен, чăн малтан, ĕмĕтленме вĕренес пулать. Технологи каярахпа килет. Ун чухне тин мĕн ĕмĕтленни чăна тухать. Халĕ тин ĕнтĕ çăлтăрсем патне те час вĕçĕпĕр.

Тĕнчере, каларамăр, пур япала та тĕллевлĕ. Кăна ăнлантарса парас тесессĕн, синергетика вĕрентĕвне аса илмелле пулать. Синергетика калашле, кашни процесăн хăйĕн аттракторĕ пур. Малашлăх мĕнле пуласси çав аттрактор мĕнле çуралса аталанса пынинчен килет имĕш. Çак самантра эпир ун çинчен, тен, нимĕн те пĕлместпĕр. Анчах та нумай та вăхăт иртмĕ, çав аттрактор палăрĕ те куç умне тахçанах палăртнă йеркеленнĕ япала пек сиксе тухĕ. Ку пулăм тĕнче хăйхальлĕн аталанма пултарнине кăтартса парать. Тĕнче, апла, хăйĕн тĕллевне хăйех лартать, хăйех пурăнăçлать. Малашлăх туртăмĕ, апла, иртнинче. Калăпăр, эсир халĕ тата çакăнта пĕр хăй тĕллĕн аталанса кайма пултаракан ĕç турăр. Сирĕн ĕçĕр пĕтмест, малалла аталанса каять, вăйланать. Ăна ыттисем те тума пуçлаççĕ. Тепĕр темиçе çултан тейĕпĕр, ĕç хăйĕн вĕçне çитсен, пурте вăл ăçтан пуçланса кайни çинчен шухăшлĕç те, кирек мĕнле япала та тахçан мĕн пулнипе çыхăннине ăнланса

илĕç. Мĕнпе çавăрăнса килĕ-ха, эпир тунă ĕç. Кун пирки ним те калама пултараймастпăр. Анчах пуçарса янă ĕç хăйне пĕлет, кирек мĕнле ĕç те ăслă ĕç. Унăн пуçĕ те, вĕçĕ те пур, мĕншĕн тесен вăл хăй тĕллĕн аталанать. Çавра технологи, терĕмĕр. Миçе çул каярах пулĕ упăте майлă çынсем чултан ĕç хатĕрĕсем тума пуçланă. Халĕ тин, акă, пăхăр-ха, космос карапĕсем тумалăх технологи аталанса çитнĕ.

Ку çеç те мар. Малашлăх ăнсăртпа çыхăннă терĕмĕр. Чăн та, сикчевлĕ те пурăнăç хӳри пăрăнăçлă та хуçăклă самантра ăнсăрт тени килсе çапать. Ăна инкек теме те пулать. Мĕншĕн тесен çав самантран çын пурăнăçĕ, кирек мĕнле япалан е процесăн та, йăлт улшăнать. Тĕнче чипер аталанса пынă çĕртех урăх çулпа кĕрсе каять. Çын та çавах. Тĕслĕхрен, хăвна пит çирĕп туйман чухне санпа тем те килсе тухма пултарать. Чирленĕ чухне пушшех те. Калăпăр, эсĕ тепĕр çынпа ăнсăртран тĕл пултăн. Вăл сана пулăшма та, çапса пăрахма та пултарать. Ун чухне пурăнăç йăлт улшăнать. Бифуркаци вырăнĕ, е пăнчи, теççĕ ăна. Пĕр тикĕс пурăнас тетĕн пулсан, ун пек сикчевлĕ вăхăт вырăнĕсене лекмелле мар.

Çак пулăмсене пула ĕнтĕ малашлăхăн палли курăнсах каймасть. Çапах та çын малашлăха чылай витĕр курса тăрать. Унăн малашлăха кăтартса килтерсе тăракан ăс-тăн механизмĕ (механизм опережающего сознания) пур. Ăна Анохин академик тупса палăртнă. Мĕнле япала-ха вăл, малашлăха кăтартса килтерсе тăракан механизм. Çын хăйĕн пурăнăçĕнче темпе те тĕл пулать. Кашни тĕл пулу событи. Вăл ăна ас туса юлать. Каярахпа, енчен те вăл çав событисен ĕречĕпе тĕл пулсан каллех, пуçра хăвăрттăн кăна мĕн хыççăн мĕн пуласси палăрса илет. Пулăмсем вĕсем пĕри те ахальтен килмеççĕ. Вĕсем пурте сăлтавлă. Ăнт, çавă сăлтавлă çыхăну палăрать те. Вара çын, мĕн хыççăн мĕн пулассине пĕлекенскер, халĕ çавă пулать тесе чăннине тĕллесе кăтартать. Çавăн пек килсе тухать пурăнăçра, чăнласах. Апла, нумай пурăнса курнă ăслă çын чылай мала курма пултарать. Çавăн пек çынна ăсси, теççĕ те ăнтĕ.

Малашлăх яланах халь-халь çитессĕн туйăнать. Çын ун патне ăнтăлать. Тепĕр чухне хăвăртрах çитес тесе хăйне хăй те хĕрхенмест. Палăртнă малашлăх хăй тĕллĕн килмест. Уншăн тăрăшма тивет. Çын идеалшăн çапăçса вилме те хатĕр. Малашлăх нумай чухне идеализациленет. Идеал патне, паллă, çитме çук. Анчах та çын пĕрех ăнтăлать. Революциллĕ тапхăрсенче идеал юн юхтарттарать, пĕтĕм пурăнăçа та пĕтерсе хума пултарать. Малашлăха ăнтăлни, апла, пурăнăçшăн хăрушă та пулма пултарать. Çапах та идеалсене çын тата общество пурăнăçĕнчен кăларса пăрахаймăн. Вĕсем пирĕн пурăнăçа чылай çирĕп тытса йĕркелесе пыраççĕ. Çын хăйĕн куçĕ умĕнче тĕлĕнмелле туйăмлă та хитре ÿкерчĕк тытса тăма пултарать. Хитре çурт-и вăл, е ырă общество, е хăватлă пур енчен те тĕрĕс патшалăх... Тем тĕрлĕ идеаллă япалана та шутласа кăларма пулать. Анчах та вăл пирĕн ăсра анчах. Пурăнăçа кĕртес тесен вара фиаско, казус кăна пулать. Хальлĕхе никам та идеалпа пурăнăçа пĕр килтереймен. Ун пек тума кирлĕ те мар. Тĕнче çавна питĕ çирĕппĕн кăтартса парать. Идеал тени малашлăх туртăмĕ шайĕнче кăна юлтăр. Пире вăл хускаттăр, аптраттăр, анчах та ман пурăнăç çак идеал пек пулать тесе никам та ан калатăр. Унсăрăн хурлăхпа инкек-синкек хуçаланма, юн юхма пуçлать.

Экстраполяци текен математика ăнлавĕ пур. Тепĕрисем ăна тенденци тесе те палăртаççĕ. Калăпăр, паян эпир çапла пурăннă пулсан, ыран мĕншĕн çапларах пурăнмалла мар тет. Паян мĕн патне çитнине пăхса, ырана та куратпăр. Куратпăр çеç мар, палăртатпăр та. Анчах та тĕнче пĕрмай тикĕс килмест. Унта тумхахсем тупăнаççĕ. «Хут çинче чиперехчĕ, таçтан тухрĕç çырмасем», тет халăх. Ку тумхахлăх тĕнче тÿрĕ (линейлă) кăна мар, кукăр (линейлă мар) пулнине те кăтартса парать. Тĕрĕссипе, тÿп-тÿрĕллĕх тĕнчере çук. Пирте пурте кукăр-макăр. Тем пек тÿрĕ утас тесен те кукăртатăн хăвăн çулна. Çавăнпа та кĕтни вырăнне урăххи сиксе тухать. Малашлăха пĕлес тесен, экстраполяци саккунĕсене пĕлмелле. Енчен те çав саккунсене, пурăнăç фунцийĕсене чухласан, паллах, пулассине чылай тĕрĕс палăртма пулать.

Тепĕр пулăм та çыхăннă пуласлăхпа. Тĕнчере инвариантсем пур. Çавсем çине таянса эпир ку тĕнчере тĕрĕссипе, тĕппипе нимĕн те улшăнмасть тесе калама пултаратпăр. Пур япала та хăй вырăнĕнче юлать. Улшăну тени эпир хамăр улшăннине, урăхла шутланине кăна пĕлтерет. Е пачах тепĕр майлă. Тĕнче улшăнать, эпир вара улшăнмастпăр. Пирĕншĕн малашлăх та, иртнине те çук. Эпир пĕр майлă пурăнатпăр. Ун пек улшăнми ĕмĕрлĕхе кĕрсе ӳксе пурăнма, паллă, пире питĕ йывăр. Тепĕр тесен, иртни-пулни пирĕнтех мар-и вара. Обществăра та çавах. Акă, пысăк хулаобществăра авалхи пурăнăç община тапхăрĕ те (бомжсем ура айĕнче мĕн пуррине пуçтарса тăранса пурăнаççĕ)), чуралăх тапхăрĕ те (ĕçленĕшĕн укçа тӳлемесĕрех кăларса яраççĕ), феодал тапхăрĕ те («вăл начальник, эс ухмах»), капитализм тапхăрĕ те пĕр вăхăтрах хуçаланаççĕ. Мĕнле обществăра пурăнатпăр эпир, пĕлме те çук. Малашлăх туртăмĕ, апла, малалла кăна мар туртать. Каярахрине те туртса илме пултарать паянхи пурăнăçа. Ку тĕлĕнмелле пулăм. Тепĕр енчен, тен, тĕлĕнмелли те çук. Мĕншĕн тесен икĕ хутчен хирĕçлесе тунă ĕç диалектика саккунĕпе кивĕ çĕрех илсе çитерет, анчах çав кивĕ тенĕ вырăн çапах та çĕнелет, урăхларах, çӳлĕрех шайра курăнса каять. Малашлăх, пĕр сăмахпа каласан, аваллăхсăр пулмасть. Кирек мĕнле пулас пулăм та иртнĕ опыт çине таянать, ăна урăхлатса аталантарать. Япаласен çавăрăнăшĕ те улшăнусăр тăмасть. Кашни циклта çавран пахалăхĕ улшăнатех. Мĕншĕн тесен вăхăт хăй шăвать, апла, япалан анлăшĕ (пространстви) те улшăнать. Вăхăтпа анлăх уйăрălми çыхăннă.

Кирек мĕнле пулсан та малашлăх пире илĕртет, улталать, чăн тăвать. Тĕнче малашлăх пуррипе кăна аталанать. Малашлăх нумай тĕллевлĕ. Хăшне суйласа илсе пурăнăçа кĕртесси кашни çыннăн хăйĕн ирĕкĕ. Кунта пĕр япала кăна паллă: тĕллевлĕ пурăнмалла. Вара çын пулатăнах.

## 5.3. ХĂЙ ТАЛАЙ ÇЫН

Çын пурăнăçĕнчи чи хăватлă пулăм вăл, пирĕн шутпа, хăй талайлăх. Хăй талайлă çын кăна хăйĕн пурăнăçне хăйне кирлĕ пек тума пултарать. Хăй талай çын кăна тулли пурăнăçпа пурăнма пултарать. Хăй талайлăх питĕ пĕлтерĕшлĕ пулсассăн, мĕнха вăл талайлăх. Кам вăл хăй талай çын.

Чăн малтан, талай тени, пирĕн шутпа, тĕрĕслĕх ăнлавпа çыхăннă. Талайлă çын тĕрĕс пурăнать. Никама та улталамасть, ĕçлет, пуринпе те талать. Право йĕркинче «талион» термин пур. Вăл кашни хутшăнăва виçеллĕ (пропорциллĕ) тума ыйтать. Калăпăр, пани-илни, кӳрентерни-каçарттарни, тăвуллă хурав-ыйту тата ытти те, пурте талайлă пулмалла. Унсăрăн, виçи çухалсан, тĕрĕс мар пурăнăç пуçланать. Ырă ĕçе ырăпа тавăрса памалла, усаллине усалпа. «Çăкăр-тăвар хире хирĕç пултăр», тет чăваш. Тепĕр чухне çынран, «унпа талман-ха», тенине илтме пулать. Апла, вĕсем талайлă пулайман-ха, талас тесен, чăн малтан, калаçса татăлнине пурăнăçлас пулать.

«Хăй талайлă» тени вара тепĕр сĕм кĕртет. Ку ăнлав хăй саккунлă тенине пĕлтерет. Çын хăй шутласа кăларнă, хăй тытса пыракан саккунпа пурăнать. Ун пек те тума пулать-и тесен, йĕри-тавралла е хăвăр çине çавăрăнса пăхăр, тӳрех пĕр япала асăрхатăр. Çын яланах хăй халлĕн пурăнасшăн, çын каланине итлесшĕн мар. Енчен те кам та пулин пĕр майлă каласан, кирек хăçан та вăл тепĕр майлă тăвать. Çынна, тĕрĕссипе каласан, итлеттерме çук. Вăйпа хистесе ху майлă пурăнтарас тесен те вăл пĕрех хăйĕннех перет. Хăй талайлăх çынра калама çук вăйлă вырнаçса ларнă. Çавă тăвать те унран çын тенине. Сăмахран, урăх вăя пуçĕпех парăнсан, вăл хăйне çухатать, çын пулма пăрахать. Унăн шалти чи пысăк вăй, апла, хăй талайлăх.

Ху талай пулма питĕ йывăр. Тĕнче пĕрмаях хăйĕнне ыйтать. Ыттисем те пурте хăй талайлă, хăйсен саккунĕсене пурăнăçлама ыйтаççĕ. Çав хăй талай хутшăнуллă пурăнăçра хăвăн кăна пурăнăçа йĕркелесе яма çăмăл мар. Мĕнле калаççĕ-ха, эсĕ тем-

ле питӗ вӑйлӑ пулсан та, санран вӑйли тӗнче пур. Ҫемҫерех ҫынсем тӗнче ҫине йӑвантараҫҫӗ. Ун пек пурӑнма ҫӑмӑлрах. Хӑвӑн ҫине илсен вара йывӑртарах. Ҫине тӑракан ҫын вӑл, тӗрӗссипе, сахал. Ҫапах та пур. Чӑваш тепӗр чух, ҫапса пӑрахсан та парӑнмасть. Талайлӑх, апла, тепӗр енчен парӑнманлӑхпа ҫыхӑннӑ. Тӗнчепе тӗрӗс ҫыхӑнни ҫителӗксӗр, унпа ӑна пӗр парӑнмасӑр ҫыхӑнмалла. Хальхи вӑхӑтри аптраман таврашсем тӗнчене парӑнарах пулса, улталаса, майлаштарса пурӑнаҫҫӗ. Ку хӑй талай ҫыншӑн ют. Вӑл тӗнче темле улшӑнсан та ун хыҫҫӑн каймасть, ҫирӗп тӑрать. Унӑн хӑйӗн саккунӗ пур. Тӗнче хумӑн-хумӑн килсе ҫапсан та хирӗҫ тӑрать. Кам-ши вӑл, ҫапла хурахлатнӑ тӗнчене те хирӗҫ тӑма вӑй тупакан ҫын.

Вӑл, паллӑ, хаклавлӑ ҫын. Хаклӑх тени, ӑна пӗрре суйласа илнӗ пулсан, ӗмӗрлӗхе. Ҫав хаклӑха кирек мӗнле вӑйӑмра та сутас ҫук вӑл. Ун пек ҫынсем чӑвашра ҫук мар. Вӗсем амӑшӗн килне, тӑван ҫӗре, ачисене никама та памаҫҫӗ. Ыттисем пек килӗсене хупса, ачисене юта вӗрентсе, тӑван ҫӗре пӑрахса тухса каймаҫҫӗ. Аптраман таврашсемшӗн пӗтӗм тӗнче тӑван ҫӗршыв пулсассӑн, парӑнманнисемшӗн тӗнче сӑпки тӑван кил пулса тӑрать. Кунта питӗ пысӑк уйрӑмлӑх. Тӗслӗхрен, енчен те эсӗ анкарти хыҫӗнчи ҫутӑ уйсене юратрӑн-тӑк, эсӗ вӗсене нихӑҫан та пӑрахаймӑн. Таса уй сана тӗрӗслесех тӑрӗ. Тӑриллӗ «янкӑр кӑвак тӳпе те, кӗмӗл ҫутиллӗ юр» (П. Яковлев)[1] сан чунран нихӑҫан та тухмӗҫ. Ҫакӑн йышши хаклӑха ӑнланса тытса пыни пулать те ӗнтӗ чӑн талайлӑх. Малалла каласа кайсан, ку вӑл пӗр нихӑҫан та иксӗлми ҫухалми юрату. Ку хаклӑх сана пӑркаланма, суйма, ҫынна пӑрахма памасть. Ҫын каласа хӑртса пӗтерсен те пӗрех «хура пулсан та хамӑн» тет. Ҫакӑн пек хаклавлӑ ҫын тытса тӑрать те тӗнчене. Ун йышши хаклӑхсем чылай. Ҫӳлерех каланӑччӗ, аса илтерӗпӗр. Вӗсем ырӑлӑх, тасалӑх, ҫынлӑх, чӑнлӑх тата ытти те. Тӗнчи улшӑнать терӗмӗр, ҫынни вара, хаклӑхлӑскер. ҫук, улшӑнмасть. Ун пек ҫын ӗнтӗ вӑл турӑ пек курӑнать. Кунта темле вӑрттӑнлӑх. Ҫав вӑхӑтрах кунта нимле вӑрттӑнлӑх та ҫук. Хӑй

---

[1] Яковлев П.Я. Уй варринче. Сӑвӑсем, поэма. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1987. – 79 с.

талай çын хăй тĕнчине йĕркелеме пултарать. Çавă тĕнчере вăл чăн хуçа, унтах вăл хăй саккунĕпе пурăнать. Çав саккун пысăк тĕнчене пĕрре те хирĕçлемест. Вăл тĕнче саккунех, анчах та хăй майлăскер. Çын тĕнче е çут çанталăк саккунĕсене хăйне кирлĕ пек çавăрса хунă та хăй тĕнчине мĕнле кирлĕ çапла туса хунă. Çапла вара унăн хăйĕн саккунĕ, унăн хăйĕн тĕнчи пур.

Хăй хальлĕн тытăнса тăма пултаракан уйрăм тĕнче пирки калаçса кайсан, акă мĕн калама пулать. Вăл хăй пĕр тытăмлă япала е ĕç. Ăна йĕркелесе яраканĕ, паллă, чăн хуçа. Мĕншĕн тесен çав ĕç е япала вăл вăй хунипе кăна тытăнса тăрать. Тата, каларăмăр, хăй çаврăнăçуллă тытăм-структура. Çак тĕнчере çавра тытăмлă япаласем, циклсем кăна çирĕппĕн упранса аталанса пыма пултараççĕ тесе каланăччĕ. Хуçа ĕçĕ те çапла çавра япалаллă тытăм пулмалла. Калăпăр, куç умĕнчи ялти пĕр çавра хуçалăх: ана, ӳсен-тăран, выльăх-чĕрлĕх. Енчен те çакă çавралăха татсан, пĕр элементне кăна пĕтерсен, хуçалăх саланать. Тĕслĕхрен, килте выльăх усрама пăрахсан, ана кăна мар чухăнланать, çав кил те пĕтет. Çапла вăл çавралăх саккунĕ. Ку пĕр енчен тĕнче саккунĕ, тепĕр енчен хуçа тытса пыракан саккун. Вăл çынна хăй тĕнчине туса хума май парать. Çав тĕнче вара урăх никама та пăхăнмасть. Кун пек çаврăнăçуллă хуçалăх хăй тĕллĕн пурăнма пултарать. Ун хуçи хăй хускатса янă çавраран ытла иртеймест, хăй те çавăнтах çаврăнкалать. Çавăнпа та вăл, çавă çавралăх саккунне пăхăннă çын, калама çук хăй талайлă çын. Паллă, çын йĕркелесе янă çавра хуçалăх ытти тĕнчепе пĕр çыхăнусăр пурăнма пултарать тени тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Çыхăнусем пур, калăпăр, кирек мĕнле хуçалăх та çут çанталăк хутлăхĕ мĕнле пулнинчен килет. Анчах та, тĕнчепе вăл хăй хальлĕн пурăнса, хăй вăйлă пулса танлăн çыхăнать. Ку пачах урăх пурăнăç. Çын хăй тĕллĕн пурăнма, хăй ĕçне тума, хăй хальлĕн юратма пĕлет. Апла, хăй талайлă çын хăй тĕнчинче чăн хуçа. Тĕнче улшăнни ăна ытла питĕ хытă пырса çапаймасть. Ун тĕнчи çирĕп тăрать, унта пурăнма шанчăклă, канлĕ. Хăй ĕçлесе хăй тĕнчипе пĕрле аталанса пырать ун пек çын. Ун пахалăхĕсем тĕнче пахалăхĕсем пулса тăраççĕ. Тепĕр майлă шутлани те тĕрĕс.

Халĕ тин çын парăнманлăхĕ ăçтан тухнине ăнланса илме пулать. Енчен те унăн хăйĕн хуçалĕхĕ, хăйĕн тĕнчи çуккă пулсан, вăл тĕнче тăрăх ăçтиçук пек кусса каять. Ăна мĕн калаççĕ, çавна тăвать вăл. Унăн хăйĕн саккунĕ те, хаклăхĕ те çук. Пурте çын пани е хистени кăна. Ун пек çынсем халĕ питĕ нумайланса кайрĕç. Ун пеккисене аптраман таврашсем теççĕ. Чăн та, вĕсем ниçта та аптрамаççĕ. Анчах та тĕнче аптрать. Çын хăй пăсăлни çитмест, ялсем пĕтеççĕ, уйсем хăраннă. Халăх тесен, халăхĕ пуррипе çукки сисĕнмест те. Акă мĕн патне илсе çитерет аптраманлăх. Аптраса ӳкменни лайăх пуль, анчах хальхи пурăнăçра пăхăнманлăх, парăнманлăх, хăй талайлăх кирлĕ. Енчен те ху çине тăмастăн пулсан, хăвна ху кăтартмастăн, эсĕ темле питĕ аптраман тавраш пулсан та пĕтетĕн. Мĕншĕн тесен санăн аптраманлăху вăл çын хыççăн кайса ун вăйне шута илни кăна. Ун чухне вара хăвăн тĕнчӳпе пурăнаймăн, йăлтах çын тĕнчине кĕрсе ӳкĕн. Çапла килсе тухрĕ те.

Кунта тепĕр калама çук вăйлă пулăм пур. Чăваш хăй патша тет. Мĕне пĕлсе каланă-ши, анчах та каланă. Патша тени пуç пулса тănине пĕлтерет. Темле влаç пур, апла, ун. Такама пăхăнтарать пуль. Кама-ши, пĕлме питĕ кăсăклă. Пурăнăçне пăхсан вăл хăй пур енчен те тĕнчене пăхăннă. Хăйне ытла пит палăртмасть. Чăваш хăйне питĕ сăпайлă тыткалать. Апла, тĕнче патши тесе калаймăн ун пирки. Тен, вăл шалти тĕнче патши. Çын чăнласа та хăйĕнпе хăй хуçа пулма пултарать. Мĕнле калаççĕ-ха, тĕнчене çĕнсе иличчен чăн малтан хăвна ху çĕнсе ил, теççĕ. Чăваш, куç кĕрет, хăйне хăй тыткалама пултарать. Вăл çирĕп, хытă, хăй талай. Тĕнчепе, каларăмăр, вăл ытла пит хутшăнмасть те. Унăн хăйĕн тĕнчи. Çапах та тулашри тĕнче пирки мар кунта сăмах пырать. **Чăваш хăй хуçалăхĕнче кăна хуçа, патша мар. Апла, вăл, çирĕплетсех калама пулать, шалти тĕнче патши. Ун чунĕнче хăй тĕнче. Хăй хаклăхсем, терĕмĕр. Çавсем тытса тăраççĕ те тĕнчесене. Шалти те, тулашри те патшаллă. Чăваш вăл чун патши. Хăй тĕнчин хуçи.** Тулашри аслă тĕнче вара ун аллинче мар. Унта урăх патшасем.

Çакă пулăмсем чăваш чылай хупă çын пулнине кăтартса параççĕ. Унăн хăйĕн чунĕпе хуçалăхĕ пур. Вĕсен хаклавĕ тĕнчепе пĕр килмесен те пултараççĕ. Çавă хупăлăх упрать те, çав вăхăтрах кансĕрлет те аталанма. Хăйĕн чунĕпе хуçалăхне пăрахнисем питĕ улшăннă халĕ. Вĕсем «аталаннă». Тĕнче çыннисем пулса тăнă. Эпĕ «хам патша» теекенсем вара пĕр вырăнтах тăрса юлнă. Япăх-и ку, калама хĕн. Çын хăйне хăй пăрахман терĕмĕр. Апла, вăл çав çынах пулса юлнă. Пăрахнисем вара камсем пулни паллах та мар. Аталаннă-ха вĕсем аталанасса, анчах та вĕсен, каларăмăр, хăйсен тĕнчи те, хăйсен саккунĕ те çук. Маргиналсем, теççĕ ун пек çынсем пирки. Питлесе каламастпăр. Пурăнăç чăнлăхĕ çавăн пек. Тĕнче улшăннă вăхăчĕн палăрăмĕ ĕнтĕ вăл. Хаклăхсене çухатнă тĕнче халĕ аташса кайнă пек курăнать. Çын тени халĕ ниме те пĕлтермест пек туйăнать. Анчах та ку, хăй талай çынсем пур чухне, пирĕн шутпа, ниме те мар. Çыннăн тата тĕнчен хăйĕн саккунĕ, хăй талайлăхĕ пур.

Ыйтусем

1. Пурăнăç сĕмĕ мĕнре.
2. Малашлăх туртăмĕ мĕн çинче йĕркеленет.
3. Кам вăл хăй талай çын.
4. Эпĕ хам патша тени мĕне пĕлтерет.
5. Аптраман таврашсем мĕншĕн нумайланса кайрĕç.
6. Тĕнчене парăнмасăр пурăнма пулать-и.

# 6. ПУРĂНĂÇ ÇĂЛКУÇĔСЕМ

## 6.1. ХĔРАРĂМ

Пурăнăç çăлкуçĕсем чылай. Чăн малтан, калас пулать, пурăнăç хăй, Реди принципне пăхăнсан, пурăнăçшăн çăлкуç. Мĕнпур чĕрĕ япалана чĕрĕ япаларан кăна çуратма пулать. Çак принципа тĕпе хурса шухăшласа кайсан, мĕнпур чĕрчунсене çуратакан биосфера та чĕрĕ теме пулать. Биосферăна çуратакан çĕр-планета та, апла, чĕрĕ. Çĕре çуратакан космос та чĕрĕ. Куратпăр, Реди принципĕ гилозоизм патне илсе пырать. Ку тĕнчере пурте чĕрĕ. Çапах та, кашни шайри япалан хăйĕн чĕрĕлĕхĕ. Биосфера чĕрĕ пулсан та ун чĕлхине илтмен-ха эпир. Унăн чĕлхи япала çаврăнăшĕ тейĕпĕр. Çĕрĕн вара чĕлхи мĕнлерех-ши. Хăшĕпĕрисем унăн чĕлхи катастрофа чĕлхи тесе ĕнентересшĕн. Космос вара мĕнле чĕлхеллĕ пулни пачах паллă мар. Тен, унăн чĕлхи шăплăх. Пурăнăç çăлкуçĕсем чăнласах нумай. Пире ытларах çынран çын тăвакан çăлкуçсем интереслентереççĕ.

Çыншăн çын çуратакан пĕртен пĕр çăлкуç вăл амăшĕ пулать. Пире пурăнăç анне парать. Ашшĕ пирки те кунта каласа хăварма пулать. Арçын хăйĕн генĕсене хĕрарăм урлă сарать, çавă анчах. Хĕрарăм вырăнне халĕ пробирка та пур теме пулать. Клонсене те ӳстерме пулать. Çапах та, хĕрарăмран иртме çук. Чăн çын пултаракан пурăнăçа анне кăна парать. Кам-ха вăл, хĕрарăм. Хĕрарăм вăл ача çуратакан «машина» мар. Ĕлĕкрех, тен, çапла та пулнă пулĕ. Халĕ вара вăл тин ирĕклĕ çын. Ача çуратас тесен çуратать, çуратас мар тесен, çуратмасть. Нимле укçа парса та, саккун кăларса та ăна ирĕксĕрлеме çук. Хĕрарăм хăйĕн чăн пĕлтерĕшне палăртас теет пулсан, ача çурататех. Анчах та халĕ хĕрарăм хĕрарăмлăхне мар, хăйĕн ăс-тăнлăхĕпе ĕçлĕлĕхне кăтартасшăн çунать. Ун чухне, паллах, ача иккĕмĕш вырăна юлать. Тĕлĕнмелле те, тата тепĕр сăлтав та пур. Хальхи хĕрарăм хăйне тивĕçлĕ арçын тупаймасăр хăшкăлать. Мĕншĕн тесен арçынсем те хăйсен арçынлăхне çухатса пыраççĕ. Пирĕн пурăнăçа, тен, майĕпен

матриархат йĕрки кĕрсе пырать. Хĕрарăм пуç пулса тăнă вăхăтра пурăнăç вара чăнласах хĕрарăм аллине куçать.

Эпир пăхса тухакан ыйту питĕ хирĕçтăруллă. Ăна татса парас тесен, пирĕн урăх шая куçмалла пулать. Чăн малтан, пурăнăç мĕнне урăхларах татса памалла пек. Пурăнăçа эпир япала, энерги тата информаци çаврăнăшĕ пек ăнлантăмăр. Ку ытла питĕ физикăлла ăнлантару. Пурăнăç физикăран аслăрах та ăслăрах ĕнтĕ вăл. Пурăнăç вăл чĕрĕ кăна мар, вăл тĕнче сĕмлĕ (смысл) пулăм. Ăна космос, матери хăй çуратать. Çын мĕне те пулин сĕмленсен кăна çын пулать. Унсăрăн вăл выльăх-чĕрлĕхрен çӳле каяймасть. Пурăнăç, апла, мĕне те пулин сĕмленни. Унăн темле тĕллев пур. Пĕр шухăшласан, тен, пĕтĕм космоса майĕпен ăслатасси е чĕрĕлĕх кĕртесси, калама хĕн. Çапах та паллă, кирек мĕнле япалан пĕлтерĕшĕ унăн сĕмне тупсан кăна палăрать.

Хĕрарăм та сĕмлĕ çын. Хăйĕн пĕлтерĕшне вăл ача çуратса çеç мар, тĕнче пĕлтерĕшне тупса палăртса кăтартать. Сăмахран, пĕтĕм цивилизаци хăрарăм ыйтнипе çуралнă тесе те калама пулать. Арçын хăй ĕçне хăрарăма кирлĕ пек йĕркелесе пырать. Юрату туйăмĕ ăна вăрçă кăна мар вăрçтарать, çурт та тутарттарать. Вăл хăй юратăвĕшĕн тем тума та хатĕр. Хĕрарăм хăтлă, хитре, ăшă хутлăхра пурăнтăр тет.

Хĕрарăм кăна çынран çын тума пултарать. Ача çуртĕнче ӳснĕ çын, шел пулин те, çын пулса çитеймест çав. Амăшĕ çумĕнче пулни хăйех пĕр сĕм. Çавăнпа та хĕрарăм ача çеç çуратни, чăнах та, çителĕксĕр. Чăн малтан, унăн хăйĕн сĕмлĕ çын пулмалла. Унăн ачи ахаль çын мар, вăл темле турă шайĕнче курăнмалла пек. Вара тин уншăн тăрăшса хăйне кăна мар, пĕтĕм тĕнчене çутă кӳрĕ вăл. Ун пекки, паллах, сахал. Анчах та, çак пĕлтерĕшпе ача çуратма тытăнсан, хĕрарăм чăнласа пурăнăç çăлкуçĕ пулса тăрассăн туйăнать. Апла, вăл хăй сĕм çуратать. Хĕрарăм хăй тĕнче пĕлтерĕшне, сĕмне кăтартакан çын.

Халĕ тин эпир, пачах урăх шайра ĕнтĕ, хĕрарăм мĕншĕн ача çуратма пăрахнине ăнланса илме пултаратпăр. Тĕнче хăйĕн сĕмне çухатнă. Хĕрарăм ача çуратни тĕнчене сĕмлеймест. Ача çуралнин пĕлтерĕшĕ йăлт çухалнă тесе каламăпăр, хĕрарăм ача

çуратсан тĕнче сĕмĕ кăшт хутшăнать, паллах. Анчах ку çителĕксĕр. Мĕншĕн тесен тĕнче хăй пĕлтерĕшне хăй çухатнă. Мĕншĕн тесен пурăнăç тĕнче тĕпĕнче мар халĕ. Пурăнăç чи сĕмлĕ пулăм. Тĕнче тĕпĕнче халĕ ăс-тăн шутлавĕ. Çӳлерех каланăччĕ: нумай ураллă пĕр хурт-кăпшанкă хăш урипе пусамалла халĕ тесе шутланă тет те, такăнса ӳкнĕ. Ăт, çавă пулса пырать те халĕ. Пурăнăç тени вара шутлавпа пĕр килмест. Вăл унран пысăкрах та чĕрĕрех. Пурăнăç вăл пурăнăç, вăл сĕм кӳрекен пулăм. Çавăнпа та сĕм çук тĕнчене нимпе те сĕмлеме май çук. Ача çуратни те ăна пĕтĕмпе улăштараймасть. Çавна кура хĕрарăм ап-тăраса ӳкет, ача çуратма пăрахать, хĕрарăм вара хăйĕн сĕмне малалла шырать. Шыраса тупайрать-и. Çавна шырасах пуç пулса пăхать, арçынланать, хăйне те манать.

Ачана «пробиркăра» çуратас тени те хĕрарăм хăй пĕлтерĕшне çухатнипе çыхăннă. Темшĕн эпир хамăра хамăр манса технологипе техникăна шанма пуçлатпăр. Техника çын мар вĕт-ха вăл, пулăшма тесен юрĕччĕ. Анчах, асăрăхăр, хĕрарăм вырăнне темле машина, технологи. Вăл темле кăткăс пулсан та, ача «çуратнă» пулсан та, пĕрех унран çын тăваймасть. Машина тепĕр машина кăна «çуратма» пултарать. Куç кĕрет, тĕнче хăйĕн сĕмне машинăра шырать. Сĕмĕ вара çынра, çынлăхра, çын пĕлтерĕшĕнче. Çакна ăнланса илсен машинăна йăлтах пăрахăçламалла пек. Ну-майăшĕ пăрахăçлаççĕ те. Вара тин çын хăйне шанса хăй аталанма тытăнать. Ахальтен мар халĕ чи пысăк хаклăх вăл ӳссе аталанса çитнĕ çын теççĕ. Çына вара, каларăмăр, амăшĕ кăна çуратма пул-тарать. Кунта, халĕ ăнлантăмăр, хĕрарăм пулни те çителĕксĕр. Чăн малтан çын кирлĕ, сĕмленĕ тĕнче тата темле турăлăх. Ачан ахаль çуралмалла мар. Ун пуласлăхĕпе пĕлтерĕшĕ калама çук пы-сăк. Тĕнче малашлăхĕ унран килет. Анчах та нумай чухне амăшĕсем çакна ăнланса çитеймеççĕ. Вĕсемшĕн ача тутă пултăр, çитрĕ те. Çавăнпа та ачана выльăх-чĕрлĕх шайĕнче ӳстереççĕ. Ун пек чухне çын тата халăх малашлăхĕ пирки калаçма çук. Ĕлĕкрех чăваш, ача ку тĕнчене çуралсан, «улпут килчĕ», тенĕ. Ара, улпут-ран асли ун чухне пулман-ха та. Тен, «помещик» сăмахпа та мар çыхăннă ку. Тăнласа пăхăр-ха, еплерех янăрать «улпут» тенĕ сă-

мах. Улăп, улла, аллах, олимп тата ытти те. Тен, «улпут килчĕ» тени «турă килчĕ» тенине çывăх. Çапла мар-и вара. Чăваш хăйне турă ачи тенĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче ача пĕлтерĕшĕ пачах урăхла иккен. Чăваш ача çураттарса тĕнче сĕмне пуянлатнă, тĕнчене турăлатнă. Çавна маннă хĕрарăм тепĕр чух ачине пăрахни те пулать. Пăрахать çеç мар, сутать те. Мĕн пулса иртет-ха пурăнăç çăлкуçĕпе, калама та хĕн. Паллă, халььхи хĕрарăм, амăшĕ тесе калама чĕлхе çавăрăнмасть, ачине ырă сунсах пĕтерет. Ун ачи, ӳссе çитнĕскер, кайран амăшне те, тăванне те палламасть. Хăйĕн тăван çĕршывне, халăхне пăрахать те ют çын пулса тăрса таптама тытăнать. Акă мĕн патне илсе çитерет çынна хăй сĕмне çухатнă тĕнче. Ача та халь тин ĕнтĕ турă ачи мар, вăл шуйттана тухать. Пурăнăç çапла çавăрăнса ӳкнине никамах та асăрхамасть. Ку питĕ вăрттăн пулăм. Çиелтен пăхсан, пурте йĕркеллĕ пек. Ачасем ӳсеççĕ патвар, хăюллă, ăслă. Анчах çав ачара турă чунĕ çук. Турă чунĕ вăл, аса илĕр-ха, К. Иванов поэминче мĕнлерех янăрать: «пĕчĕк куçĕ йĕрсен те йăваш тути йăлл! кулать». Пĕтĕмлетерех каласан, хĕрарăмран ача çуратакан машина туни те, «пробиркăра» çуратни те, ачинчен машина туса хуни те пурăнăçа пысăклатмасть. Унăн пĕлтерĕшĕ чакса пырать. Тĕнче сĕмĕ ӳсмест.

Чăваш каларăшĕпе «атте Турă, анне Кебе». Кебе тени кунта анне Çĕр Турри тенине пĕлтерет. Геба, Кааба, Гея тенисем пурте хĕрарăм Çĕр Турри пулнине пĕлтереççĕ. Ку, тен, вăл хĕрарăм мĕн авалтан çĕр ĕçĕпе аппаланнипе те çыхăннă пулĕ. Çапах та, аса илер-ха маларах каланисене, пурăнăçа çĕр, тăпра, биосфера кăна парать тенисене. Çапла шутласа илсен, хĕрарăм çĕр вырăнĕнче пулни куç кĕрет. Ку ăнтлă пулăм. Тӳпе атте турă вырăнĕнче пурăнăç саккунĕсене парса, çĕр-анне вара çав саккунсене пăхăнса ача çуратса тăнă. Анчах хĕрарăм тӳпе саккунĕсене тахçанах пăхăнма пăрахнă. Ашшĕ те кирлĕ мар ăна тек. Хальхи вăхăтра ашшĕсĕрех çуратаççĕ. Кунта мĕн курăнать. Кунта пĕрре ашшĕ мĕн каланине итлеме пăрахни тата хĕрарăм тĕнче никĕсĕ пулманни курăнса тăрать. Чăваш калашле, çын «çĕрпе пĕлĕт хушшинче» пурăнать. Халь тин ни пĕлĕчĕ, ни çĕрĕ çук. Хĕрарăм

халь, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, çĕр ĕçĕпе пурăнмасть. Ачине те çĕр çинчен хăвалать. Çук, тӳпене мар, тӳрех çăтмаха хăвалать. Çухалтăр вăл çак асаплă тĕнчерен тет. Лешĕ вара çăтмах шыраса тамăка пырса кĕрет. Çак тĕнчене тамăкра çунтарнă пек çунтарма тытăнать. Акă мĕн патне илсе çитерет çын тата тĕнче хăйсен сĕмĕсене çухатни. Кунта хĕрарăм пирки калаçатпăр пулсан, чăн малтан, хĕрарăм хăй сĕмне çухатни пирки калас пулать. Хĕрарăм хăй пĕлтерĕшне тупсанах тĕнчене те, ачине те сĕм кĕрет, пурăнăç чĕрĕлсе сĕмленсе каять. Эпир шутланисем тĕрĕс пулсан, хĕрарăмăн пĕр тăхтаса тăмасăр, турă ачине çуратма тытăнмалла. Çитет шуйттан ачине çуратса пурăнма. Турă ачи, «улпут» ĕнтĕ, халь тин амăшне пăхма, халăхне пулăшма, патшалăхшăн тăрăшма вĕренсе ӳстĕр. Ашшĕ уншăн Турă, амăшĕ Кебе пултăр. Ун чухне вара тин тĕнчене çĕнĕ сĕм кĕрĕ, çын та улшăнĕ. Ун сăнне турă сăнĕ çапĕ, ырă çĕсем тăвĕ те пурăнăç çăлкуçĕ пур енчен те тапса тăма тытăнĕ. Хĕрарăм пурăнăç çăлкуçĕ пулни пирки пĕр иккĕленӳ те çук. Пĕр япала кăна, унăн хăй ирĕклĕхне пăрахăçласа тӳпе саккунне пăхăнмалла та турă ачине, Улăпа, çуратма тытăнмалла. Пĕр çак пулăм кăна çак тĕнчене лайăх еннелле улăштарассăн туйăнать. Мĕншĕн тесен, каларăмăр, пурăнăç та, хĕрарăм та, тĕнче хăй те сĕмлĕ пулăмсем. Вĕсен, пĕр-тепĕр пысăк сĕм пулса, çак тĕнчене турăлатмалла пулать. Çапла шухăшлаттарать пурăнăç çăлкуçĕн таппи. Çăлкуç пĕр иксĕлмесĕр тапать. Мĕншĕн тесен вăл чĕрĕ.

## 6.2. ÇЕМЬЕ

Çемье пĕлтерĕшĕ пирки философсем нумай çырнă. Энгельс хăй вăхăтĕнче çемьене патшалăх ячейки пек курнă. Ку вăл чăнласах çапла пулнă. Хальхи çемье вара мĕнле пулни тата пулмалли пирки иккĕленӳллĕ. Пĕрисем çемьене ĕлĕкхи патриархаллăхпа, теприсем постмодернпа çыхăнтараççĕ. Паллă, ĕлĕкхи домострой çухалнă. Халь тин тĕрлĕ хурмаллă çемьесем, пурăнăç улшăннине кура пулĕ, ача çуратса ӳстерес пирки пĕрре те шутламаççĕ. Халь-

хи çемьесем юрату çинче никĕсленеççĕ те юратăвĕ пĕтсен саман-трах саланса каяççĕ. Çемье, апла, юрату çинче мар никĕсленет. Унăн чăн никĕсĕ вăл ача. Çут çанталăк çынна юрату урлă хăйĕн ăратне малалла тăсмалли май туса парать. Çавă кăна. Юрату вăл май, меслет кăна. Чăн тĕллевĕ вара ача çураттарасси. Арçынпа хĕрарăм расна çынсем пулнă май пĕр пĕрин патне çав юратусăр пыма пултараймаççĕ. Çавăнпа та çут çанталăк вĕсен ăс-туйăмне юрату парса пăтратса ярать. Халь тин «ухмаха» тухнă хĕрарăмпа арçын, пĕри тепĕринсĕр пурăнайманскерсем, çемье çавăраççĕ. Халĕ тин, çемье çавăрнă хыççăн, ача çуратмалла ĕнтĕ. Анчах, пăхăр-ха, вĕсем ача çуратса пăхса пурăнасшăн мар, вĕсем хăйсене йăпанма-лăх май тупнă та ача çинчен пачах шутламаççĕ. Пĕрлешнисем пĕр ача таран çураткалаççĕ-ха. Нумайăшĕ вара, гражданлă брак текелесе, ача çуратассине пуçа та илмеççĕ. Халĕ хăвăрах шутласа пăхăр-ха, çемье пурăнăç çăлкуçĕнчен йăпану çăлкуçĕ пулса тăрать. Пурăнаççĕ, пурăнаççĕ те çавăн пек çемьесем сасартăк хăйсен юра-тăвĕ çухалнине туйса илеççĕ, çапăçма пуçлаççĕ, уйăрăлса каяççĕ. Хăйсемпе мĕн пулса иртнине те пĕлмеççĕ. Юратасшăн вĕсем, ан-чах юрату тек килмест. Çут çанталăк вĕсене хăватлă туйăм пар-неленĕччĕ, ача çуратса хăйсен ăратне малалла тăсччĕр тенĕччĕ. Хĕрарăмпа арçын вара, юратусăр тăрса юлнăскерсем, пĕр пĕринчен уйăрăлса каяççĕ. Çакăн тĕп сăлтавĕ ача çуратманнинче тата ача çуратсан та юратăва пĕр пĕрин çумĕнче шыранинче. Аса илер, çут çанталăк юратăва ача çураттарма кăна парнелет. Вăл турă парни. Ача çук-тăк, юрату тарать. Ача çуралчĕ-тĕк, апла, юрату ача çине куçать. Ачăра юратмастăр пулсассăн, сирĕн ху-шăрти юрату та çухалать. Ахальтен мар, пурăнан пурăнăçра хĕрарăм ача çуратсанах упăшки çинчен мансах каять. Вăл пĕтĕм кăмăл-туйăмне ачи çине ярать. Упăшки вара, ачи мĕне пĕлтернине ăнланса илейменскер, кӳренме тытăнать. Амăшĕ те, ашшĕ те пĕр пĕрне халь тин ачи урлă юратмаллине чухламаççĕ те. Çав вăхăт-ра, юрату çуккă тесе, уйăрăлса каяççĕ те вара арçынпа хĕрарăм. Вĕсен юратăвĕ пĕтнĕ, имĕш. Тек пĕрле пурăнасси пулмасть теççĕ. Чăнласа вара вĕсен юратăвĕ пуçланать кăна. Амăшĕпе ашшĕ халь тин пĕр пĕрне ачи урлă юратма пуçлаççĕ. Çемье тин ача тавра

чăмăртанать. Ун пек ача телейлĕ ӳсет. Унăн вĕт ашшĕпе амăшĕ пур. Пĕри кăна ан пултăр, ача хăш енчен те пулин «уксахлама» пуçлать. Ун пек ачаран çын пулаймасть. Тĕрĕссипе каласан, арçынпа хĕрарăм пĕр пĕринпе пулас ачине курса тăрса пĕрлешеççĕ. Ана-кăна вĕсем паллах ăнланмаççĕ, анчах та вĕсемшĕн, Ницше калашле, пĕтĕм ратне шутлать. Ку пулăм хăй тĕллĕнех пулса иртет. Енчен те ратне шутлани тĕрĕс килсе тухать пулсан, чипер ачах çуралать. Ратне хушни-ыйтнине е шутланине шута илмесен, чылай чухне йăнăш килсе тухать. Асăрхăр, кунта юратни çеç çителĕксĕр.

Кунсăр пуçне çемье никĕсĕнче, юратупа ачасăр пуçне ĕнтĕ, тепĕр туйăм хуçаланни те кирлĕ. Ку вăл хĕрарăмпа арçын хушшинчи çирĕп туслăх, пĕр пĕрне хисеплени, пулăшма тăрăшни, пĕри тепĕриншĕн вута кĕме хатĕр тăни. Кирек мĕн калăр та, çынлăх тени çемьере пуç пулса тăмалла ĕнтĕ вăл. Чăн та, çемье хутшăнăвĕ питĕ хăйне майлă. Унта мĕн те пулин тунăшăн укçа ыйтмаççĕ, памаççĕ те. Пур ĕç те хăйсен хушшинче пулса иртет. Çемье хăйне майлă пулăшуллă ячейка. Кунта пулăшу экономики ĕçлет. Пасар саккунĕ çемьене кĕреймест. Çемьери хутшăнусене шута илсен, ăна çынлăх тĕнчи, çынлăх экономики тесен те юрать. Çемье саккунĕсем патшалăх шайĕнче ĕçлеме тытăнсан мĕнле çирĕп патшалăх пуламлла та, çук пулĕ çав, кашнин хăйĕн шайĕ. Патшалăх вăл хĕсметлĕх, çемье вара ирĕклĕх. Çемьере хăйĕн «хĕсметлĕхĕ» пур, анчах вăл çынна çын хĕстернипе мар, çут çанталăк йĕркине тытса пымаллипе çыхăннă. Çут çанталăкăн хăйĕн йĕрки пур. Çав йĕрке çинчен шутласа пăхар-ха. Чăн çемье çав йĕркене пăхăнать пек.

Малтанрах çут çанталăк йĕрки çинчен каланăччĕ. Çут çанталăк ача çуратмалăх юрату кăна мар парнелет, вăл хăйĕн йĕркине те пăхăнтарать. Çав йĕркене эпир япала, энерги тата информаци çаврăнăшĕ тенĕччĕ. Пĕр сăмахпа каласан, цикл. Мĕнле майпа çыхăнать-ха çемье çав циклпа. Ку çыхăну питĕ ансат. Çемьен кашни членĕ çав çавран пайне çаврăнма пулăшса пырать. Кашни член хăйне майлă катализатор, йĕркелӳçĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен вара, çаврасем чиперех йĕркеленсе пынине кура,

ку çемье çирĕп пурăнать теççĕ. Мĕншĕн çапла пулни куç умне тӳрех ӳкмест. Сăлтавĕ ансат, кашни хăй ĕçне тăвать, пурăнăç çаврине çавăрма пулăшать. Ку чылай вăрттăн пулăм. Çавăнпа та пĕр тĕслĕх илсе парар-ха. Ялта пурăнакан çемье пуринчен ытла курăмлă. Ашшĕ, калăпăр, тулашри ĕçсемпе аппаланать, килте мĕн тунине тĕнчепе çыхăнтарать. Амăшĕ килти ĕçсене пурăнăçлать. Акă пĕрремĕш çавра пулчĕ те. Шалтипе тулашри пĕр вĕçĕмсĕр çыхăнса çавăрăнать. Енчен те çак пулăмсене пăтраштарса яратăр-тăк, çемье тӳрех пăсăлать. Япалан хăйĕн йĕрки пур.

Тепĕр çаврине те кăтартар. Ялти çемье çут çанталăк çаврисĕр пурăнма пултараймасть. Унăн ӳсен-тăранне те ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕхне те пăхмалла, çĕр-тăпра пахалăхĕ пирки те шухăшламалла. Малтанрах илсе кăтартнă апат циклне аса илер-ха. Унта кашни тепĕриншĕн апат пулса тăрать. Продуцентсем редуцентсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Енчен те çак çут çанталăк циклĕ талса кайрĕ-тĕк, çемье те пĕтет. Ял пĕтнине çак çавра ĕçленипе питĕ ансат кăтартса пама пулать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем те выльăх-чĕрлĕх шутне чакарса пырсан хăйсемех пĕтрĕç. Пĕчĕк ачасене, тĕслĕхрен, выльăха юратма ан вĕрент-ха, кил пĕтет. Мĕншĕн тетĕр-и, мĕншĕн тесен вăл ӳссе çитет те кил хуçи пулас, выльăх-чĕрлĕх ӳстерес вырăнне урăх ĕçе кӳлĕнет. Урăх ĕç вăл, паллă, çавă çаврана татать. Çавăнпа та çут çантăлăк çаврине пурин те хутшăнмалла: пĕри выльăх пăхать, тепри çĕр авать, ыттисем киле тĕнчепе çыхăнтараççĕ тата ытти те. Çут çанталăк çаври вара лайăх çавăрăнса каять те çемье те питĕ çирĕп çавра пулса тăрать. Çакăн пек çемьене нумай ача кирлĕ. Мĕншĕн тесен çут çанталăк çаври нумай енлĕ-пайлă. Кашни пайне пĕрин-иккĕн ярса илейместĕн. Йыш пулсан ялта пурăнма питех те çăмăл. Кирек мĕнле ĕçе тытса тăватăн, вăй пур-ха та. Пурăнăç ун пек чухне чечекленет, ачасем сывă ӳсеççĕ. Çут çанталăк та хитре тăрать, «чунланать», усă кӳрет. Кил çаврипе çут çанталăк çаври пĕр килсен кăна, апла, çемье пурăнăç çăлкуçĕ пулса тăрать. Çаврасем пĕрле çавăрăнсан, çын йышĕ те, çут çанталăк пахалăхĕ те ӳсет.

Çак çаврăну хăй тĕллĕн пулмасть. Çемьен хăйĕн уставĕ пулмалла. Ĕлĕк домострой пулнă терĕмĕр. Урăхла каласан, кашни

тепĕрне пăхăнса тăмалла. Анчах çакă пăхăну хăй тĕллĕн, хăй ирĕклĕн пурăнăçланса пымалла. Кунта пĕри тепĕрне ирĕксĕрлентерсе ĕçлеттерни пулмалла мар. Ахаль каласан, кашнин хăйĕн вырăнĕ пур. Çавă вырăн хăйех тухса палăрса пырать. Ăна çут çанталăк çаври парать тесен те тĕрĕс пулать. Мĕн калăр, ялти пурăнăçра чăх-чĕппине те пăхмалла, ачине те сăпкара сиктермелле, тырă вырма та тухмалла. Çут çантăлăк çаври çĕр тĕрлĕ ĕç хушать. Çав çаврара кашнин валли хăйне тивĕçлĕ ĕç тупăнать. Кунта эпĕ хуçа тени те вырăнсăр. Ашшĕ пуç пулса тăни те кунта кашни çын хăй тивĕçне пурăнăçланипе çыхăннă. Ашшĕ тĕнчепе çыхăнса тăрать. Çемье малалла мĕнле пыни çав тĕнчерен пуринчен ытла килет. Çавăнпа та ху çине мĕн чухлĕ илнине кура ĕнтĕ, ашшĕн пуç пулса тăма тивет. Анчах чăх-чĕп пăхнă чухне чи пĕчĕкки пуç. Ун çинче пысăк ĕç. Чăх-чĕпписене самантрах çухатма пулать. Çухатсан, пысăк айăпа кĕретĕн. Çавăнпа та çемье йĕрки çинчен калаçас пулсан, кунта хăй майлă çавра йĕрке хуçаланать тесен те тĕрĕс. Урăхла пулма та пултараймасть. Кашни тепĕрне çавра çавăрма пулăшать-тĕк, кам асли пулни пирки калаçу та пулма пултараймасть. Кунта урăхла иерархи. Ăна вертикаль мар, горизонталь тытса тăрать. Пурте пĕр тан, мĕн-ма тесен пурте пĕри тепĕрне пулăшать, юрататать. Çавăнпа та çемье уставне çураçтару уставĕ тесе калас килет. Çемье хăй, апла, çураçтаруллă пĕр çавра тĕнче пулса тăрать. Çавă тĕнче куçа курăнман, анчах чĕрене систермелле темле çыхăнуллă. Таçта урăх çĕре каяс-тăвас пулсан, çавă çыхăну питĕ сисĕнет. Çемьешĕн, тăван çынсемшĕн, вăхăт нумай та иртмест, тунсăхлама тытăнатăн. Ку туйăм-сисĕм çемьен çураçтарулăх вăйне уçăмлăн уçса парать. Тăванлăх юнĕ çемьере пуç пулса тăрать. Акă мĕн. Наука чĕлхипе каласан, çемье кашнин генне нумайран та нумайрах сарса аталантарса пыма пулăшса тăрать. Акă мĕн тума кирлĕ те çемье майлă пурăнăç тытăмĕ. Çавă тытăмра кăна çут çанталăк саккунĕ пурăнăçланать.

Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, çемье чăнласах та пурăнăç çăлкуçĕ пулса тăтăр тесен, çемьене арçынпа хĕрарăм пĕрлешиччен те, пĕрлешсен те пĕр пĕрне ача урлă юратни, пĕр пĕрне туслăн пулăшни, тĕнчепе тата çут çанталăкпа пĕр çавра туни, çав

çаврана нихăçан та татманни кирлĕ. Çавăн чухне кăна вара çемье пурăнăçăн чăн çăлкуçĕ пулса тăрать.

Çемье пахалăхĕ пирки калаçсан, кунта тата тепĕр вăрттăнлăх пур пек туйăнать. Пил панă çемье кăна вăйлă. Аттеанне-и, ватăсем-и, çут çанталăк-и, турă хăй-и, пĕлместĕп, анчах пил илмесĕр нимле ĕç те ăнмасть. Çемье пушшех те. Ку мĕне пĕлтерет тесен, калас пулать, çемье темле ку тĕнчери мар тивĕçе пурнăçлать пек туйăнать. Ратне кăна мар шутлать, çемье пирки пĕтĕм тĕнче шутлать пек. Çав тĕнче тени, пирĕн шутпа, халăхпа çыхăннă. Маларах каланă пилсене халăх пĕтĕçтерсе тăрать. Çемье ача-пăчаллă пуласси, чăн малтан, халăха кирлĕ.

## 6.3. ХАЛĂХ

Халăх пĕрле пурăнмалли мелсемпе меслетсене, хаклавсемпе хаклăхсене шутласа кăларса çынсене пĕтĕçтерсе тăрать. Халăх вăл пĕрле ĕçлесе пурăнмалăх хурăм (форма). Çын пĕччен кăна, ыттисемпе хутшăнмасăр, халăхсăр пурăнма пултараймасть. Халăх, паллах, пĕр пеклерех шутлакан-туякан çынсенчен тытăнса тăрать. Енчен те çынсене пĕр пĕринпе нимĕн те хутшăнтармасть пулсан, çав хутшăнусен пĕр пеклерех никĕсĕ çук пулсан, паллă, малтанрах та каланăччĕ, хутшăнма тата халăх пулма ним сăлтавĕ те пулмасть. Кунта пĕр пекли пĕр пеклипе кăна мар хутшăнать, кунта, палăртсах калас пулать, пĕр пеклерех никĕс пĕр халăха чăмăртать. Сăмахран, Атăлпа Кама тăрăхĕнчи çĕр-никĕс пăлхар халăхне чăмăртанă. Çеçенхир, калăпăр, хунсене тĕнче умне кăларса тăратнă. Кирек мĕнле пулăмăн та хăйĕн никĕсĕ пур. Халăх ахальтен çуралмасть. Вăл географи юхăмĕн темле хурми е ландшафт шухăшлавĕ, тет В.А. Подорога. Хăвăрах шутласа пăхăр-ха, кашни çĕр-рельефăн хăйĕн чĕлхи. Енчен те, калăпăр, тĕнчере, авалхи мифри пек, пĕр чĕлхе кăна пулнă пултăр. Çапах та вăхăт иртнĕçем, кашни çĕр çинче çав чĕлхе ылмашăнса урăхланса кайĕ. Ахальтен-им кашни çĕрĕн хăйĕн диалекчĕ пур. Апла, çĕр е ландшафт хăй шухăшлать, эпир усă куракан чĕлхене улăштарать, ата-

лантарать. Çĕр тата çĕр «чĕлхи» халăха çуратаççĕ те. Кунта, паллă, климат тени питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тĕрлĕ климатра тĕрлĕ пурăнăç хурмисем, мелсем. Чум, юрта йышши пурăнмалли çуртсене ахальтен мар шутласа кăларнă. Вĕсем вырăнти климатпа пĕр килеççĕ, вĕсене пула кăна çын тундрăра е çеçенхирте упранса юлма пултарать. Ăшă кăнтăрта, паллă, унта керменсем те лартма пулать, вĕсене хутса ăшăтса тăма вутă-шанкă кирлĕ мар. Çапла вара «географи никĕсĕ» халăха пĕр çĕре чăмăртать, хурмăлать. Халăх пĕр майлă хутлăхра ĕçлесе пурăнса хăйне майлă ĕç хурмисемпе мелĕсене кăларса тăратать. Унăн культури çав мел-уйрăмлăхсемпе палăрать. Тĕслĕхрен, пур халăх та пăтă пĕçерсе çиет. Анчах кашни халăх çав пăтта тĕрлĕрен пĕçерет, унăн технологийĕ расна. Çавна пула тĕрлĕрен кухньăсем çуралаççĕ те. Халăх тени, апла, хăйĕн пурăнăç технологийĕпе, меслечĕпе пĕтĕçсе уйăрăлса тăрать. Халăха çуратакан факторсене пурне шута илме те май çук пулĕ, тĕприсене палăртрăмăр. Çĕр-ландшафт, климат, чĕлхе, хаклавсем тата пурăнăç мелĕсем халăх пуррипе çуккине уççăн кăтартса параççĕ.

Халăх çинчен калаçнă чухне унăн чи пысăк тивĕçне, хутшăну мелĕсене йĕркелесе пынине уçса кăтартмалла. Тĕрлĕ çирĕплетнĕ правилăсемпе хаклавсемсĕр килĕштерсе пурăнма май килмест. Халăх çав саккунсене пăссан сивĕ куçпа пăхать, вăрçать, хĕне кĕртме те пултарать. Вăрă тавраш тупăнсан, ĕлĕкрех çав çын пуçне хăрăк витре тăхăнтарса ял тăрăх çавăтса çӳренĕ тет. Тата авалтарах Пăлхар тапхăрĕнче ют арăмпа хутшăнса кайсассăн, йывăç çине çакнă пулать те çурмаран çурса янă. Çак çырса кăтартнă йăла-йĕркесем, вăрлама тата çылăха кĕме юраманнисем ăçтан çуралса çирĕпленсе пынине тӳрех тĕрĕс ăнлантарса пама та май çуккă пулĕ. Вăрласа пурăнакан халăхсем те пур вĕт-ха. Пирĕн шутпа, «Ан вĕлер», «Ан вăрла», «Çылăха ан кĕр» тенисем тата ытти хаклăхсем те пĕрлешсе пĕтĕçсе пыракан халăхра общество аталаннăçемĕн хăй тĕллĕнех çуралнă. Калăпăр, «Ан вĕлер», тенине цивилизаци пуçланса кайнă тапхăрпа çыхăнтарма пулать. Унччен çынсем пĕр пĕрне вĕлерсе çисе (каннибализм) пурăннă. Халăх ун пек пурăнма юраманнине хăйех ăнланса илнĕ. Антропологсем ка-

ланă тăрăх ун чухне, пĕр пĕрне çинĕ пирки, çынсен йышĕ пĕчĕкленсех çитнĕ. Çавăнпа та популяци сыхланса юлтăр тесе, çут çанталăк хăй пĕр саккун кăларнă, «Ан вĕлер», тенĕ. «Ан вăрла», тени кашнин хăйĕн харпăрлăх пуррипе çыхăннă. Паллă, никамăн та хăйĕн туприне ют çынна парас килмен. Общество çавăнпа та тепĕр правило шутлса кăларнă. Халь тин пĕрлештерни мар, уйрăмшар харпăрлăх пулни кирлĕ. «Çылăха ан кĕр» тени вара патриархат пуçлансан пурăнăçа кĕнĕ. Ăру пуçĕнче хĕрарăм тăнă чухне çылăх мĕнне пĕлмен. Асат хуçнă ачасем çуралма пуçласан кăна çынсем çывăх тăвансемпе ар çыхăнăвне кĕме юраманнине ăнланса илнĕ те çак саккуна шутласа кăларнă. Ку ĕнтĕ вăл генетика, çут çанталăк хăй ыйтни. Кунта тӳрех каласа хăварас пулать, кун пек правило-саккунсем чылай. Вĕсене пурне те халăх хăй çут çанталăк саккунĕсемпе пĕр майлă пулса шутласа кăларнă. Унсăрăн çынсем аталанайман пулĕччĕç, пĕр пĕрне вĕлерсе, уксах-чăлах çуралса, вăрçа тухса çаратса пĕтернĕ пулччĕç. Халăх малалла мĕнле аталанмалли майсене шыраса тупнă, вĕсене никам та пăрахăçлама ан хăйтăр тесе, турă каланисен шайне лартнă. Пĕр сăмахпа каласан, хаклавсем халăх хушшинчи хутшăнусене майлаштарса яма пулăшнă.

Çав вăхăтрах халăх пурăнăçа аталантармалли йăлайĕркесем те шутласа кăларнă. Вăл шутра, паллах, туй-çуй йĕркисем. Халăх ар çыхăнăвĕсене кăна мар, çемье пурăнăçне те йĕркелесе тăнă. Уйăрăлса тухакан çемьесене çĕр уйăрса панă, çурт лартма, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пулăшнă. Халăх хăй йышне çемье урлă хушса пынă. Тĕслĕхрен, халь чылай пысăк ялсем пĕр виççĕр-тăватçĕр çул каярах икĕ-виçĕ çемьерен кăна тытăнса тăнă. Халĕ вара ял йышĕ тепĕр чухне пин килтен те иртет. Халăх хăй пĕр организм пулсан, çемьене «клетка» пек курма пулать. Пĕлетпĕр, организмри клетка çуралма та, пайланма та, вилме те пултарать, организм вара вилĕмсĕр. Халăх та çапла, вăл çемье-клеткăсене аталанмалăх хутлăх туса парать. Халăх мĕнле аталанасси пурăнăç саккунĕсенчен килет. Сăмахран, «ту саккунĕ» йăхсем пĕр пĕрне вĕлерсе пĕтерес патнех илсе çитерет. «Юншăн юн» тенисем нумай

халăха пĕтернĕ. Çавăнпа та халăх, упранса-сыхланса юлас тесе, хăйĕн саккунĕсене шутласа кăларать.

Халăх тепĕр чухне хăйне ют халăх куçĕпе те курма пултарать. Калаççĕ-çке, нимĕççем çирĕп йĕркеллĕ, вырăссем ĕçлеме юратмаççĕ, чăвашсем йăваш, тата ытти те. Çак хаклавсем пурте айккинчен пăхса каланисем. Халăхра темле çын та пур. Анчах та нумай чухне тĕрĕс калани те сисĕнет. Çавăнпа та çак хаклавсене те шута илмелле. Калăпăр, йăваш пулни вăл лайăх, анчах çав вăхăтрах çирĕплĕх те кирлĕ. Унсăрăн çынсен тата халăхсен хутшăнăвĕнче пуш алăпа тăрса юлма пулать. Мĕншĕн тесен халĕ рынок тапхăрĕ, кам хăюллăрах, çавă çĕнтерет. Ӳркенсе ларни те ним те памасть. Ытла çирĕп пулни те усăсăр. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан ĕç е пурăнăç виçине тупмалла. Виçеллĕ пурăнсан кăна сывлăхпа телей хуçаланма пултараççĕ ку тĕнчере.

Халăх йышĕ пирки калас пулсассăн, вăл пĕр чакма, тепĕр ӳсме те пултарать. Популяци йышĕ хумлăн-хăмлăн аталанать. Хальхи вăхăтра Раççей халăхĕ геометри прогрессипе мар, арифметика прогрессипе те ӳсмест. Халăх йышĕ чаксах пырать. Апла, халăх пурăнăç çăлкуçĕ мар текех. Мĕншĕн тесен, тӳрех халăх хăйне хăй пĕтерет текен шухăш пуçа пырса кĕрет. Халăх хăйне хăй «эпир пĕтетпĕр» тесе программăланă пек туйăнать. Çынсем хушшинче вилĕм моделĕ хуçаланать. Мĕнле те пулин çăлăнса юлас тесе вăл юта кайса юта тухса пăхать, вара пушшех те пĕтет. Халăхра, иккен, пурăнăçа çĕклекен хаклавсем кăна мар, вилĕме чĕнекен хаклавсем те пур. Малтанрах пĕрисем вăй илнĕ пулсан, халĕ теприсем пуç пулса тăраççĕ. Мĕншĕн çаплине калама та хĕн. Пирĕн шутпа, халăхăн темле альтруистла вăй пур. Вăл хăй пĕтессине пăхмасăр ытти халăхсене пулăшма тытăнать. Халăх вăл хăй пĕр организм терĕмĕр-иç. Апла, вăл юнашарти тепĕр халăх пĕтнине кура хăйне хăй «донор» пек курса, «юнне» те пама хатĕр. Çавăнпа мар-и вара чăваш ачисем тĕнче касса çӳреççĕ, хĕрĕсем вырăса качча тухаççĕ, е каччисем вырăс хĕрĕсене качча илеççĕ. Çакă ассимиляци пулăмĕсене пулăшу туйăмĕсемпе кăна ăнлантарса пама пулать. Чăваш халĕхĕ вырăс халăхне упраса хăварасшăн. Çавăнпа та унпа питĕ тачă çыхăнать. Ку вăл пĕр

пĕтĕмĕшле илсен, чăваш халăхĕ чунĕпе питĕ ырă пулнине, тепĕр çынна вăй пама тăрăшнипе çыхăннă. Кунта, пирĕн шутпа, «эпир пĕтетпĕр» тенипе пĕрле тепĕр питĕ вăйлă программа «пĕр пĕрне пулăшар» тени хуçаланать. Ку прграмма лайăхрах, вăл генсене упраса хăварас тени. Чăваш генотипĕ тĕрлĕ халăх юнне упраса пурăнать. Генетика тĕпчевĕсем пирĕн халăхра угро-финсен, тĕрĕксен, еврейсен тата норманнсен тата чăвашăн хăйĕн тĕп юнĕ чупнине палăртаççĕ. Ку ĕнтĕ вăл пирĕн халăхăн пуян историне кăтартса парать. Ăçта тата кампа кăна хутшăнман вăл, çапах та хăйне упраса хăварнă, мĕн авалтан тĕрлĕ ятпа çӳренĕ пулсан та чăваш ята пăрахман. Халĕ те çавах. Вырăс йăхĕпе хутшăнни тепĕр çăлăнăç пек курăнать. Тепĕр тесен, аталану кирек хăçан та пĕр пĕринпе хутшăннипе çыхăннă. Юн çыхăнăвĕ те çавах. Малашне мĕн пулать, ăна калама хĕн. Анчах ĕлĕкхине пăхсан калама та пулать. Эпир пурне те панă, илнĕ те, çавăнпа та çав парас-илес процесс малалла пырать. Хальхинче эпир «донор» шайĕнче пыратпăр пулас. Тепĕр тапхăртан, акă, ку процесс тепĕр майкки çаврăнса ӳкĕ. Эпир илме тытăнăпăр. Пур халăхсем те чăвашсем пек пурăнма пуçлĕç. «Çăкăр-тăвар хире-хирĕç». Ун пек тĕслĕхсем çук мар. Чăваш тĕслĕхĕ ĕнтĕ Л.Н. Толстоя чăваш пек пурăнма хистенĕ. «Ман чăваш пек пуласчĕ» тенĕ вăл. Чăваша пурăнма килекен чылай урăх халăх çынни те çапла тăвать. Вăл чăвашла пурăнма вĕренет. Кун пек тĕслĕхсем нумайлансах пыраççĕ.

Халăх пурăнăç çăлкуçĕ пулнине çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсемпе шухăшлавсем чылай çирĕплетсе параççĕ. Çакăн тĕп сăлтавĕ, паллах, халăх хăй пĕр организм пулнинче, хаклăхсене кăларса тăратнинче, çемьесене пурăнма хутлăх туса панинче, тата вăл питĕ ырă пулнинче. Халăхăн, паллă, хăйĕн характерĕ пур. Паянхи кун вăл хăйне пĕр шеллемесĕр тĕнчене çăлса хăварасшăн. Тĕнче пĕтнине кура вăл татах та ырăрах пулма тăрăшать. Çакă пулăм куçа пит курăнмасть пулсан та пурăнăçăн тĕп саккунĕ пулса тăрать.

Ыйтусем

1. Хĕрарăм мĕншĕн ача çуратма пăрахать.

2. Тĕнчене мĕн турăлантарать.
3. Мĕн вăл çемье.
4. Çемье мĕн çинче тытăнса тăрать.
5. Турă каланисене кам шутласа кăларнă.
6. Халăхăн пĕлтерĕшĕ мĕнре.

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Пурăнăç философийĕ пирки пĕр вĕçĕмсĕр шухăшлама пулать. Мĕншĕн тесен пурăнăçĕ хăй пĕр вĕçĕмсĕр. Пурăнăç вăл кирек хăçан та вăрттăнлăх. Ăна нимле схемăна та кĕртме май килмест. Енчен те мĕнле те пулин майпа схемăларăн пулсан, вăл схемăпа питĕ асăрханусăр усă курмалла. Схема пурăнăçпа ылмашăнма пултараймасть, чи лайăххи, тен, ăна ăнланма пулăшать, çавă çеç. Çапах та эпир çав ăнлану схемине кăтартса пама тăрăшрăмăр. Пĕр пĕтĕмлетсе каласан, пурăнăç хăйне хăй кăна ăнлантарса пама пултарать. Пурăнăç, каларăмăр, пурăнăçран кăна тăхса тăрать. Вăл хăй пĕр тата тĕп субстанци. Пĕтĕм тĕнче е космос, каларăмăр, антроплă принципа пăхăнса пурăнăç еннелле аталанать. Апла, пурăнăç тĕнчен тĕп вырăнĕнче. Ун пеккине эпир тĕпре пурăнăç (витацентризм) тесе хаклатпăр. Пурăнăçран хакли ку тĕнчере нимĕн те çук. Эсир хăшĕ-пĕрисем хăйсен пурăнăçне те пама хатĕр, тесе калăр, анчах та пурăнăçне паракан çын вĕт ыттисен пурăнăçĕшĕн тăрăшать, çавăнпа хăйне хăй шеллемест. Çакăн пек пурăнăç куçĕпе пăхни пĕтĕм тĕнчене урăхла ăнлантарать. Калăпăр, экономикăна илсессĕн, тӳрех вăл тĕрĕс мар çулпа, эффект çулĕпе кĕрсе кайни курăнать. Çавна пула пурăнăç та уксахлать. Укçа-ылтăншăн çын хăйне шеллемест, çут çанталăк пĕтет, çынлăх çухалать тата ытти те.

Тĕпе пурăнăçа хуни вара мĕнпур ĕçсене урăхла йĕркелеме ыйтать. Кунта пĕртен пĕр критерий. Вăл пурăнăç критерийĕ. Енчен те пурăнăç аталанать, ешерет пулсан, апла, ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. Пурăнăç чакса иксĕлсе пырать пулсан, апла, ĕçе тĕрĕс мар йĕркеленĕ. Пирĕн шутпа, пурăнăç критерине тĕпе хурса ĕçлени пĕртен пĕр пурăнăçлă структура-тытăм патне илсе çитерет. Ку тытăма эпир çавра структура, терĕмĕр. Урăхла каласан, цикл. Пурăнăç, халăхра каланă пек, «кустăрма» кăна. Вăл пĕр вĕçĕмсĕр кусать, ăна чарма çук. Чăн та, кулленхи пурăнăçа куç умне илсе пăхсан, тӳрех курăнать. Ĕçсем пĕрин хыççăн тепĕри хумлăн-хумлăн килсе çапаççĕ, çулран çул пĕр майлă ĕçсем тепĕр чух йăлăхтарсах çитереççĕ. Анчах вĕсенчен ниçта та тарса кайма çук. Вĕсем пурă-

năç никĕсĕ. Сăнарласа тата ку çавра структурăна пурăнăç урапи теме те пулать.

Çавă урапа мĕнле кайнине халь тин кăштă пăхса илтĕмĕр пулсан, пирĕн пĕр япалана ăнланса илмелле. Тĕнчере пур идейăсемпе хаклавсем те, ĕç кăтартăвĕсем те пурте хăйне майлă процессем. Чăн та, ĕç тĕллевленĕ чухне эпир ĕç вĕçне, мĕнле тытăмлă япала килсе тухасса малтанах курса тăратпăр. Ĕçĕн хăйĕн те структури пур. Ăсталанă япала вара тӳрех хăй хурмипе тыткăнлать. Ку тĕнчере пурте, пур япала та, пур хаклав-тĕллев те, пур процесс та структурăллă, тытăмлă. Çакна ăнланса илсессĕн, чăнах та, пурăнăçа схемăлама тытăнатăн. Схема пурăнма, пурăнăçа тытăмлама пулăшать. Ку тытăм питĕ ансат. Хăвăрăн шухăшăра эсир ĕçлесе пурăнăçа кĕртетĕр. Çакă анчах. Çав вăхăтрах ĕç кăтартăвĕ малтанхи шухăша йĕркелет. Тĕрĕсех шухăшласа хунă пулнă-и эпир, е çук. Çакă çавра тытăм пĕр вĕçĕмсĕр пуçра та, алра та, япалара та пĕр вĕçĕмсĕр çавăрăнать. Вара пурăнăç пулать.

Çакă çавралăха тĕпе хурсан, эпир чăнласах пурăнăç мĕнне ăнланса илме пултаратпăр. Нимĕнле урăхла никĕс те пурăнăçа вĕçне çитиччен йĕркелесе çитереймест. Бергсон каланă «пурăнăç туртăмĕ», Шопенгауэрăн «пурăнăç ирĕклĕхĕ», е Ницше çырнă «пурăнăç влаçĕ» пурăнăçа тĕрлĕ енчен ăнлантарса параççĕ пулин те, вĕсенчен пĕрне те никĕсе хураймастăн. Никĕсре пĕртен пĕр ăнтлă ăнлану пур. Вăл çавра тытăм, цикл. Пурăнăç çав çаврасем хуçаланма пуçласан кăна вăй илет. Пурăнăç çаврине татрăн-тăк, пурăнăç та саланса каять. Сăмахран, пирĕн халăх донор халăх терĕмĕр. Анчах та таçта ютра ĕçлесе паракан çын тăван çĕршывне каялла таврăнмарĕ-тĕк, вăл çухалать, унăн ĕçĕ те, пурăнăçĕ те пĕтет. Çавра талать, вăй памасть.

Çавра пурăнăç хăй тĕллĕн пулмасть. Унăн кашни пай утăмĕ тепĕрне хускатать. Урăхла каласан вăл автопоэзлă структура. Çавра хăй тĕллĕнех хăйне ăсталаса аталантарса çĕнетсе пырать. Кун пек прцесс çураçтарусăр пулма пултараймасть. Пурăнăçăн сĕмĕ çураçтарулăхра тесе калас килет. Çураçтарни вăл пĕр пĕрне пулăшса, пĕри теприншĕн шухăшласа ун пурăнăçĕпе пурăнма тăрăшни. Кун пек пулăм питĕ айванла курăнать пулсан та,

эпир кун пекки те тĕнчере çук мар тесе палăртрăмăр. Пуринчен ытла экономика тытăмĕ çак çураçтаруллă çавра тытăм туса хума хистет. Унсăрăн пире катастрофа кĕтет. Ăнтлăн пăхсан, пĕтĕм тĕнче çураçтаруллăн йĕркеленсе аталанса пырать. Пурте тепĕриншĕн хатĕр (средство) пулса тăрать. Тĕнче тĕллевĕ вара пурăнăç хăй терĕмĕр. Ыттисем пурте çав тĕллеве пурăнăçлама пулăшакан хатĕрсем кăна. Уйăх-çăлтăрсем те, çĕр-планета та ытти мĕнпур япаласем те çав тĕллевлĕ, пурăнăç туртăмлă. Çак тĕнчере ниме те ахальтен туса яман. Вĕсен сĕмĕ пурăнăçпа çыхăннă.

Çураçтарулăх тени, ансат каласан, пĕри тепĕрне шута илни, санăн хăвăн ирĕкӳ кăна мар, ыттисен те ирĕк пурри. Шопенгауэрпа Ницше каланисем ыттисен ирĕкне шута илмеççĕ. Вĕсемшĕн е «пурăнăç ирĕкĕ, е «пурăнăç влаçĕ» пур, çавă анчах. Анчах та, каларăмăр, пурăнăç вăл çавра пулăмлă процесс. Кашни тăву-вăйăма хирĕçле тăву-вăйăм пур. Çакна шута илсен, тӳрех пĕтĕм ĕçе ункăлама тытăнатăн. Пĕр вĕççĕр ункăран тухса тарма çук. Вилĕм те çавă ункăрах. Вилĕмсĕр пурăнăç çук, терĕмĕр. Пурăнăççăр вилĕм çук. Çавăнпа пурăнăç çынни пулса çитес тесессĕн, вилĕмрен хăрама пăрахас пулать. Хальлĕхе эпир пурте вилĕмрен хăратпăр, çавна пула пурăнма пĕлместпĕр. Апла, вилĕм философийĕне те вăйлă аталантарас пулать. Чăваш халăхĕ, сăмахран, ваттисене асăнса пурăнать те, леш тĕнчерисем те кунтах пурăннă пек туйăнать. Кайнисене ас туса тăрсан, никамăншăн та вилĕм çук, тет. Астăвăм йăли-йĕркисене çирĕп тытса пырсан, паллă, пурăнăç та çирĕпрех пулĕ. Çавăнпа та вилĕмпе пурăнăç пĕр пĕрне ункăланине пуçра тытса, вилме мĕн çуралсанах хатĕрленме тытăнмалла. Ку вăл эсĕ хăвăн пурăнăçунта мĕн ĕç ĕçлесе туса хăварас ыйтупа çыхăннă. Енчен те кашни çын хăйĕн хыççăн ырă ĕç туса хăварсан вăл чăнласа вилĕмсĕр пулса тăрать. Кĕнеке çырнă-и унта, хăвăн пекех ырă ача çуратса ӳстернĕ, пĕрех эсĕ çак тĕнчере йĕр хăваратăн. Сана ачу кăна мар ас туса пурăнĕ, тепĕр çын та кĕнекӳне тытса вулĕ те, санăн пурăнăç каллех çак тĕнчене тавăрănса ачу урлă çуталса пурăнма тытăнĕ. Шел пулин те, кун пек философи пирĕн хушăрта хальлĕхе аталанман-ха.

Пурăнăçпа вилĕме пĕр çаврана кĕртсе ярас тесен пирĕн, чăн малтан, паллах пуласлăх пирки питĕ шутламалла пулать. Пуласлăх хальхи пĕтĕм пурăнăçа йĕркелесе тăрать. Пуласлăх ĕнтĕ вăл пурăнăçра лартнă тĕллев, тен, идеал теме те пулать. Çын хăйĕн умне пысăк тĕллев лартрĕ-тĕк, кĕтсех тăр, вăл пысăк çын пулать. Тĕнче е, калăпăр, халăх мĕнле пуласси йăлтах умри тĕллевсенчен килет. Малашлăх пире илĕртет, ĕмĕтленни çунатлантарать, вăй хушать. Кам малашлăхсăр, вăл çунатсăр. Хальхи пĕтĕм çитменлĕхсем, пирĕн шутпа, эпир ĕмĕтленме пĕлменнипе çыхăннă. Пирĕн ĕмĕте такам татнă. Пирĕн питĕ пысăк, пурăнăç шайлă тĕллев çук. Çакă çуклăх пĕтерет те. Пире пурăнăç шайлă тĕллев кирлĕ. Анчах çав тĕллевпе никам та ĕçлемест, ăна никам та йĕркелемест. Пур-и вăл е çук, ăна та пĕлместпĕр эпир. Халь тин, енчен те малтанрах каланă шухăшсем ăша хывăнчĕç пулсассăн, эпир çав тĕллеве пĕр сăмахпа палăртнă пулăттăмăр. Вăл тĕнче никĕсĕнче тăракан пурăнăç. Пирĕн пĕртен пĕр тĕллев пулмалла, пурăнăçа хăйне кирлĕ пек йĕркелесе ярасси. Чăваш пурăнăçĕ, енчен те чăваш пурăнăçпа вилĕм çинчен шутлама тытăнсан кăна, мала каяссăн туйăнать. Шел пулин те хальлĕхе эпир чĕрĕ чун е, хытăрах каласан, выльăх шайĕнче кăна пурăнатпăр. Пурăнăç вăл апат çини кăна мар, вăл вилĕмсĕрленни те. Пурăнăçа апатпа виçме пăрахмалла. Пирĕн пурăнăç апат тăрăх мар, вилĕм тăрăх килет. Мĕнле вилетĕн, çапла пурăннă пулать. Тĕплĕнрех каласан, хăвăн хыççăн мĕн хăваратăн эсĕ, çын. Тислĕк купи е кермен. Паллах, тислĕкĕ те кирлĕ. Кун пирки те каланă. Эпир мĕн историшĕн тислĕк купи çех. **Çук, пирĕн историшĕн çутă тĕллев пулса юлмалла. Пурте ырă кăмăллă та, çураçтаруллă йăваш чăаваш çуратса пурăнма тăрăшччĕр. Ку тĕллев нимрен те япăх мар. Чăнласа каласан, апла, пирĕн чăн чăваш, чăн çын пулма вĕренмелле. Ку вăл пурăнăçпа вилĕм хушшине кĕрсен кăна пулать.** Халь тин эпир кăштă та пулин пуçра евĕрлерĕмĕр пулсан вĕсене, паллă, эпир урăхларах пурăнма тата вилме тытăнăпăр. Асăрхăр, чăваш ку çĕр çинче пиншер çулсем пурăнать. Анчах хăйĕн хыççăн мĕн хăварни паллах та мар. Вăл,чăн та, мĕн, тислĕк купи кăна-им. Паллах, авалхи чăваш хăй халăхне пăрах-

ман, чăвашран чăваш çуралсах тăнă. Халĕ вара керменĕсем те пур, анчах чăвашран чăваш çуралма пăрахрĕ. Ку ăнлав ытти халăхсене те пырса тивет. Апла, авалхи чăваш темскер, пурăнăçа питĕ кирлĕ шухăша, пуçра тытса пурăннă. Тен, вăл ăна философи шайĕнче ăнланман та пулĕ, çапах та халĕ эпир унăн пурăнăçне курса тăрса çапла калама пултаратпăр. **Пулнă, хальхи тата пулас пĕртен пĕр тĕллев вăл, чăвашран чăваш çуратасси.** Вара историшĕн тислĕкĕ те, керменĕ те пулать. Çакă пулать пурăнăçăн чăн идейи. Ăна хальхи ăнлавпа каласан, халăх идейи теме пулать. Мăн асаттесем ăна пуçра тата пурăнăçра хытă тытса пынă пулас. Хăйсен йăли-йĕркине пăрахман, çĕннине кăларман.

Кирек мĕн каласан та, пурăнăç ăнтлăхне тупса схемăласан та пурăнăç пурăнăçах юлать. **Пурăнăçа улăштараймастăн. Вăл тĕпре, вăл субстанци. Вăл хăйне хăй тата ыттисене те ăнлантарать. Эпир вара ку пурăнăçа нимпе те ăнлантарса параймăпăр. Çапах та кунта пĕр мел пур. Пурăнас пулать. Хăвăн пурăнăçна ăнланса пурăнас пулать.** Енчен те эсĕ çын хыççăн кайрăн-тăк, тек телей кураймăн. Ху тунă, ху пурăннă çураçтаруллă пурăнăç кăна телей тутиллĕ. Эпир пурăнăçпа вилĕм хушшинче пурăнатпăр. Эпир телăйлĕ пурăнма çуралнă, телейлĕ йăлл! кулăпа «эпир чăн çын пулса тĕрĕс пурăнтăмăр», тесе вилсе кайăпăр. Ун чухне вара пирĕн çинчен тин, «кусем пурăнни пурте чăн», тесе калĕç.

## ЛИТЕРАТУРА


1. Бергсон А. Творческая эволюция. - М.: СПб, 1914. - С. 239.
2. Гегель. Соч. Т. XII. М., 1938. С.209.
3. Дильтей В. Описательная психология. М., 1924. - С. 74.
4. Маркс К., Энгельс Ф. Полное собрание сочинений. 2-е изд., Т. 4.
5. Материалисты Древней Греции. МAhfyr., 1965. С. 42, 46.
6. Маслоу А. Новые рубежи человеческой природы. М.: Смысл, 1999. 425 с.
7. Ницше Ф. По ту сторону добра и зла // Ф. Ницше. Сочинения: В 2 т. М., 1990. Т. 2. - С. 346.
8. Подорога В.А. Метафизика ландшафта. М., 1993. С. 255.
9. Родионов В.Г. Стих. Слово. Образ: Сб. статей разных лет. _ Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, _ С. 294-298.
10. Сартр Ж.П. Бытие и ничто: Опыт феноменологической онтологии. - М.: Республика, 2004. - 639 с.
11. Франк С.Л. Сочинения. _ М.: Правда, 1990. _ С. 367.
12. Фуко М. Слова и вещи. Археология гуманитарных наук. СПб., 1994.
13. Хайдеггер М. Бытие и время. - Санкт-Петербург: Наука, 2002. - 450 с.
14. Шпенглер О. Указ. соч. Т. 1. - С. 321.
15. Шопенгауэр А. Мир как воля и представление // Шопенгауэр А. Собр. Соч.: В 6 т. М., 1999. Т. 1. - С.165.
16. Яковлев П.Я. Уй варринче. Сӑвӑсем, поэма. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1987. – 79 с.

# ТУПМАЛЛИ

Умсăмах....................................................................................3
1. Пурăнăçпа вилĕм хушшинче..................................................7
1.1. Пурăнăç тупсăмĕ..........................................................7
1.2. Вилĕм пĕлтерĕшĕ........................................................13
1.3. Шăпа............................................................................18
2. Çураçтарупа хирĕçтăру мелĕсем.......................................24
2.1. Çын хутшăнăвĕ...........................................................24
2.2. Тĕнче хирĕçтăрăвĕ......................................................28
2.3. Пурăнăç ыйтăвĕсене татса паракан мелсем............32
3. Çавра тĕнче.............................................................................36
3.1. Паттерн........................................................................36
3.2. Пурăнăç юхăмĕ............................................................41
3.3. Тĕнче тытăмĕ...............................................................44
4. Тĕнчепе пĕр кĕвĕллĕ çын...................................................50
4.1. Тепри.............................................................................50
4.2. Хак, хаклав, хаклăх......................................................54
4.3. Çĕнĕ çын......................................................................59
5. Пурăнăç сĕмĕ........................................................................66
5.1. Пурăнăç туйăмĕ...........................................................66
5.2. Малашлăх туртăмĕ.....................................................70
5.3. Хăй талай çын.............................................................76
6. Пурăнăç çăлкуçĕсем............................................................81
6.1. Хĕрарăм.......................................................................81
6.2. Çемье...........................................................................85
6.3. Халăх............................................................................90
Юлашкинчен калани...............................................................96
Литература................................................................................101

Научное издание

ЖЕЛТОВ Михаил Павлович

# ФИЛОСОФИЯ ЖИЗНИ